РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТӐ
ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

Михаил ЖЕЛТОВ

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ФИЛОСОФИЙĔ

Спецкурс

Шупашкар

2010

ББК
УДК
Ж

Рецензентсем:

чăваш патшалăх ял-хуçалăх академийĕн философипе истори тата право кафедри; кафедра пуçлăхĕ философи наукисен докторĕ, Г.Э. Ахтямова профессор;

чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн наука сотрудникĕ, философии наукисен кандидачĕ О.Н. Терентьева.

Желтов М.П.

Чăваш халăх философийĕ: спецкурс. — Шупашкар: Чăваш патшалăх университетăн издательстви, 2009. — 94 с.

Спецкурсра чăваш халăх шухăшлавĕпе туйăм-сисĕмĕ мĕн авалтан мĕнле аталанса пынине пăхса тухнă. Халăх хăй пурнăçне çут çанталăк, чĕлхе, пурнăç хутлăхĕ, йăла-йĕрке, тĕн, истории, хуçалăх тата патшалăх урлă тăмхаласа пынине кăтартнă.

Чăваш чĕлхипе культура факультетĕнче вĕренекен студентсем валли.

Университетăн редакципе издательствăн совечĕ çирĕплетнĕ.

Яваплă редактор: филос. наук. д-рĕ, Э. З. Феизов профессор.

ББК
Желтов М. П.

Умсăмах

Чăваш халăх философине çырман тесе калама çук. Халăхăн чунпа япала шайĕнчи культурăна, йăла-йĕрке халăха епле тытса пынине, юмах-халап чăваш чунне туптанине нумай-нумай автор çырса кăтартнă. Чăн малтан кунта, паллах, чăваш писателĕсемпе поэчĕсене аса илмелле. Унтан профессиллĕ философсен ĕçĕсене асăнса хăвармалла. Сăмахран, А.И. Петрухин халăх каларĕшĕсен пĕлтерĕшĕсене уçса пачĕ, Г.М. Матвеев халăх аталанăвне миф шайĕнче тĕпчерĕ. В.А. Федотов йăла-йĕрке тытăмĕпе ылмашăвне пăхса тухрĕ, Р.В. Михайлова çĕр ĕçченĕн чунне ăнкарса илме тăрăшрĕ. Г.Д. Петрова вара халăх ăсне хăйне уçса кăтартса пачĕ. Кунсăр пуçне чăваш халăх философийĕпе çыхăннă вăтăра яхăн диссертаци хÿтĕленĕ. Пурне каласа тухма та çук. Вĕсене тĕпчесе пĕрлештерекен ĕçе кĕтсех тăратпăр. Ырă ĕç ахаль çухалмасть.

Ку ĕçре вара эпир чăваш философине тытăмĕ (система) енчен пăхса тухăпăр. Ку тытăма ăнтлăх (онтологи), тĕнчене ăслани (гносеологи), çын ĕçлевĕ (праксеология), халăх тата çын хаклăхĕсем (аксиология), çын пурнăçĕ (антропология) тата чăваш пурнăç мелĕ-меслечĕсем (методология) кĕреççĕ. Çак тытăма палăртни чăваш философине кăштах та пулин пĕтĕмлетессĕн туйăнать.

Чăваш халăх историйĕ пулма пултарать-и тесе ыйтсассăн, тÿрех ытти аталаннă халăхсен философийĕ пурри аса килет. Мĕншĕн-ха нимĕç, француз, америка, вырăс тата грексен философийĕ пур, китай тата индус халăхĕсем пирки калаçмастпăр та, пирĕн вара çук кăна мар, пулма та пултараймасть, имĕш. Çапла калаçнисем эпир философине ытла абстркциленипе çыхăннă. Паллă, тĕнче философийĕ категорисен шайĕнче тытăнса тăрать, кунта пурте пĕр шухăшлавлă пек. Çапах та категорисен шайĕ те тата йышĕ те пĕр вырăнта тăмасть, çавăнпа та ку чи çÿллĕ пĕтĕмлетÿллĕ шайра та философи аталанăвĕ хупăнса ларманха.

Çав вăхăтрах кашни халăхăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. Унăн хăйĕн чунĕ, шухăшлавĕ, туйăмĕ-сисĕмĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен философи халăх чунне палăртса çырса кăтартать. Кашни вăхăтра хăлăхăн урăхла шутлав, урăхла туйăм. Философи çав вăхăтсене тĕрĕс çутатса пама тăрăшать. Апла, философи хăй те пĕр вĕçĕмсĕр улшăнса пырать. Сăмахран, ăçта вăл халь Антика вăхăтĕнчи авалхи грексен философийĕ. Вăл историне кĕрсе юлнă, çавă анчах. Хăй вăхăтĕнчи грексен тĕнчекурăмне вăл тĕрĕс çутатса панă, халĕ вара çав тĕнчекурăм улшăннă та ĕнтĕ. Калас пулать, философи виçĕ шайран

тăрать. Пĕр пĕтĕмшле пайĕ (всеобщее) кашни халăхăн пĕр, уйрăмтăран (особенное) кашни халăхăн хăй тата хăй сăнлă çын (личность) философийĕ те пур. Кун пирки никам та иккĕленмест. Чăваш халăх шухăшлавĕ пирки ыйту тапратсан вара тĕрлĕрен шутлама пулать. Н.А. Исмуков чăвашăн пĕр пĕтĕмĕшле философийĕ пулма пултараймасть, вăл категорисен шайĕнче аталанать, тет. Вĕсем вара пуриншĕн те пĕр[1]. Уйрăмтăран философи вара кашни халăхăн пур. Çукрах пек курăнсан, апла, ăна туса çитермен пулнă. Кашни çыннăн хăйĕн философийĕ пур пирки калаçма иртерех-ха. Ку малашри ĕç.

Тепĕр енчен пăхсан, философи системи вăл хăй пĕр «утрав» пек курăнать. Кашни философиллĕ шухăшлавăн хăйĕн никĕсĕ пур. Калăпăр, грексен тĕнчи çут çанталăк пулăмĕсем, стихийăсем, çинче тытăнса тăрать. Гегелĕн тĕнчи Платонăнни пекех идея çинче никĕсленет, Фейербах е Протагор тĕпе çынна хăйне хурать тата ытти те. Хальхи вăхăтри шухăшлавпа тĕнче пуçламăшĕнче матери тата матери куçăмĕ пуç пулса тăраççĕ. Кун пек философиллĕ «утравсем» вĕçĕ-хĕррисĕр. Чăваш тĕнчекурăмĕ те хăй пĕр «утрав», унăн та хăйĕн никĕсĕ пур. Чăваш çынни, апла, тĕнчене хăйне майлă курать. Çавă пулать те ĕнтĕ чăваш халăх философийĕ тени. Чăваш хăйĕн философийĕ çине таянса пурнăçа хăйне майлă йĕркелет. Истории кăтартать, ку ĕç йĕркеллех пулса пырать. Халăх пурăнать, кирек мĕнле пăтăрмахсенчен те чиперех хăтăлса тухать. Апла, ун философийĕ хăйĕн пурнăçне йĕркелемелĕх тĕп-тĕрĕс пулса пырать. Вăл тĕнчене чăнласа тăрать. Анчах çав философин тытăмне эпир ку таранччен те пуçа çавăрса, пĕр пĕтĕмлетсе шухăшласа илмен. Паллă, вăл пĕр вăхăтрах ытти халăхсеннни пекрех пулмалла, философи категорисем пур халăхшăн та пĕр пулмалла, тепĕр енчен пăхсан, унăн хăйĕн тĕнчекурăмĕ, никĕсĕ, пуçламăшĕ тата аталанăвĕ пулмалла.

Тата тепĕр енчен пăхсан, кашни çыннăн хăйĕн философийĕ пулни пирки те иккĕленместпĕр, терĕмĕр. Пуриншĕн те пĕр пĕтĕмлетӳллĕ философи кашни çын пурнăçĕнче хăйне майлă палăрать, кашни хăйне кирлине çеç тăвать. Кашни сăнлă (личность) çын, сăнсăрри те, тĕнчене кирек мĕнле калăпласа тытса тăрас тесен те хăйне майлă хăтланать. Сăнлă çын тесе эпир хăй ирĕклĕ, хăй саккунĕпе пурăнакан, хăй сăнлă çынна калатпăр. Çын пурнăçне пĕр майлă «тураса» хураймастăн. Апла, кашнин харпăр хăйĕн философийĕ пур

[1] Исмуков Н.А. Диалектика общего и особенного в развитии национальных культур. (Филос.- метод. аспект проблемы) – Чебоксары, 1992. – С. 10.

тесе çирĕплетсех калама пулать. Пирĕн шухăшпа, чăн философи кашни çын ыйтăвне тивĕçтерме тăрăшать. Пĕр пĕтĕмĕшле кăна ăнлантарса пани çителĕксĕр. Çак шухăшсене тĕпе хурсан, апла, чăвашăн та хăйĕн философийĕ пур. Çав философи мĕнрен тытăнса тăрать тесе ыйтсан, халĕ тин, тӳрех, вăл пурнăçра пурăнма пулăшать тесе хуравлама пулать. Анчах та эпир ăна пĕлместпĕр, çавăнпа та вăл пирĕншĕн çук тени, тĕрĕсех мар. Пур-и, çук-и, эпир пĕрех пурнăça çак тĕнчепе шайлаштарса, майлаштарса, çураçтарса пурăнатпăр. В.Г. Родионов шухăшĕпе «чăвашшăн улăштару е кĕрешӳ идейи ютă. Пире ытларах упраса хăварас (упранас), çураçтарас (çураçăнас) тĕллев илĕртет[1]. Çавна, çынпа тĕнче хушшинчи çураçтарăва, шырамалла та пирĕн. Вăл çураçтару кашни халăхшăн, кашни çыншăн, кашни вăхăтшăн расна тата уйрăм. Ку тĕпчевре эпир пĕр пĕтĕмĕшлĕхе мар, уйрăмлăхпа расналăха тĕпе хурăпăр. Кĕнекере каланă шухăшсем тата идейăсем ытти философсен шухăшĕпе пĕр килмесен те пултараççĕ. Кунта хирĕçлемме те, майлă калама та пулать. Чи кирли вара, кашнин хăйĕн философине çырма пуçламалла. Пиншер çулсем туман ĕçе пĕччен туса пĕтерейменĕн. Вăл, паллă, йăлт тĕрĕс те пулма пултараймасть. Çавăнпа та «ытлашшине каçарма, çитменнине çитерме» ыйтатпăр.

Çакăн пек пĕрле шухăшланисем хăй вăхăтĕнче авторăн «Иртнĕ кун çути» кĕнекере[2] çапăнса тухнăччĕ. Унта тĕрлĕ вăхăтри картса хăварнă тĕслĕхсем пур. Малтанрах çав кĕнекене вуласа тухсан тата авантарах пулмалла пек туйăнать. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ку ĕçе ăнланас тесен, чăн малтан, паллах, ваттисен сăмахне лайăх пĕлмелле. Ку кĕнекре эпир 2007-мĕш çулта çапса кăларнă «Ваттисен сăмахĕ» кĕнекепе усă куртăмăр.

[1] Родионов В.Г. Стих. Слово. Образ: Сб. статей разных лет. — Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2007. —С. 294-298.
[2] Желтов М.П. (Сарри Мишши). Свет ушедшего дня (Философские заметки о чувашском). —Чебоксары: Фонд историко-культурологических исследований им. К.В. Иванова: 2005. —152 с.

## Предисловие

Данная работа просвящена поиску оснований чувашской жизни. С этой целью вся философия представлена как «острова», которые основаны на тех или иных ценностях жизни. Так, со времён Античности философы искали первоначала мира, и видели их в природных стихиях, идеях, атомах и т.д. В связи с этим возникает ворос о первоначалах чувашской жизни. На чём основана жизнь чувашского народа? Следуя мысли В.Г. Родионова, наша жизнь основана на синергии, т.е. согласовании всех объектов и субъектов мира. Это основание выработано в процессе исторических коллизий, и позволило выжить народу в тяжелейших условиях жизни. Если принять эту гипотезу как направляющую идею, то необходимо будет раскрыть и обосновать её структуру.

Кроме того, мы считаем, что каждый народ хранит в себе свою Античность в виде пословиц и поговорок. Такое устное народное творчество ждет своего исследователя, т.к. пословицы и поговорки есть наглядные философские факты, где сохранились первые обобщения жизни, моменты и фрагменты всеобщего. Если, опираясь на весь народный фольклор, систематизировать всю чувашскую жизнь, то можно будет говорить о научной философии чувашского народа. Данный взгляд также, кажется нам, будет продуктивным подходом.

Нужно заметить, что наш подход захватывает только особенное, присущее каждому народу. Всеобщее, основанное на категориальном дискурсе, мы оставляем в стороне. Как замечает Н.А. Исмуков, категориальное развитие возможно только как всемирная философия. Национальное же возможно только как особенное. Следуя этой мысли, мы вводим те моменты чувашской жизни, котрые отличают её от жизни других народов.

Философия чувашского народа как те или иные особенности жизни уже разработана многими авторами. Так, А.И. Петрухин впервые рассмотрел устное народное творчество как мировоззрение чувашского народа. В.А. Федотов проанализировал традиции чувашского народа и представил всю жизнь как сохранение и изменение выроботанных нашими предками традиций. Г.М. Матвеев изложил систему мифов в языческой интерпретации, и показал, что эти мифы живы и направляют нашу жизнь и сейчас. Р.В. Михайлова рассмотрела духовность всего крестьянства, как основы народа. В

общей сложности число таких работ растет, и есть необходимость в какой-то систематизации предложенных идей.

В нашей работе мы в основном опирались на работы О.Н. Терентьевой, которая рассмотрела в историческом аспекте возникновение и развитие ценностей чувашского народа. В работу также вошли мысли и идеи, изложенные автором в книге «Сущностные отношения «человек-земля».

Мы благодарим научного редактора Э.З. Феизова за неизменную поддержку и оказание помощи в выборе материалов для исследования чувашской философии.

## I глава. Халăх философийĕ пуçланса кайни

### 1.1. Мĕн вăл халăх философийĕ

Халăх философийĕ пирки шутлама пуçличчен пирĕн халăх вăл хăй мĕн пулнине чухласа илмелле. Халăх мĕнле пулса кайни çинчен тĕрлĕрен ăнлантарса параççĕ. Пĕрисем вăл çут çанталăк пулăмĕ (примордиализм), теприсем — вăл ятарлă инструментсемпе усă курса (конструктивизм) ăсталанă организм тесе ăнлантараççĕ. Пирĕн шутпа, иккĕшĕ те вырăнлă тата тĕрĕс. Пĕр тикĕс пурăннă вăхăтра эпир халăха çут çанталăк хăй туса хунă пĕр улшăнми хурăм (форма) пек куратпăр. Тĕнче улшăннă вăхăтра халăх тĕрлĕ сăлтавсене пула тĕрлĕ инструментсемпе усă курса хăйне хăй улăштарма тытăнать. Апла, тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕ вăйсем ĕçлеççĕ. Çав вăйсем йĕркелеççĕ те ĕнтĕ халăха. Çавăнпа та эпир халăх мĕнне çапла ăнлантарса пама пултаратпăр. Халăх вăл çут çанталăк вăйĕпе тата çын ĕçĕпе йĕркеленнĕ пурнăçа тытса пыракан хăй пĕр хурăм, организм. Çакă ансат кăна шухăша тĕпе хурсан, тӳрех халăх философийĕ пирки те тĕшмĕртме пулать. Çав организмăн хăйĕн шухăшлавĕпе чунĕ, ĕçĕпе тĕллевĕ, аталанăвĕ тата вăхăчĕ пур.

Чăн малтан халăх тĕллевĕ пирки шухăшлăпăр. Тĕллев ытти пур япалана та йĕркелет. Халăх, ку тӳрех курăнать, кашни уйрăм çын валли пурăнмалăх хутлăх туса парать. Çын халăхпа пĕрле пулсан кăна çын пулма пултарать. Халăхсăр çын çук. Апла, халăх çын пурнăçне йĕркелесе пырать. Мĕнле йĕрке-ши вăл. Пирĕн шутпа, çав йĕрке вăл халăх хаклăхĕсем, универсалисем, нормăсем, константăсем, правилăсем тата ыттисем те. Вĕсене турă хăй парать, имĕш. Турă мар, халăх çын пурнăçне хăех йĕркелесе пырать. Антроплă принципа тĕпе хурсан, пурнăç тĕп хаклăхĕсен (ПТХ) ятарлă пуххи е тăмхи йĕркелет те ĕнтĕ çын хутшăнăвĕсене[1]. Çав вăхăтрах çын хутшăнăвĕсем хăйне майлă хурăмлă халăха уналаççĕ. Ку икĕ енлĕ пĕр уйрăлми процесс. Хаклăхсен пуххи кашни халăхăн расна, хăй пĕр уйрăм пухă. Тĕслĕхрен, чăваш халăхĕн хаклăхсен пуххийĕ тăванлăхран, йĕркелĕхрен, ырăлăхран тытăнса тăрать[2]. ПТХ халăх аталанăвне кура

[1] Философия: Университетский курс / Под общ. ред. проф. С.А. Лебедева. – М.: ФАИР-ПРЕСС, 2003. – С. 399.

[2] Терентьева О.Н. Ценностные ориентации личности. Автореф. диссерт. на соиск. уч. ст. канд. филос. наук. Чебоксары, 2007.

анлăрах та, раснарах та пулма пултарать. Хамăр енчен хушса эпир ку ПТХ чӳклĕхрен тата çураçтарулăхран тытăнса тăрать тенĕ пулăттăмăр. Кăна пиллĕкмĕш главара çирĕплетсе парăпăр. ПТХ çын шухăшлавĕпе чунне те, ĕçĕпе тыткаларăшне те йĕркелесе пырать. Çав-çав халăх çынни мĕншĕн хăйне çапла тыткалать тесе ыйтсан, тӳрех ку вăл ПТХ мĕнле пулнинчен килет, тесе ăнлантарма пулать. Сăмахран, хальхи вăхăтри Анăç çыннин хаклăхĕсем тĕпрен илсен ирĕклĕхпе, пуянлăхпа, ыттисенчен уйрăмтарах тăнипе çыхăннă. Çавна пула Анăç çынни хăйне пачах урăхла тыткалать. Вăл пурне те шута илет, ыттисемпе тупăшать, чи мала тухма тăрăшать. Раççей халăх çынни вара, унăн урăхла ПТХ, чуна мала хурать, юнашар тăракан çынна пулăшма тăрăшать, пĕрле пулнине ырлать. Апла пирĕн халăхăн хаклăхĕсем, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пачах урăххисем. Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, вĕсем чунлăхпа, пĕрлĕлĕхпе, пулăшулăхпа çыхăннă. Çакă тĕслĕхсем халăхăн хăйĕн чунĕ пуррине кăтартса параççĕ. Çав чун, урăхла каласан, ПТХ тени, йĕркелесе пырать те çын пурнăçне.

Халăх мĕнне палăртнă хыççăн эпир халĕ чăваш халăх философийĕ пирки те шутласа илме пултаратпăр. Мĕн-ха вăл философи. Пирĕн шутпа, философи вăл çынпа тĕнче мĕнле хутшăннине палăртакан наука. Чăваш халăх философийĕ, апла, пирĕн халăх çак тĕнчепе мĕнле хутшăннине палăртакан вĕрентӳ. Кашни халăхăн, кăна кăтартрăмăр, хăйĕн хутшăнăвĕ. Кашни халăх çынни хăйне хăй урăхларах тыткалать. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ПТХ çине таянса, сăнлă çын философийĕ пирки çапла калама пулать. Сăнлă çын философийĕ, чăваш çыннин те, апла, вăл хаклăхсен пуххипе тĕрĕс усă курса тĕрĕс ĕç туни. ПТХ пĕтĕм пурнăça йĕркелесе пырать. ПТХ халăхăн антроплă принципĕ пулса тăрать. Вăл халăх пурнăçне, ун аталанăвне кăтартать. Çавсене сăнласа парать те халăх философийĕ.

Халăх философийĕ, чăн малтан, халăх ăслăлăхĕ çинче тытăнса тăрать. Пирĕн кулленхи пурнăça ваттисем каланисем, юмах-халапсем, сас-хурасем йĕркелеççĕ. Вĕсенче халăхăн кун-çулĕпе опычĕ, чунĕпе шухăшлавĕ упранса юлнă. Чăваш халăх философийĕ çинчен калаçас-тăвас пулсан, апла, халăх ăслăлăхне тĕпчесе тухмалла пулать. Тĕслĕхрен, пĕр каларăша кăна илер: «Пурри те пĕтет, çукки те çитет — пĕрле пурăннине мĕн çитет.». Çак шухăшлавра халăхăн пĕтĕмлетнĕ пурнăçĕ çырăнса юлнă. Çакă пĕр предложени кăна хăй пĕр философи пулса тăрать. Кун пек тĕслĕхсене эпир малашне ятарласа тĕпчĕпĕр, ку хăй пĕр уйрăм кĕнеке ыйтать. Халĕ вара çакна каласа хăварас пулать. Халăх тĕнчепе ĕç урлă çыхăнса тăрать. Çав çыхăнăва пурнăç мелĕ тесе хаклама пулать. Кашни халăхăн хăйĕн мелĕ, меслечĕ, технологийĕ пур.

Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пĕр халăх тĕнчене çĕмĕрет, тепĕри ăна упрать. Виççĕмĕшĕ вара шайлаштарса, çураçтарса пурăнать. Çакă мелсем тĕрлĕ майлă хутшăнса темĕн чухлĕ меслетлĕх кăларса тăратаççĕ. Тĕнчерен пач уйрăлма пулмасть теççĕ те, çапах та пĕр-тепĕр халăх тĕнчерен уйăрăлса кайса пĕтни те пур. Çак тĕнчерен çухалнă халăхсем тĕнчепе кирлĕ пек çыхăнайман пирки пĕтнĕ пулĕ. Вĕсем хăйсене кăна мар, тĕнчине те пĕтернĕ. Чăваш халăхĕн те çапла хăрушлăх сиксе тухрĕ тесен те юрать. Халăх йышĕ чакать. Чăваш хăй тĕнчине туса хураймасть. Çавна пула пĕтет те. Апла, çак тĕнчепе хутшăнма урăх майсем тупас пулать. Çав хутшăнура чăвашăн хăйĕн расна тĕнчине туса хумалла. Вара, каларăмăр, çав тĕнчепе тĕрĕс хутшăнса малалла тĕрĕс аталанмалла пулать. Унсăрăн, каларăмăр, халăх пĕтет. Халăхăн пĕр пĕтĕмĕшле тĕллевĕ, апла, ПТХ çине таянса, пурнăçа кирлĕ таран ятарлă хутшăнусене йĕркелесе ямалла. Çавăн пек килсе тухать. Хальлĕхе эпир урăх халăх, урăх çын хутшăнăвĕсене пулăшса вăйлатса пыратпăр, çавă кăна. Хамăрăн хутшăнусем, хамăрăн пурнăç мелĕсем аталанман. Халăх хухнин тĕп сăлтавĕ çакăнта. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн пĕр тăхтаса тăмасăр хамăрăн халăх философине йĕркелемелле. Вăл пире тĕнчепе мĕнле хутшăнмаллине, хамăрăн тĕнчене мĕнлерех туса хумаллине вĕрентсе пытăр. Кирек мĕнле халăхăн та хăйĕн философийĕ пур. Çавна пула аталанаççĕ те халăхсем. Камăн çук — пĕтсе пыраççĕ. Тен, çавна пĕле тăркача каламаççĕ-и хăшĕ-пĕрисем — халăхсен хăйсен философийĕ пулма пултараймасть, пĕр пĕтĕмĕшле тытăмлă (системăланă) философи çеç пур. Ăна алла илĕр те аталанăр. Анчах та, куратпăр, аталанас вырăнне пĕтетпĕр. Мĕншĕн тесен пĕр пĕтĕмĕшле философи пирĕн философи пулса тăраймасть. Вăл пирĕн уйрăмлăхсене шута илмест, пирĕн мĕнле пурăнмаллине кăтартмасть. Тен, тĕнче çынни текенскер, унпа усă курса çĕнтерсе те пырать пулĕ, анчах та эпир, хамăр халăх çыннисем, тĕнче филсофипе усă курса малалла каяймăпăр. Пирĕн хамăрăн хутлăх, хамăрăн чун-шухăшлав, хамăрăн чĕлхе. Пĕр пĕтĕмĕшле тĕнче философийĕнче вара вĕсене пĕрне те шута илмен. Тата, калас пулать, тĕнче философийĕнче халăх категорийĕ пачах çук. Халăх вăл хăй пĕр категори. Халăхĕсем пур, философийĕсем çук. Ку мĕне пĕлтернине çын чухлать пулĕ тетпĕр. Çавăнпа та кашни хăйĕн халăх философийĕне туса хума хутшăнасса шансах тăратпăр. Халăх философине ăна, паллă, пĕччен тума çук.

Чăн малтан, чăваш халăх философипе интересленекенсен, паллă, халăх ăслăлăхне алла илме тăрăшмалла. Мĕн пĕчĕкрен халăх каларăшĕсемпе усă курмалла, юмах-сăмахне пĕлмелле, юрламалла-ташламалла... Вĕсенче упранать терĕмĕр чăн философи. Вĕсем

вĕрентеççĕ пире ку пурнăçра пурăнма, тĕнчепе хутшăнма. Чăваш литературине вулани те халăх ăсне ăнланма, ун чунне хисеплеме вĕрентет. Хальхи вăхăтри литературăра кут-пуç юмахĕсĕр пуçне урăх нимех те çук тесе каламалла мар. Кашни чăваш япалинче пур халăх философийĕ. Ăна курма, хаклама, кăтартма пĕлес пулать. Сăмахран, халĕ мунча таврашне картишнех лартма пуçларĕç. Ĕлĕкрех вара вăл пахчара, шыв хĕрринче пулса. Çакă пĕр пĕчĕк пулăм кăна философи епле улшăнса пынине кăтартса парать. Ĕлĕкрех тĕпе илеме хунă. Пахчара таса сывлăш, илем пур. Картишĕнче вара мĕн пур, усси кăна. Пӳрчĕ-мĕнне, хапхине пăхса та халăх шухăшлавне, чунне куратăн. Пĕтĕмпех, кашни япалан хăйĕн сĕмĕ пур. Вăл ахальтен çуралмасть. Ăна халăх философийĕ витерсе тăрать.

Халăх философийĕ мĕн вăл тенине пĕтĕмлетсе çапла каланă пулăттăмăр. Халăха çут çанталăк пулăмĕсем тата ĕç йĕркелеççĕ. Кашни халăхăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Пурнăçăн тĕп хаклăхĕсем (ПТХ) тĕнчепе çын хутшăнăвĕсене йĕркелесе пыраççĕ. Халăх философийĕ çак хутшăнусене ăнланса илме пулăшать, хăй тĕнчине ПТХ çине таянса тăвать. ПТХ кашнин хăй расна, çавăнпа та халăх çулĕ те расна. Халĕ çав çул çинчен калаçса пăхăпăр.

## 1.2. Философи кăтартнă халăх çулĕ.

«Çулĕ пулсан, çулне утса тухма пулĕ», теççĕ халăхра. Мĕнле çулпа утатăн, çавăнта çитсе тухатăн. Юмахри паттăр çул юппинче шутласа тăнине те манса каяр мар. Пĕр еннелле кайсан хĕр тупатăн, тепĕр еннелле каясан пуян пулатăн, виççĕмĕшне суйласа илсен вара — вилетĕн, тенĕ çав юмахра. Пирĕн халăх мĕнле çул суйласа илнĕ-ши. Çулĕ пур-ши ун. Юмахĕ те пирĕн мар вĕт-ха ку! Апла, çулĕсем те пирĕн мар пулĕ. Вĕсем пире аташтарса илсе каймаççĕ-и. Çак ыйтусене хуравласа пăхар-ха ку параграфра.

Кашни çын хăйĕнчен: «Ăçтан эпир, камсем тата ăçталла каятпăр.» тесе пĕрре кăна мар ыйтнă. Ăçтан тухнă пирки калаçса кайсан, тӳрех авалхи шумерсен пурнăçĕ, Китай витĕмĕ тата тутарсен урти килсе çапнисем аса килеççĕ. Унсăр пуçне, ку та паллă пулчĕ, пăлхар-чăвашсем норманнсемпе те чылай вăхăт хушши хутшăнса пурăннă. Вĕсем иккен Атăл тăрăх хăйсен караванĕсемпе аннă пулнă, анчах пăлхар-чăвашсем вĕсене кăнтăралла irттермен. Месопотамире еврейсемпе хутăшса пурăнни çинчен калама та кирлĕ мар. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, халапра сыхланса юлнă пекех, эпир Кавказ тăвĕсем

çинчен аннă пулас, кайран вара пĕтĕм тĕнче тăрăх саланнă. Чăваш тени халĕ Çĕр чăмăрĕпех пур. Истори ăнлавĕсем вĕсем ахальтен çирĕпленмеççĕ. Кирек хăçан та вĕсем халăх аталанăвĕпе пĕр килеççĕ. Онтогенез филогенезпа пĕр килет, теççĕ. Çын, ӳссе çитнĕçемĕн, хăй историне аса илет, ăçтан-ха эпĕ тесе ыйтма тытăнать. Истори пĕлĕвĕ пухăннăçемĕн хуравĕсем те туллинрех пулаççĕ. Халь тин ĕнтĕ чăваш шумертан тухнă тенисене никам та хирĕçлемест. Хăй вăхăтĕнче эпир чылай çĕрсене çĕнсе илнĕ пулас. Чăваш патшалăхĕсем, тĕнче тăршшипех сарăлнă. Кирек ăçта та чăваш турă панă çĕр кăвапине шыранă. Халĕ те чăваш икĕ çырма пуçне пырса ларма юратать. Мĕн авалтан çапла. Месопотами тăрăхĕ, икĕ çырма хушши, тенине пĕлтерет. Măн Атăлпа Шур Атăл хушши те çапларах. Çавăнта çĕкленет те пăлхар-чăваш цивилизацийĕ. Асăрхăр, кашни чăваш ялĕ, масарĕ-çăви икĕ çырма пуçне ларса тухма тăрăшать. Апла, икĕ çырма пуçĕ вăл чăвашшăн турă панă çĕр. Çав çĕре шыраса пырса тухнă та эпир хальхи вăхăтра пурăнакан çĕрсем патне. Ăçтан тухнă тесен, халь тин, çирĕплетсех: эпир турă панă икĕ çырма пуçĕнчен тухнă, çав çĕре шыраса Атăлпа Кама тăрăхне пырса ларнă, тесе хуравлама пулать. Çапларах пирĕн халăх çулĕ.

Камсем эпир тесен, тӳрех калама пулать: эпир çав турă панă çĕре упракансем. Анчах та ку ăнлав халăх ăсĕнче хальлĕхе çирĕпленсе çитмен-ха. Чăваш халь пачах урăх çĕрсене хисеплет. Кашни ялтан çамрăксем ушкăнланса Мускава, Çĕпĕре, Хусана туха-туха каяççĕ. Унта вĕсем тăрăшнипе çĕнĕ çĕрсенче çĕнĕ çуртсем ӳсе-ӳсе лараççĕ. Хамăрăн çĕрсем вара юхăнса пыраççĕ. Çĕре упрас шухăш халăхра пĕтсех çитнĕ тесен те юрать. Пачах урăха шухăш хуçаланни те пур. Хăшĕ-пĕрисем ку çĕр укçа парсан та кирлĕ мар теççĕ. Куçкĕрет, халăх ăсĕ пăсăлнă, чунĕ хухнă. Апла, камсем-ха эпир тесе ыйтсан, тӳрех калама та çук. Эпир тĕнче çыннисем пулса кайрăмăр пулас. Тĕнчипех пулăшса паратпăр. Калăн, чăваш калама çук пысăк хăват тупнă та, пĕчĕк ĕç укçипех пĕтĕм тĕнчене такам ыйтнă пек туса хурасшăн. Тен, вăл донор халăх. Çав вăхăтрах пире ыйткалакан пек туса кăтартаççĕ. Эпир мĕн хамăр тĕллĕн пурăнма хăват тупаймастпăр та, ют çын патне укçа ыйтма тухса каятпăр. Пурăнмалăх çĕр çук мар вĕт-ха унăн! Мĕн чухлĕ çĕр ахалех усăсăр выртать. Кăна мĕнле ăнланмалла тет вара.

Эпир, куçкĕрет, хамăр камне пĕлместпĕр. Ăнлавра турă панă çĕре упрамалла тени çирĕпленсе çитмен. Çав вăхăтрах çав çĕре пуç çапма та пăрахман эпир. Çимĕкре пĕтĕм ял-йыш çăва çине ваттисене асăнма пуçтарăнать. Апла, çĕрпе çыхăну талман. Ара, унта пирĕн măн асаттесемпе асаннесем выртаççĕ те-ха!.. Чăваш хальлĕхе хăйĕн авалхи

тĕнне пăрахман-ха. Вăл ваттисене пуç çапса пурăнать. Апла, вăл, тен, халĕ те çăваçă. Ку тĕрĕс пек те туйăнать. Анчах хальлĕхе вăл кăна та ăнланса çитеймен. Ун пуçне урăх тĕнсем минретнĕ. Çут çанталăка пуç çапать тесен те ку пит курăнмасть. Хăйĕн çĕрне пăрахнă çын çут çанталăк çинчен тек шутламасть ĕнтĕ вăл. Вăл халь лавккари ют çĕршывран кӳрсе килнĕ ямăт апата хăнăхнă. Вăл халĕ çăкăр та, сăра та пĕçермест. Тыррине те питĕ сахал акать. Шухăшлаттарать ку. Эпир халĕ хамăр кам пулнине чăнласах пĕлместпĕр пулас. Чăваш та мар эпир, ютта та тухса пĕтеймен. Ун пек çынсене маргиналсем теççĕ. Вĕсен тăван çĕршывĕ те, тăван чĕлхи те, тăван-пĕтенĕ те çуккă. Çавсем патнерех çывхарса пыман-и эпир халĕ. Татса калама çук. Чăвашра тĕрлĕ сийсем çуралчĕç пулас. Çапах та, çапла шутласа илнĕ хыççăн, пĕрех, эпир Турă панă çĕре упракансем, тесе калас килет. Паллă, кун пек калани чăн чăвашсене кăна пырса тивет.

Ăçталла каятпăр вара тесе ыйтсан, халĕ пачах аптраса ӳкмелле пулĕ. «Аптранă кăвакал шыва каяллă чăмнă», тет. Малашлăхсем курăнман пирки халăх та каялла чакса кайрĕ. Халĕ Вăтам ĕмĕрсем каялла килчĕç тесен те тĕрĕс. Чăваш каллех кĕреçе çине ларчĕ, урăх турăсене ĕненме пуçларĕ, наукăна вĕренме пăрахрĕ... Ял ăслăлăхĕ халĕ питĕ пĕчĕк шайра. Вăл пач тĕллевсĕр тăрса юлчĕ. Тĕллевсĕр çын аташма тытăнать, эрех ăшне путать. Вăл тамăкра пурăнать тесен те тĕрĕс. Куç умĕнче ялтăрса тăракан çăтмаха халь тин вăл ĕнтĕ тек курмасть пулмалла. Çав çăтмаха йĕркелесех çитернĕ пек пулнăччĕ, тахăш вăхăтра ăна шуйттан аташтарчĕ пулĕ, халăх ĕçлеме пăрахрĕ. Хуçалăх тени çапла вĕт вăл, ăна кашни кун пăхса тăмалла, пăхмарăн-тăк, самантрах юхăнса каять. Çапла килсе тăхрĕ те. Çăтмахĕсем урăх çĕрте çуталса лараççĕ. Пирĕн ялсенче вара тамăк пуçланчĕ. Ку, паллă, халăх ăс-тăнне, чуне йăлтах аркатрĕ. Халь тин ĕнтĕ вăл хăй тĕллĕн шутлама та пултараймасть пек туйăнать. Мĕншĕн тесен вăл хăйне хăй куçран пăхсан та курмасть.

Чăваш халăх историне тĕпчесен çапларах ӳкерчĕк сиксе тухать. Халăх кăшт тĕрекленсе кăна çитет, теме пула ăна тӳрех çапса хуçаççĕ. Мĕн авалтан çапла. Кунта, паллах, Л. Гумилев каланисене те манмалла мар. Унăн теорийĕпе килĕшӳллĕн, халăхăн хăйĕн аталану тапхăрĕсем пур. Халăх çуралса çĕкленсе çитсен, ăна пĕтерекен вăйсем те тупăнаççĕ. Вара халăх пĕтме тытăнать. Халăх истории çулĕ уçăрах пултăр тесен, Л. Гумилевăн этногенез теорине те тĕплĕнрех пăхса тухмалла пулать пулĕ.

Халăх хăйĕн çулне ăнланать терĕмĕр. Халĕ çак ăнлава пăхса тухăпăр. Унпа килĕшӳллĕн халăх пĕр пин çул ытла ним те мар

пурăнма пултарать, имĕш. Пирĕн халăх миçе çул пурăнать-ши. Çакна татса парас тесен, халăхăн çул пуçламăшне пĕлмелле. Халăх пĕтнине кура, тен, çав çулсене паянхи кунран пуçласа каялла шутласа каймалла. Ун пек шутласа кайсан эпир тӳрех пăлхар-чăваш патшалăхне никĕсленĕ вăхăта çитсе тухатпăр. Пирĕн мăн асаттесем Кавказ тата Хура тинĕс тăрăхĕнчен Атăл çине пĕр 600-700-мĕш çулсенче куçса килнĕ теççĕ. Апла, чăваш халăхĕ хăйне турă панă çĕр çинче пин çул ытла пурăнать те ĕнтĕ. Тен, унăн, чăн та. пĕтмелли вăхăт çитнĕ. Çут çанталăк панине, халăх хăй пĕр организм пулсан, вăл пурăнса иртгернĕ те ĕнтĕ. Çавна курса тăратпăр мар-и.

Ку шухăша çирĕплетес тесен, истори пуçламăшне аса илмелле пулать. Тен, çав пуçламăшсем чылай пулнă. Урăхла каласан, чăваш ку тĕнчере пĕрре кăна мар пĕтнĕ. Çапах та темле сăлтавсене пула кашнинчех вилĕмрен çăлăнса тухнă. Апла, тен шумертенех шутлама пуçламалла. Вара, тен, халăх çулĕн ӳкерчĕкĕ уççăнрах курăнса кайĕ. Паллă, тĕрлĕ тапхăрта халăх тĕрлĕ ятпа çӳренĕ. Çавна пăхса тухăпăр.

Чăн малтан, халăх тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ ятпа çӳренине палăртса хăварас пулать. Хальхи «чăваш» ят вырăнне маларах «сăвар» е «çăваç» тенĕ пулмалла. Ку историре çирĕпленнĕ пулăм. Çав вăхăтрах хăйне хăй хунă ят та пулма кирлĕ. Вăл, пирĕн шутпа, «çăваç» е «шуваш» ята çывăх пулнă. Çапла шутламалăх истори факчĕсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Иртыш тăрăхĕнче упранса юлнă «Чувашский мыс» этноним та, «Шупаш-кар» хула ячĕ те, ĕлĕкрех вырăс летописçĕсенче çырса хăварнă «суасла мари» тенисем те «çăваç» сăмаха çывăх. В.Г. Родионов каланă тăрăх[1], ку ят халăх ваттисене пуç çапнипе çыхăннă. Ку йăла халĕ те çирĕп тытăнса тăрать. Кашни çул çимĕкре чăвашсем çăва çине пуçтарăнаççĕ, ватăсене асăнса сăра ĕçеççĕ, апат-çимĕç хываççĕ. Енчен те çак пулăма халĕ аваллăха куçарса пырсан эпир тӳрех вăл йăла ĕлĕк чи çирĕп, чи аталаннă йăласенчен пĕри пулнине куратпăр. Тибет тăрăхĕнче те, Египетра та вилнисене питĕ чысласа пытарнă, асăнсах тăнă. Чăваш халăхĕ çак йăлана упраса хăварнă кăна мар, çирĕп тытса пырать. Тен, çавăнпа та ун чухне хăйне хăй «эпир çăваç» теме пултарнă. Ютăсем вара «ç» сасăна калайман пирки «с» тенĕ, çавăнтан «сăвар» тенисем тухса кайнă. «С» сасăна калайманнисем «ш» тенĕ. Çавна пула эпир Месопотамире пурăннă чухне пире «субар» вырăнне «шумер» тенĕ. Ку тĕслĕх «Саркил» е

[1] Родионов В.Г. Стих. Слово. Образ: Сб. статей разных лет. — Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2007. —С. 152-153.

«Шуркил» хула ятне пăтраштарнине историксем лайăх кăтартса параççĕ.

Çак тĕслĕхсем чăваш халăхĕ пиншер çулсем хăй хунă пĕр ятпа, «çăваç» ятпа, çӳренине çирĕплетсе параççĕ. Ют халăхсем вара пире «субар» е «сувар» тенĕ. Çакă ят пĕр тăватă-пилĕк пин çул каярах палăрнă пулас. Çавăнтанпа йăтса çӳретпĕр эпир ку ята çĕр тăрăх. Хамăр ята, апла, пире тем чухлĕ пĕтернĕ пулсан та пăрахман. Чăн малтан пире Месопотами тăрăхĕнчен семитсем хăваласа кăларса янă, Согдиана тăрăхĕнчен перссем, Тибетран Китай çарĕсем тата ытти те. Çурçĕр Кавказ тăвĕсем патĕнчен арабсем çĕмĕрнине пула Атăл тăрăхне куçса килнĕ. Тĕнчипех саланнă халăх турă панă хăй вырăнне тупнă. Урăх ниепле вырăн та паман ăна çак çĕр çинче. Урăх вырăн пулма та пултараймасть. Çакăнтах, çак çĕр кăвапинчех тĕпленсе пурăнмалла пулать. Кăна хăшĕ-пĕрисем ăнланмаççĕ те пулĕ, таçта Америкăна, Канадăна, Германие пурăнма каяççĕ. Анчах çав тăван çĕршывшăн вара питĕ тунсăхлаççĕ. Мĕншĕнни паллă. Çакă икĕ çырма пуçĕнче выртаççĕ те пирĕн мăн асаттесем. Вĕсен хăвачĕ пĕтмен-ха. Çавсем йыхăраççĕ хăйсем патне. Çĕр хăй чĕнет. Атăлçи Пăлхара кайса килсен, чăн та, чуна темле хăват кĕрет, хăвна пачах урăх çын пек туятăн. Авалхи пăлхар-сăвар юнĕ хускалать пулинех. Çапла шухăш-туйăма тĕпе хурса халăхăн авалхи пурнăçне аса илтĕмĕр те ĕнтĕ. Чăваш халăхĕ темĕн чухлĕ те пĕтме тăнă, çапах та авалхи авăрсенчен хăтăлса тухнă. Мĕн сăлтава пула, тесе ыйтсан, тӳрех пĕр пулăм куçа тăрăнать. Вăл ниçта та, нихăш вăхăтра та хăй ятне пăрахман. Ютсем кирек мĕнле чĕннĕ пултăр, вăл «çăваç» ятпах çӳренĕ. Ку пĕрре. Тепре вăл ваттисене пуç çапма пăрахман. Унăн хăйĕн тĕнĕ пулнă, пур та. Çав тĕн ăна унталла-кунталла пăркаланма паман. Виççĕмĕшĕ çĕрпе çыхăннă. Унăн яланах хăйĕн тăван çĕршывĕ пулнă. Вăл мăн асаттесем кĕрсе выртнă çĕр. ÇАве турă панă çĕр тытса тăрать пире. Çав çĕр çинчех, паллă, хамăрăн кăна чĕлхе аталаннă. Вăл пирĕн çĕр чĕлхиех.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, тĕлĕнмелле те, хăлăхăн тĕрлĕ вăхăтсенче тĕрлĕ тĕне те йышăнма тивнĕ пулас. Ахальтен мар вĕт-ха чăвашра ваттисене пуç çапни те, анра-сухра е ахăр саманасене ас туса тăни те, анне-Кебе, шакăр-макăр тенисем те пур. Ку вăл чăваш ĕмĕрсем тăршшĕнче тĕрлĕ турра сума суса тăнине пĕлтерет. Кунта Тора та, Тангри те, Заратустра та, Аллах та, Иисус та. Апла, чăваша пиншер çулсем иртнĕ чухне тĕнсем пулăшса улăштарса пынă. Пĕтме кăна тытăнать чăваш, вăл тĕнне улăштарать те, упранса юлать. Тепĕр пин çултан каллех пĕтме тытăнать — каллех урăх тĕн йышăнать, каллех упранса юлать. Çак процесс пĕр тăватă хутчен пулнă пулас.

Акă халĕ каллех ун тĕнне улăштарма тивет. Халăх, истори кăтартать, хăй тĕнне улăштарса çăлăнать. Халĕ мĕнле тĕн килет тесен, вăл, пирĕн шутпа, çут çанталăк патне таврăнни пулать. Çут çанталăк никама та улталамасть, пурне те çăлать. Хăйне пăхман çынсене каçармасть те...

Çак пулăмсене хальхи вăхăтри пурнăçпа танлаштарса шутласа кайсан тӳрех тем çитменни курăнать. Мĕн çитмест-ха пире. Пире халăха тытса тăракан пулăмсем çитмеççĕ. Темшĕн вара эпир халĕ хамăр ятран вăтанма пуçларăмăр. Пĕрисем тутара, теприсем вырăса, виççĕмĕшсем француза тухма пуçларĕç. Иккĕмĕшĕнчен хамăр тĕне пăрахса ыттисен туррине пуç çапма пуçларăмăр. Халь тин ĕнтĕ пирĕн авалхи мăн асаттесен ырă тĕслĕхĕсем пурнăç тытса пыма пулăшмаççĕ. Вĕсем пире çуратса ӳстернĕ пулсан та эпир вĕсенчен вăтанатпăр. Вĕсем, имĕш, питĕ мĕскĕн пулнă. Пиншер çулсем хăйсен ятне ямасăр ку тĕле йăтса çитернĕскерсем мĕскĕн иккен. Тăван çĕр те кирлĕ мар теççĕ халь тин. Çав çĕр çинче çуралнă чĕлхи те... Вăл-мĕн Канаш хулинчен иртсенех кирлĕ мар.

Кăна ăнланса илме йывăр. Çак пулăмсене пăрахнă пиркиех вĕт-ха чăваш асапланать, пурнăçĕ çавна пулах малалла каяймасть. Пĕрех вăл хăй ятне пăрахать, урăх турра пуç çапать, çĕрне те чĕлхине те кирлĕ мар тет. Мĕне пĕлтерет ку. Такам пăснă тейĕн чăваш ăс-тăнне... Вăл пурнăçра чи кирлине пăрахрĕ. Вилме хатĕрленет тем... Темле вилĕм программи ĕçлет, темле вирус ернĕ тейĕр... Хальлĕхе чăн сăлтавне пĕлместпĕр-ха. Шырамалла пулать. Тен, кунта эпир пĕлмен ытти пулăмсем те витĕм кӳреççĕ. Тен, çапла туса çăлăнăç шырать вăл. Халăх хаклăхĕсем улшăннă, тен. Çавна пĕлес тесен, халăх тĕнчекурăмне пăхса тухас пулать.

### 1.3. Чăваш халăхĕн тĕнчекурăмĕ

Халăх тĕнчекурăмĕ пирки шутлама пуçличчен, чăн малтан, чăвашлăх мĕнне тĕшмĕртес пулать. Мĕн вăл чăвашлăх. Чăвашлăх тени, паллă, халăхăн хаклăхĕсемпе çыхăннă. Çав хаклăхсем пирки эпир кăшт каланăччĕ. Халь тин анлăрах та тарăнрах пăхса тухмалла пуль. Чи малта, кунта иккĕленӳ çук, паллах, чи хăватлă пулăм — тăванлăх тăрать. Тăванлă çын кăна чăваш пулма пултарать. Кам хăй тăванне манать, пăрахать, сутать — çавă чăваш ятне йăтса çӳреймест. Ун пек тĕнче гражданĕсем халĕ питĕ нумайланса кайрĕç. Кашни чăваш ачи тенĕ пек ялти ашшĕпе амăшне пăрахса тĕнчене тухса каять. Каларăмăр, унта вăл тем те пĕр туса парать. Анчах ялта вара халĕ те

ним те çук. Хамăр тăванлăха манни мар-и пире пĕтерет. Çавăнта пуль халăх пĕтнин чăн сăлтавĕ. Тахçан пĕр çемье пулнă çын тăванĕсенчен ютшăнса йăлт пурне те çухатать.

Чăвашлăх тени тĕрĕслĕхпе пĕр килет пек. Чăваш йĕркелĕхе юрататъ. Вăл асса, çĕмĕрсе çӳрекен çын мар. Çавна пула ăна тĕнчере пур халăх та йышăнать. Тĕрĕссипе, Раççей патшалăхĕнче пур явапллă çĕрте те çавăн пек çынсен пуç пулса тăмалла та. Çук çав, халĕ пуç пулса тăракансем пурте тенĕ пекех вăрă пекреххисем. Халĕ çавсен тапхăрĕ. Чăваш вара нихçан та вăрламасть. Кам вăрра каять, вăл вара чăваш мар ĕнтĕ. Вăл урăх халăх çынни. Ĕлĕкрех те, халĕ те, ялсенче пӳрте питĕрмесĕрех хăвараткĕç. Ку пĕри тепĕрне питĕ шаннине пĕлтерет. Апла, чăвашлăх тени çынна ĕненнипе тата шаннипе çыхăннă. Чăваш чыслă çын. Хăй чысне мĕн ачаран упрать. Вăрра-мĕн кайсан ашшĕ хăй ачине хытă хĕнет. Анчах та халĕ, куратăр, вăрланăшăн мухтанаççĕ, унсăрăн пурăнма май çук пек туса кăтартаççĕ. Кам вăрлать — çав маттур имĕш, пуян та. Паллах, кун пек чухне чăвашлăх çинчен калаçма май килмест. Вăрă чăвашлăха тӳрех сутать.

Авалхи чăваш: «Çĕнĕ йĕрке кăлармастăп, киввине манмастăп», тенĕ. Çавна пула ĕнтĕ унăн мĕн авалтан йĕркеленнĕ чăвашлăхĕ ĕмĕрсем тăршшĕ тытăнса тăнă. Чăвашран чăвашах çуралнă. Халăх хăйĕн йĕркине манакан çынна питленĕ. Халĕ вара пачах урăхла. Халĕ кив йăлапа пурăнаканран кулаççĕ, çĕнĕ йăла туртса кăларакана мухтаççĕ. Паллă ĕнтĕ, кун пек чухне чăвашлăх пирки калаçма май çук. Каласан та сана, тӳрех, пурнăçран кая юлнă теççĕ. Халь мĕн пирĕн Анăç хыççăн каймалла, унăн йăли-йĕркине алла илмелле. Тĕлĕнмелле те, çапла тăваççĕ те. Ун пеккисем тӳрех анăç çынни пулса тăраççĕ. Чăвашĕ çавна пула тата хухать.

Чăваш вĕт вăл тата хăйне хăй питĕ çирĕп тытать. Вăл «мала та каймасть, хыçала та юлмасть». Ĕçре те тӳрех ярса илмест, шухăшпа та пит васкамасть. Васкавсăр çын вăл. «Васкакан вакка сикнĕ», тет. Пурнăçшăн ку хаклă пулăм. Çавна пула, хăйне майлă инерцие пула ĕнтĕ, чăваш хальлĕхе тĕнчере тытăнса тăрать. Ыттисем туса пăхччăрха, тет. Куç курать унта... Чăвашăн хаклăхĕсем нумай. Анчах пĕр калама çук пысăк, турă шайĕнчи пулăма та манса хăварма юрамасть. Чăваш чӳклĕ çын. Кирлĕ пулсан вăл хăйне те шеллесе тăмасть. Вăрçă вăхăтĕнче вăл хăйне лайăх кăтартать. Ахаль пурнăçра та вăл кӳршĕ-мĕнĕ валли ним те хĕрхенсе тăмасть. Мĕн ыйтатăн унран, сана хăйне кирлĕ пулсан та парать, ыйтнă пĕр япалине. Çавна пулах пуль, тĕрĕслĕх пирки каларăмăр, вăл парăмне те хушса тавăрса парать.

Чăваш тирпейлĕхе юрататъ. Кăшт, тен, хытăрах та. Апатпа, вăйпа, ăспа, юратупа иртĕнмест. Перекетлĕ пурăнать вăл. Çут çанталăкран иртетĕп-ха, кунта йăлт пĕтеретĕп тесе кăшкăрашса çÿремест. Халь ун пеккисем çук мар. Анчах та, каларăмăр, ун пек çын чăваш пулма пултараймасть.

Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, чăваш тăванĕсене сума сăвакан, çыншăн хăйне хĕрхенмен, халăхшăн явaплă та кулленхи пурнăçра тирпейлĕ те перекетлĕ пурăнакан çын. Ку пахалăхсем чăн чăваш пурнăçне пырса тивеççĕ пулĕ. Çурма чăвашсен хаклăхĕсем çурмалла. Акă пĕрне кăна илер. Халĕ питĕ аптраманлăх пирки калаçаççĕ. Чăваш мĕн аптраман таврашĕнчен. Ниçта та нихăçан та пурнăçра çĕтсе каймасть, имĕш. Лайăх-и вăл, япăх-и калама та хĕн. Хăш-пĕр чухне лайăх пуль. Тепĕр чухне вара çук. Кирек мĕнле каласан та кунта пĕр япала паллă. Ун пек çын пурнăç ситуацине пăхса пăхăнса пурăнать. Апла, тепĕр чухне хăйне валли ырлăх шыраса чысне те çухатма пултарать. Çавăнпа та, ман шутпа, чăвашăн тепĕр пахалăхне, тарăнрах палăракан тепĕр пулăма аса илес пулать. Чăваш хăй пĕр патша. Вăл никама та пăхăнмасть. Унăн хăйĕн саккунĕ пур. Çав саккун вăл — чăвашлăх. Никама пăхăнман чăвашсем халь пирĕн сахалланса юлчĕç пулас. Аптрамансем йышланчĕç. Халь кирек кам та пурне те сутма хатĕр. Эпир те ыттисем пекех аптраса тăмастпăр теççĕ. Пурнăç майĕсене тупни лайăх та пуль вăл, анчах çав вăхăтра хăвна çухатас марччĕ. Хăвна çухатса çын пек курăнни вăл пысăк çухату. Ун пек ан пултăрччĕ.

Çак хаклăхсене шута илсе калаçмалла пуль чăваш халăх тĕнчекурăмĕ çинчен. Çак хаклăхсен пуххийĕ хăйне майлă пĕр тăмха пек çапăнса юлнă пирĕн ăс-тăнпа чун-чĕрере. Чăваш тĕнчекурăмĕ çак пахалăхсем çине таянса йĕркеленет. Енчен те эпир, калăпăр, вăрра кайрăмăр-тăк, тÿрех чăвашлăхран, чăваш тĕнчинчен, чăваш ятлă çынсен йышĕнчен тухса ÿкетпĕр. Пĕр пахалăхĕ кăна çухалтăр — тÿрех эпир çын пулма пăрахатпăр. Хаклăхсен пуххи вăл хăй пĕр иероглиф пек ку чăваш тенине пĕлтерет. Эпир ăна чăваш тăмхи тейĕпĕр. Çав тăмхапа кама палăртнă, çав çын тÿрех курăнать, вăл — чăваш. Эпир ăна, кирек мĕнле тумланнă пултăр, кирек мĕн ĕç тутăр вăл, самантрах тăвана курнă пек уйăрса илетпĕр. Ку — чăваш, ку — шанчăклă çын, тетпĕр. Ыттисем ĕнтĕ вăрă тата укçа çулĕ çине тăрса хăйсене çухатрĕç. Вĕсем ĕнтĕ шанчăксăр. Вĕсем яка чăвашсем.

Паллă ĕнтĕ, çапла майпа палăртнă тăмха вăл вылянса улшăнса тăма та пултарать. Анчах та кирек мĕнле улшăнсан та унăн пĕр çирĕп тытăмĕ пур. Тĕп паллăрăмĕсем, ПТХ терĕмĕр, çавсемех пулмалла.

Хаклăхсен тăмхи вара кашни çыннăн расна. Калăпăр, эпĕ пит тирпейлех мар, анчах та перекетлĕ. Е тата çынран, тен, ютшăнатăп та, анчах тăвансемшĕн пурнăçа та пама хатĕр. Çапла вылявлăх, ман шутпа, вăл çитменлĕх мар. Пурнăç хăй вылять. Пĕр вырăнта тăма юрамасть, тет. Кирек мĕнле улшăнура та тăмхи çавах тăрса юлать. Унпа сана ăспа чĕререн пĕрре çапнă-тăк, чăваш йĕрри ĕмĕрлĕхе юлать.

Чăваш халăхĕн тĕнчекурăмĕ мĕнлерех тесе ыйтсан вара халĕ пĕтĕмлетсе çапла калама пулать пуль. Чăваш çыншăн, халăхшăн, патшалăхшăн пурăнать. Ку, ман шутпа, тĕлĕнсе каймалла пĕтĕмлетӳ. Халĕ вĕт пур çын та хăйшĕн кăна пурăнасшăн çунса тăрать. Кусем вара, ăншăрт çапнă пуль, пурнăçран йăлтах юлнă. Юлашки чăн çынсем, тен, ку чăвашсем. Халь кам тетĕр вăрламасть. Пурте халĕ ĕçлемесĕрех тутлă çиесшĕн. Чăваш кăна: «Ĕçле-ĕçле çи», тет. Халăх кахала сивлет. Пире вара халь вăрлама, пуйма, суйма, наянланма вĕрентеççĕ. Çын-мĕн ирĕклĕ. Кирек мĕн тăвас тет, çавна тăвать. Ун пекки хăçан пулнă вара вăл. Нихçан та ун пекки пулман. Халăха аташтарса ярас тесе калаçнисем кăна кусем. Анчах та чылайĕшĕ çак çул-йĕр çине ӳкме пуçларĕç. Пире халь тин нимле таса пурнăçлă чăвашлăх та кирлĕ мар. Хăть тутара, хăть вырăса тухам — пĕрех, манăн çимелĕх çăкăр кăна пултăр, вара çитрĕ те... Çапла шутлакансем нумайланчĕç. Пурнăçĕ те çапла тума хăй вĕрентет пулас. «Суя çур пурнăç», теççĕ. Суя пурнăç ăçтан пурнăç пултăр ĕнтĕ вăл. Акă халĕ пурте суйма пуçларăмăр та хамăрăн таса чăваш пурнăçне çухатрăмăр. Таса та ырă, ĕçлĕ те çителĕклĕ пурнăçпа пурăнас мар терĕç пулас. Пурте халь тин тискерленсе кайрĕç. Имĕш, пурин те пĕр-пĕринпе тупăшмалла, кĕрешмелле, çĕнтермелле. Тутлă пурнăç çавă çĕнтерӳçĕн кăна пулать, имĕш. Ыттисен вара кăнса выртмалла тет. Кам, ăçтан шутласа кăларчĕç кун пек хаклăхсене, кам пăсать пирĕн халăха, калама та хĕн. Хăех пăсăлать пуль. Мĕншĕн тесен ку ансат çул вĕт. Аналлла шуйттан туртать, тет. Тăвалла вара турă туртать пулать. Çынна пулăшма, тăвансемпе пĕрле пурăнма йывăртарах пуль çав. Ахальтен мар, аякри тăван чи лайăххи тенĕ пулать вырăссем. Урăх çынсен, анăçри çынсен хаклăхĕсем пирĕн пуçа минретсех ячĕç. Пĕччен пурăн, хăвна ху хуçа, «пĕр кут пĕр пуç», ыттисем айккинче тăччĕр, тенисен тĕнчекурăмĕ çĕнтерсе пыма пуçларĕ. Ку, паллă, чăваш халăхĕн тĕнчекурăмĕ мар. Кăна вăйпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Урăхла шутлатăн пулсан çăкăрсăр тăрса юлатăн тесе пире хăратаççĕ. Прогресс çулĕ çавăнта кăна иккен. Пулăшу, çураçтару, хутшăну çулĕсем мĕн йăнăш çулсем, вĕсене пăрахăçламалла теççĕ. Вĕсемпе усă куракансем фиаско тӳсрĕç, коммунизм туса хураймарĕç. Çавăнпа та капитализм

йĕркине тĕпе хуракан пропаганда вăй илсе кайрĕ те, чăваш та тепĕр майкки çаврăнса ӳкрĕ. Халĕ пĕр пытармасăр каламалла, тен, чăваш халăхĕн пысăкрах пайĕ чăвашлăхран тарса Анăç тĕнчине кĕрсе кайрĕ. Вăл, тен, халĕ анăç çыннисен пурнăçĕпе пурăнать.

Пĕр пĕтĕмĕшле илсен чăваш халь çул юппинче тăрать. Хальлĕхе хăйĕн тĕнчекурăмне упраса хăвармалăх вăй пур-ха унăн. Анчах та тĕнче хыççăн каяс текенсен йышĕ ӳссех пырать. Апла, пĕр тепĕр алă çултан чăваш хăйне йăлт çухатма та пултарать. Пĕр ăру пурнăçĕ тăршшинче тем те улшăнать. Çапах та пиншер çулсем иртнĕ пулсан та чăваш халăхĕ хăй йышĕпе, чĕлхипе халĕ те пур. Аваллăх шанчăк кӳрет, малашлăх вара хăратать. Тĕрĕссипе, йăлт урăхла пулмалла. Пуласси шанчăк кӳмелле, хальхи пурнăça йĕркелесе тăмалла. Ун пек пулманни вăл, ман шутпа, пиртен хамăртан килет. Мухтавлă аваллăх вăй парса тăни малашлăха та куçмалла. Куçать те... Анчах та такамсем темле питĕ хăрушă формула шутласа кăларнă. Вĕсем «чăваш пĕтет» тесе анрашаççĕ. Халăх тĕнчекурăмне йăлт улăштарса вилĕм патне илсе çитересшĕн. Халăх ку шухăша хирĕçлесе «чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет» тесе хуравлать. Çапла каласа вăл çăлăнăç çулне шырать. Чăваш тĕнчекурăмлă çынсем тытса пыраççĕ те тĕнчене, кăна кашни йĕркеллĕ çын ăнланать. Çав çынсен вăйĕ пĕтмен-ха, çавă пулăшас пек туйăнать. Вилĕм юррине юрлакансен тĕллевĕ уçăмлă. Вĕсем пире пĕтерсе пирĕн пурлăха, территорине ярса илесшĕн. Çавă кăна. Çав çынсемех вилĕм модельне тĕрлĕ майсемпе çавăрттараççĕ, халăха пĕр шанчăк та хăвармастпăр, теççĕ. Çавна пула халĕ кашни çул тенĕ пек пĕр çĕр пине яхăн чăваш тĕнчерен çухалать. Ку, паллă, вилĕмçĕсене питĕ савăнтарать. Анчах, пурнас текенсем кăна курса куççуль юхтараççĕ, кĕрешĕве çĕкленеççĕ. Глобализм хумĕсем тем пек хупласан та, шанăç пур, халăх хăй пурнăçĕшĕн çине тăрса çĕнтеретех пулĕ тетпĕр. Пурнăç çĕнтеретех.

Кунта пĕр хăрушлăх çинчен каласа хăвармалла. Чăваша ăна лайăх пурнăç пĕтерет. Хытăрах пурнăç ăна самантрах хытарать. Вăл каллех вăй пухса хăйне тупать. Чăваш лайăх пурнăçшăн çунакан пуян çын хыççăн каймасть. Чăвашшăн лайăх пурнăç пуянлăхра мар. Вăл таса чунлă, хăюллă, ырă, вăйлă, ĕçлĕ çынра тупать хăй пуянлăхне. Пирĕн шутпа, чăвашăн чăн продукчĕ, ĕç кăтартăвĕ ĕнтĕ, вăл кашни çемье чăн чăваш çуратса ӳстернинче. Чăн чăваш пек çын кăна çак тĕнчене тытса тăма пултарать. Тытса тăрать те вăл. Ку, чăваша кашни халăх йышăннинче палăрать. Ăна никам та хирĕçлемест. Мĕншĕн тесен вăл никампа та вăрçмасть, кĕрешмест, тупăшмасть. Вăл кашнине пулăшма тăрăшать. Унăн тĕп хаклăхĕ — çураçтарулăх. Унăшăн ку

тĕнче пĕр кĕвĕллĕ, çураçтаруллă пĕрлĕх. Хальлĕхе ку хаклăх ытти халăх тĕнчекурăмĕнче палăрмасть-ха. Халĕ пурте камран та пулин мĕн те пулин вăрçса туртса илесшĕн. Паллă, ресурсем пĕтсе килнĕ вăхăтра кун пек çапăçса пурăнма пушшех те юрамасть. Ун пек пулсан эпир пĕр-пĕринпе çапăçса пĕтетпĕр. Ун пек тапхăр пулнă тет. Хăй вăхăтĕнче авалхи çынсем пĕрне пĕри çисе (каннибализм) пурăннă. Çисе яма патнех çитсен вара, сыхланса юлас тесе, «ан вĕлер» текен табу шутласа кăларнă. Паянхи кунсенче те çак хушăва çĕнĕрен туртса кăларса анлăлатас пулать. Çынна кăна мар, чĕрĕ чуна кăна мар — халăхсене те вĕлерме юрамасть. «Халăха ан пĕтер!», темелле. Халăх та хăй пĕр чĕрĕ чун, пĕр организм. Ăна та çут çанталăк хăй туса янă. Вăл Çĕр чăмăрĕ çинчи чи пысăк хаклăх. Анчах та хальхи çын çиенсем хăватлă хĕç пăшалсемпе усă курса çĕршер халăха пĕтерчĕç те ĕнтĕ. Юлнисемпе тата мĕн тăвĕç. Халăх текен истори субъекчĕ нимле патшалăх докуменчĕсенче те курăнмасть. Халĕ мĕн пĕччен çын хăй пĕртен пĕр субъект. Унăн кăна тем тĕрлĕ правасем пур, халăхăн вара нимле право та çук. ООН докуменчĕсенче те çук халăх тени. Халăхсене йăлт пĕтерсе хурса хăй хальлĕн кăна пурăнакан çынсен обществине туса хунине пĕлтермест-и ку.

Халăх пирки шутламаллисем пит нумай. Кунта хальхи саккунпа хăш халăх çынни пулнине паспортра кăтартманни те, Раççейре пĕртен-пĕр халăх — раççей халăхĕ пурăнать тени те, паллă, никама та çырлахтарма пултараймасть. Ку пурне те хăрататать. Халăхсене пĕтерсен вара вĕт, чăнласах, тĕнче те пĕтет. Глобализаци тени тĕнче пĕтнине пĕлтерет-ши вара. Тĕнче ан пĕттĕр тесен, питĕ тĕплĕ шутлас пулать. Çĕр чăмăрĕ çинчи кашни чĕрĕ чун хаклă. Çавна манмалла мар. Халăхсем пуринчен ытла хаклăх.

Пĕр пĕтĕмĕшле шутласа илсен пирĕн, чăн малтан, иртнине мар, пулассине мала хумалла. Халăхăн тĕнчекурăмĕ малашлă пулмалла. Апла, чăн хаклăх вăл малашлăх. Çавăнта пирĕн чăн çăтмах туса хумалла пулать. Ку йăлтах хамăртан, эпир мĕнле ĕçлениинчен, каларăмăр ĕнтĕ, эпир ĕмĕтленме пĕлнинчен килет. Чăваш халăх çулĕ вăл вилĕм çулĕ мар, вăл пурнăç çулĕ. Унăн пуласлăхĕ çутă, хăватлă, вăйлă тата таса. Кам мĕн хирĕçлесе калама пултартăр çак пĕтĕмлетĕве. Ун пек çын тĕнчере çуккă пулĕ тетпĕр.

Ыйтусем:

1. Халăх философийĕ хăçан пуçланса кайнă.
2. Мĕн вăл халăх философийĕ.
3. Философи мĕнле çула кăтартать.
4. Чăваш халăхĕн тĕнчекурăмĕ мĕн çинче тытăнса тăрать.

## II глава. Чăваш тĕнчин никĕсĕ

### 2.1. Çут çанталăкăн тата хуçалăхăн çураçтаруллă пĕрлĕхĕ

Кирек мĕнле объектăн та хăйĕн никĕсĕ пур. Чăваш халăхĕн никĕсĕ пирки шутлама тытăнсан, тӳрех, пуçа çут çанталăк аса килет. Эпир вĕт пурте çут çанталăк ачисем. Паллă, çут çанталăкпа эпир хамăрăн хуçалăх урлă çыхăнса тăратпăр. Ку — ĕçлĕ çыхăну. Тепĕр чухне, паллă, çут çанталăкпа эпир кану вăхăтĕнче те тĕл пулатпăр. Анчах та ку сайра пулать, тата туйăм-сисĕм шайĕнче кăна. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен çут çанталăкпа пире ĕç çыхăнтарса тăрать. Çăлсан та, пире урăх тĕн, çут çанталăка пуç çапни çăлать, терĕмĕр. Çавăнпа та пирĕн пурнăçсем те пĕр килеççĕ. Енчен те пĕрин пурнăçĕ тепринчен уйрăлса кайрĕç-тĕк, иккĕшĕ те пĕрне пĕри пĕтерме пултараççĕ (экологический кризис). Пирĕн халăх хальлĕхе çутçанталăк вăйĕсенчен уйрăлса кайман-ха. Ку пысăк шанчăк кӳрет. Хальлĕхе кашни чăваш çут çанталăкран тӳрременĕх пил ыйтма пултарать. Кашни пулăмпа сăмах каласа хутшăнать, кĕлĕсем те, ыйтусем те калăплать. Кашни чăвашăн хăйĕн кĕлли. Пĕри тырпул ыйтса кĕл тăвать. Тепри телей, савăнăç, сывлăх, тасалăх ыйтать. Усал вăйсене чĕнни пулман. Ун пек кĕлĕсене илтмен. Çавăнпа та чăваш çынни ытларах чухне çĕр ĕçĕпе пурăнаканскер, калама çук йăваш. Вăл ăшă çил варкăшĕ пек, шăнкăр-шăнкăр шыв юххи пек пурăнать. Уншăн ăна вăрçаççĕ те. Ытла чĕмсĕр, ытла йăваш теççĕ. Анчах та, енчен те эсĕ çут çанталăк ачи пулсассăн, урăхла пурăнма май та çук вĕт. Чăвашăн вăрман хăлхаллă, уй куçлă пулмалла. Çĕр çине выртсан çĕр чĕри епле тапнине те илтмелле. Чĕлхи те вĕт ун чĕкеç чĕлхи. Куçкĕрет, ун пурнăçĕ çут çанталăк пурнăçĕ. Вĕсем пĕр килеççĕ.

Çут çанталăкпа çыхăнма чăваш хăйне кăна майлă хуçалăх йĕркеленĕ. Çавă хуçалăх пулăшнипе йĕркелесе пырать вăл çут çанталăк пурнăçне. Çавă çураçтарать халăх тата çут çанталăк пулăмĕсене. Халăхпа çут çанталăк хăйсем пĕр экосистема туса хунă. Ăна чăваш халăх пурнăçĕн хутлăхĕ теме пулать. Çын таçта та пурăнма пултарать теççĕ те, анчах чăваш пулса пурăнма хăй пĕр хутлăх кирлĕ. Каларăмăр, вăл икĕ юханшыв хушши, Атăлпа Шур Атăл пĕрлешсе пĕрле юхнă çĕр-шыв. Кам çав хутлăхран тухса кайнă, асăрхăр, пĕтнĕ.

Л. Гумилев калашле[1], халăха çут çанталăк хăй йĕркелет. Ку ĕçе космос та хутшăнать пулать. Паллă, хăй тĕллĕн ним те пулмасть. Чăваш хăй те çак турăллă ĕçе хутшăнать. Хăйĕн халăхĕ лайăх пурăнтăр тесе вăй хурать. Хăйне çӳлерех те ăслăрах тыткалама тăрăшать. Çапла тăрăшни усăсăр пулмасть. Чăваш тĕнчи питĕ çураçтаруллă килсе тухать. Вăл, пĕр иккĕленмесĕр калама пулать, хăй пĕр пĕрлĕх. Çавă пĕрлĕхе çутçанталăкĕ те кĕрет. Вĕсем уйăрăлми пĕрлĕх. Çураçтарулăхĕ ăçтан сиксе тухать тесен, ку паллă, вăл халăх хаклăхĕсенче упранать. Çав çын шайĕнчи хаклăхсен пуххи хăй пĕр тăмха терĕмĕр. Кама çав тăмхапа паллă тунă, вăл çутçанталкпа пĕр пулăм пулса каять. Чăваш çыннишĕн, çавăнпа та пулĕ, кашни пулăмăн хăйĕн чунĕ, сĕмĕ пур. Чăваш чăн-чăн метафизик. Вăл япала шайĕпе çырлахмасть. Кашни япалана чун кĕртме тăрăшать. Çут çанталăк пулăмĕсене пушшех те чунлă курать. Каларăмăр, уншăн вăрман та хăлхаллă, уй та куçлă, çĕр те чĕреллĕ... Кунта нимле тĕрĕсмарлăх та çук. Ку питĕ тарăн туйăмлă шухăшлав. Пирĕншĕн тӳпе те атте, çĕр те анне. Эпир пĕччен мар ку тĕнчере. Пирĕнпе пĕрле мĕн пур çут çанталăк. Çавăнпа та, паллă, эпир ăна хур тума памастпăр.

Çапла тума пирĕн ял хуçалăхĕсем пур. Кашни хуçалăх çут çанталăк çаврăмĕсене евĕрлет, çавăнпа та çут çанталăкпа пĕр килет. Тĕрĕссипе каласан, ял хуçалăхĕн çут çанталăка нихăш енчен те сиен кӳме юрамасть. Анчах та, хальхи вăхăтри наука ăнланса çитеймен пирки, çут çанталăка сăтăр тăваççĕ. Эпир шутлатпăр, ку çут çанталăка ăнланман пирки пулса иртет. Ял хуçалăхĕпе ĕçлес тесен, калама çук ăслă пулмалла. Ку вăл тимĕр-тăмăр ăсталасси-тăвасси мар. Кунта пĕтĕмпех чĕрĕ япаласемпе пĕрле пĕр-пĕрне сиенлемесĕр ĕçлемелле. Çакă пулать те ĕнтĕ вăл çураçтарса ĕçлени. Калăпăр, çĕр-ана таврашĕнче ахаль тăпра çеç мар курма пĕлмелле. Çĕр вăл чĕрĕ пурнăç. Унта пиншер тĕрлĕ организм хăйне валли пурнăç тупнă. Вĕсемпе те «калаçма» пĕлмелле. Йывăç-курăкăн та хăйсен шутлавĕ пур. Çав шутлава çураçтарулăх теме пулать. Апла, çын кăна мар, çут çанталăк хăй те çынсăрах çураçтарса пурăнма пĕлет. Пирĕн ун пек пурăнас тесен çĕрпе тӳперен вĕренмелле пулать. Ахальтен каламан вĕт чăваш: «Эпир çĕрпе пĕлĕт хушшинче пурăнатпăр», тесе. Çураçтаруллă пĕрлĕх çинчен калани ĕнтĕ ку.

Пĕр шухăшласан, халăхăн çут çанталăкпа пĕр чĕлхе кăна мар тупмалла, тĕрлĕ пулăмсене аталантарса пĕтĕм тĕнчене чунлатмалла. Кăна вара çын хăй те турă шайĕнче пулсан кăна пурнăçлама пултарать.

---

[1] Гумилев Л.Н. Этногенез и биосфера Земли. — М.: Айрис-пресс, 2006. — 560 с.

Çапла мар-и вара. Турă та вĕт чăваш пекех пĕр сас та памасть, никам куçне те курăнмасть, никама та сиен кўмест — пулăшма кăна тăрăшать. Анчах çын турă пулса çитеймен пирки, хальлĕхе чăвашăн хăйне пĕтерни çеç курăнать. Вăл чўклĕх халăх пулса тăчĕ тесен те тĕрĕс. Ун пеккисем пирки хăшĕ-пĕрисем йĕкĕлтесе «истори тислĕкĕ» теççĕ. Апла мар пуль. Ыттисене пурăнма пулăшни нихçан та вăл тислĕк шайĕнче пулас çук. Ыттисене пĕтерес тени вара, тислĕк тăвас тени, пуринчен хăрушă. Анчах та темшĕн çав пĕтернине ырлаççĕ те халь. Конкуренци, теççĕ. Вăйли çĕнтерет, имĕш. Çут çанталăкпа хутшăннă чухне вара чи таса та хитре пулăмсемпе кĕрешмелле пулать-и-ха, эпир вăлă тесе йывăçа тĕпрен касса ярса пĕтермелле тет-и. Кун пек шухăшлавсем калама çук хăрушă, тĕпсĕр вилĕмлĕ авăра илсе çитереççĕ. Çавна куратпăр та.

Халăх шухăшлавĕ вара урăхла. Вăл çут çанталăкпа пĕр пулса çураçтаруллă пĕрлĕх туса хурасшăн. Çавăнпа та унăн хуçалăхĕ çакă тĕллеве пурнăçлама çуралнă та. Халăх, ун хуçалăхĕ пĕр тĕллевпе, çут çанталăкпа пĕр пуласчĕ тесе çураçтарса пурăнаççĕ. Çакă пулать те ĕнтĕ чăваш халăхĕн чăн никĕсĕ. Уйрăммăн илсен, кашни çын хăй çут çанталăкăн пĕр пайĕ, çавна туйса шута илсе тăрсан пирĕн халăх калама çук вăйлăн аталанса каяссăн туйăнать. Анчах та, каларăмăр, ун пуçне хальлĕхе пачах та урăх шухăшсем кĕртсе вырнаçтарасшăн. Вĕсем пурте вилĕмпе çыхăннă. Пурăнас текеннисем вара, ăнлантăмăр, çут çанталăкпа çыхăннă. Çут çанталăк пур-тăк — халăх та пур. Апла, пурнăç хутлăхĕ те пур.

## 2.2. Тĕн

Халăх тĕнĕ пирки шутласа кайсассăн, чăн малтан, паллах, миф шайĕнченех пуçламалла. Халăх хăй çулне упраса хăварнă, эпир, тенĕ пĕр çынран, ту çинчен аннă Улăпран пуçланса кайнă. Апла, эпир пурте Улăп ачисем. Улăп тени те питĕ хăйне майлă кăсăклă. Улăп сăмах «улла», «аллах», «олимп» тенисем пек. Тахçан авал «турă» тенине пĕлтермен-ши вăл. Авалхи грек туррисем те вĕт Олимп ятлă ту çинче пурăннă. Вĕсен чи аслă Зевс турри те Çăваç тенĕ пек илтĕнет. Унăн арăмĕ Гера тата ывăлĕ Геракл та Çĕр тата Çĕр ывăлĕ тенĕ пек янăраççĕ. Тата пĕтĕмлетсе каласан, апла, эпир пурте Турă ачисем, эпир хамăр та Турă. Чăваш чĕлхинче «турă», «турăм», «турĕ», «тăвакан» тенисем ĕç тунипе пĕр килеççĕ. Вырăсла ăна «создатель» теме пулать. Çав вăхăтрах чăваш «уйăх та хĕвел» тесе тăрать. Египет чĕлхипе уйăха «То», хĕвеле «Ра», теççĕ. «Тора» тени, апла, «уйăх та хĕвел» тенине

çывăх. Еврей чĕлхипе вăл «свиток» сăмаха, çырса хуни тенине пĕлтерет. Анчах та хальхи чăваш Турă тенине «Тĕнчене тăвакан» пек ăнланать. Çакна чăваш çынни пĕлсе тăрать. Чăваш халăхĕ те, апла, Турă хăй суйласа илнĕ халăх. Çавăнпа та пирĕн халăх Турра шанать. Ăна Мăн Турă е Çӳлти Турă тет. Тĕнчере çитмĕл те çичĕ чĕлхе, Турă вара пĕрре тет. Чăваш Турри, апла, ытти халăхсен турри пек килсе тухать. Вăл — тĕнче тăвакан. Ытти халăхсен кун пек пĕлтерĕш çук. Ку шухăшлаттарать.

Кунсăр пуçне чăваш çут çанталăк ачи пулнине те манса каймалла мар. Чăн малтан çын хăйне çут çанталăкра (антропоморфизм) курнă. Пĕтĕм пулăмсене хăйне курса пахаланă. Çавăнпа та чăвашăн хĕвелĕ те пăхать, çилĕ те вĕрет, йывăçĕ те ӳсет... Кунта пурте çын майлă, çын сăнлă, çын чунлă. Чăваш тĕнчи чунлă. Кашни япалан хăйĕн чунĕ пур. Çăл куç та, вăрман та, уй та, çĕр те — пурте чунлă. Хальхи наука куçĕпе пăхсан ку пĕрре те йăнăш мар. Япалапа чун пĕри тепĕринсĕр пулмаççĕ. Философи пуçланса кайнăранпа ку тĕп ыйту. Пĕрисем япала малтанрах (материализм), тепĕрисем чун малтанрах (идеализм) пуçланса кайнă теççĕ. Кунта ним тавлашмалли те çук. Хăшĕ мала тухасси вăхăтран килет. Чĕрчунсем киличчен тĕнчере япала пуç пулса тăнă, чĕрĕ чунсемлĕ пурнăç пуçланса кайсан чун вăй илнĕ. Кашни тапхăрăн хăйĕн вăйĕ пур. Калапăр, пурнăç лăпкă тăнă вăхăтра çын япала шайĕнче пурăнать, енчен те пурнăç питĕ хăвăрт улшăнма тытăнчĕ-тĕк, мала чун пуçарăвĕ тухса тăрать. Çын пурнăçа хăй аллине илет. Халĕ çавăн пек тапхăр çитрĕ те ĕнтĕ. Çавăнпа та халăх каллех хăй тĕнне шырама, Турă мĕнне ăнланма тытăнчĕ. Тĕн пăтрашуллă пурнăça йĕркелеме пулăшать, çул кăтартса парать.

Малалла каймалли çула, паллă, чăн малтан аваллăх кăтартса парать. Хамăрăн мĕнле пурăнмаллине эпир каялла çаврăнса пăхса пĕлетпĕр. Малалла эпир каялла çаврăнса пăхса утатпăр. Унта пирĕн ватăсем выртаççĕ. Пире мĕн тумаллине вĕрентсе тăраççĕ. Вĕсем йĕркеллех пурăнса ирттернĕ пулсан, мĕн-ма вара урăхла пурăнмалла тет. Çавна кура тăркача эпир те мăн асаттесем пек пурăнма тăрăшатпăр. Вĕсенчен пил ыйтса илетпĕр. Вĕсене пуç çапатпăр. Ватăсем вара кăмăллă, пире пулăшма пулаççĕ. Пулăшаççĕ те. Кам пил ыйтса курнă, çавă пĕлет. Çулталăкра пĕрре çăва çине пыни те мар кунта. Кашни апат çимессерен пиллештерет чăваш. Ватăсен пурнăçне, вĕсен сăнарне куçран ямасть. Çавăнпа та чăваш тĕнне пĕр иккĕленмесĕр ваттисене пуç çапнин тĕнĕ тесе те калама пулать. Çавна пулах, кайнă пĕрне асра тытнăран, эпир пысăк халăх. Эпир икĕ

миллиона яхăн кăна мар, асра тытнисене шута илсен чылай пысăк йышлă. Ку йыша пулас ачасене те кĕртес пулать. Çавăнпа та халăх йышĕ хутшăнсах пырать. Вăл пĕрре те чакмасть. Хальхи вăхăтри çырнисем (перепись) кăтартнисем вĕсем чăваш донорлăхĕпе çыхăннă. Чăваш ытти халăхсем пĕтнине курса вĕсене хăй юнĕпе пулăшать. Çавăнпа та халĕ чăваш вырăса тухнă пек курăнать. Чăваш питĕ ырă. Пурне те Турă пек пулăшса тăрать, çавăнпа та вăл пĕр вăхăтрах вырăс та, тутар та, нимĕç те... Çав вăхăтрах чăваш та. Çакна тума Турă хăй ыйтать пулмалла. Мĕншĕн тесен чăваш Турри ытти халăхсене те пулăшать. Чăваш Турри пурне те пулăшать. Ку питĕ вăрттăн, кăткăс, турăллă пулăм, çавăнпа та куçа пит курăнса каймасть. Акă, тĕнче йĕркеленсе çитсен, çав хальлĕхе халăхран çухалнă ачасем каялла таврăнма тытăнĕç. Ку, паллă, каллех пирĕнтен хамăртан килет. Турă хушнă пек ĕçлесен, Турă ачи пулма пăрахмасан, вĕсем каялла килеççех.

Чăвашран Турă мĕн сăнлă тесе ыйтсан, вăл çут çанталăк сăнлă пулĕ тет. Маларах каларăмăр, чăваш кашни çут çанталăк пулăмĕнче Ырă курать. Ырăсене пуç çапать. Пĕрисем вĕсене Турă шайнех лартаççĕ. Анчах хальхи халăха сăнаса пăхсан, вăл ырăсене пуç çапса кĕл тунине куратăн. Çавăнпа та халăхăн 99 турă тенипе килĕшме çук. Чăваш халăхĕн пĕртен пĕр Çӳлти Турă пур (монотеизм). Ыттисем вара Ырă шайĕнче çӳреççĕ. Кун пек тĕне, шутлатăп, никам та хирĕçлеймест. Кирек мĕнле тĕне вăйпа хистесе куçарнă пулсан та чăваш хăй тĕнне пăрахмасть. Мĕншĕн тесен Çӳлти Турă ăна, хăй ачине, хăй халăхне тытса тăрать, пăрахмасть. Çавăнпа халĕ те пурăнатпăр та эпир, тĕнчерен ытти халăхсем пек кайман, çухалман. Пирĕн хамăрăн Турă пур. Вăл — çут çанталăк, терĕмĕр.

Çын хăй те çут çанталăкăн пĕр пайĕ. Апла, вăл Турра хăйĕнче те курмалла. Ахальтен-им вăл хăйне Турă ачи тет. Апла, Турă унра та пур. Тен, вăл ун ăшĕнчех ларать. Вăл — çут çанталăк ачи. Çапла пуль, çавăнпа та вăл, Турă та-ха, никама та кӳрентермест, пурне те пулăшма тăрăшать, çураçтарать. Ку турăлла курăннин сăлтавĕ, паллă, унăн хăйĕн ăшĕнче Турă ларнинче. Ларать пулсан, ăçта ларать-ши вара вăл. Çынрах, урăх ăçта лартăр ĕнтĕ вăл. Анчах та вăл çынран пысăкрах, лайăхрах, хитререх, ырăрах, вăйлăрах... Вăл пирĕн идеал. Эпир хамăр пурнăçра çав хамăртан пысăкрах çын пек пуласшăн. Çавна пула çӳлелле турă патне туртăнатпăр та. Хамăр сисмесĕрех вара чăнласах çын пулса çитетпĕр. Çын тени çын патне çитес тениех. Турă пулăшнипе пулать çакă. Турри, пĕлтĕмĕр, пиртех. Вăл пире, ыйтма пĕлсен, куллен пулăшса пырать. Турă, вăл, апла, пире пулăшакан çут

çанталăк вăйĕ, пирĕн хӳтлĕх. Кам пире пулăшу тата хӳтлĕх парать — çавă Турă. Ваттисем те пире хӳтĕлесе тăраççĕ, апла, вĕсем те турăсем. Турă, апла, нумай сăнлă. Вăл çут çанталăк та, халăх та, хăвăнран пысăк çын та, паттăрсен шайĕнче юлнă ватăсем те. Ку тĕнчере мĕн лайăххи патне туртать, мĕн пире пысăкрах пулма пулăшать, çавă пурте Турă. Çапла шухăшласа пурăнать чăваш халăхĕ. Çавна пулах вăл ют турăсене те тиркемест. Вĕсем те, пулăшаççĕ пулсан, турăсемех тет. Халăхсен кашнин хăйсен Турри. Вĕсем чăвашăннипе пĕр килни куç кĕрет. Тĕнчере чăнах та пĕр Турă пулас. Чăваш çавна пĕлет, çавăнпа та хăй Туррине пăрахмасть. Хăйĕнне пăрахни ытти турăсене пăрахниех пулĕччĕ.

Кунта Туррăн пуçламăшĕпе вĕçĕ çинчен те каласа хăвармалла пулĕ. Турă, каларăмăр, çын хăй лайăх пулас тесе шутласа кăларнă вăй тата хӳтлĕх. Малтанрах çав хӳтлĕхе вăл хăйĕнчен вăйлăрах çут çанталăк пулăмĕсенче курнă. Вĕсене алла илес тесе, пуç çапнă. Каярахпа хăйĕнчен пысăкрах хăй пек çынра (Тора, Христос, Будда, Муххамед тата ытти те) курма тытăннă. Хальхи вăхăтра вăл Турра хăйĕнче курать. Турă пек пулма тăрăшать. Çакăнта пулĕ тĕнчен çăлăнăçĕ. Туррăн хăйĕн тĕнчине çăлмаллах вĕт. Çак ĕçе, çӳлерех каларăмăр, чăваш питĕ пуçаруллă хутшăнать. Çак ĕçрех пуль хăйне хăй пĕтерет. Вăл пулăшнипе, шутлать чăваш, тĕнче, тен, лайăхланать, ырăланать, йышланать... Тĕнчипе ĕçлесе парать чăваш. Укçине те ыйтмасть. Вăл тӳлевсĕрех ĕçлесе пама хатĕр. Мĕн ĕмĕртен çапла пулнă вĕт. Ибн Фадлан çырса хăварнă тăрăх авалхи пăлхар-чăваш хăй япалин хакне те пĕлмен тет. Мĕн хак хурать илекен, çав хакпа сутса янă. Халĕ те çавах. Кирек мĕнле ĕç туса патăр чăваш, хакне каламасть. Мĕн чухлĕ паратăн тет, хав хак пулать те. Тĕнче, çавăнпа усă курса, паллă, чăваша хытă улталать. Анчах та чăваш ним пулман пекех малалла ĕçлет, ултава Турă пек чăтать. Ахăртнех, тĕнче чăваша Турă вырăнне суйласа лартнă та, ун пурнăçне кăтартса парса тĕнчене хăйне лайăхлатасшăн. Акă, курăр, тет, чăваш епле ырă. Вăл укçасăрах ĕçлесе парать. Пасар тапхăрĕнче кун пек пурăнма ытла та йывăр. Ку чăн чӳклĕх вĕт. Халăх хăй, апла, Турă шайĕнче çӳрет.

Халăх хăй вăл Турă тени чĕлхе вĕçне хăех тухать. Урăх кам пултăр ун пек хăватли. Турă хушнисене вĕт йăлтах халăх шутласа кăларнă, халăх хăй хушнă. «Ан вĕлер», «Ан суй», «Ан вăрла», «Ан ĕç», «Ют хĕрарăм патне ан кай» тата ыттине те халăх хăйĕн пурнăçĕнче хăйне сыхласа хăварас тесе шутласа кăларнă, çавăнпа упранса юлнă та. Апла, Туррăн тепĕр сăн та пур. Вăл çут çанталăкпа лайăх е ватă çын сăнлă кăна мар, вăл халăх сăнлă. Халăхăн сăнĕ пур-и вара тесе ыйтма

пулать. Ку питĕ кăткăс ыйту. Пур тесе хуравланă пулăттăмăр эпир. Вăл халăх хаклăхĕсен пĕр пуххи (менталитет). Çӳлерех эпир ăна, хаклăхсен пуххине, ПТХ тесе хакларăмăр. Халăх хăй çав ПТХ пулать. Кашни çын шайĕнчи ПТХ-на тăмха, терĕмĕр. Çав ПТХ çапни, Турă чĕрене пичет çапниех. Çакăн пек шутласа кайсан вара, Турăпа халăх пĕр пулнине тӳрех ăнланса илетĕн. Апла, Турă пĕтсен халăх пĕтет. халăх пĕтсен Турă пĕтет. Ку шăхăша тата маллалла тăссан, çут çанталăк пĕтсен, халăх пĕтет, турă пĕтсен çын пĕтет тенисем питех те тĕрĕс килсе тухаççĕ. Акă мĕншĕн халăх: «юман пĕтсен чăваш пĕтет», «чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет» тенĕ иккен. Эпир ку сăнарлă шухăшсене пит уяман та Турăпа халăх, Турăпа çут çанталăк, Турăпа çын, Турăпа тĕнче хушшинчи çыхăнусене курман. Халĕ тин пурнăç малалла кайтăр тесен мĕн тумалли паллă пулать. Турă пултăр тесен, чăн малтан, хамăр çут çанталăка упрамалла, вара чăваш çыннине хисеплемелле, юлашкинчен халăх йышне ӳстермелле. Çак ĕçсене туни пулать те ĕнтĕ Турра юратни. Вара Турă та пĕтмест, вăл пире тата хытăрах пулăшса пырать. Анчах, асăрхăр, Турра юратап текенсенчен кам çак ĕçсене туса пырать. Хурав пĕрре — никам та. Ку, питĕ тĕлĕнтерет.

### 2.3. Чĕлхе тата çын хутшăнăвĕсем.

Чĕлхе халăха йĕркелекен пулăмсенчен чи пĕлтерĕшли тесен те юрать. Мĕншĕн тесен халăх вăл çынсен ĕçлĕ хутшăнăвĕ. Кирек мĕнле хутшăну та чĕлхесĕр пулмасть. Паллă, тискер чĕрчунсен те хăйсен чĕлхийĕ пур, вĕсем те ушкăнланаççĕ. Анчах та ăнлав шайĕнче йĕркеленнĕ чĕлхе ĕç тата пурнăç опытне лайăхрах кăтартма пултарать. Чĕлхене алла илсен çын социум пурнăçĕпе туллинрех пурăнма пуçлать, çавăн чухне кăна пĕр пĕтĕмĕшле каласан, халăх йĕркеленет. Çын чĕлхесĕрленсен, паллах, халăхĕ хăй те пĕтет. Çавна курса тăрса чăваш халăхĕ «эпир кайсан мĕн юлать, мĕн калаçнă чĕлхе çав юлать» тенĕ. Мĕн калаçнă чĕлхи юлмасан вара ним те юлмасть. Çавăнпа та хальхи чĕлхепе хутшăну çинчен тĕплĕнрех шухăшламалла пулать.

Мĕн вăл чĕлхе, тесе ыйтсан, никамах та питĕ тĕплĕн каласа параймĕ. Çапах та вăл пиртен çын тунине тӳрех ăнланса илме пулать. Чĕлхе пулсан, çын та пур. Чĕлхе çук-тăк, çын та çук. Пуринчен ытла тăван чĕлхе пирки шутлас пулать. Кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи. Вĕсем ăçтан тухса кайни паллă мар. Малтан Çĕр чăмăрĕ çинче пĕр чĕлхе пулнă теççĕ. Кайран, Библине пăхса каласан, вĕсене Турă расна чĕлхе

парса аташтарса янӑ пулать. Турӑ вӑл хӑй халӑх тата ҫут ҫанталӑк пулнине халӗ пӗлетпӗр. Апла, расна чӗлхесене ҫынсем, хӑйсем ӑҫта пурӑннине шута илсе, хӑйсемех йӗркелесе янӑ пуль. Сӑмахран, ҫеҫен хирте пурӑнакансен хӑйсен уйрӑм чӗлхе, ту ҫинчисен тата урӑхла, тинӗс хӗрринчисен те ҫавах, расна. Кашни ҫӗр вырӑнӗ (ландшафт) чӗлхене хӑй йӗркелет. Енчен те, сӑмахран, сасартӑк пур халӑхсем те пӗр чӗлхеленсе кайсан, нумай та вӑхӑт иртмӗ, вӗсем каллех хӑйсен расна чӗлхисемпе калаҫма пуҫланӑ пулӗччӗҫ. Пурнӑҫра ку тӳрех курӑнать. Калӑпӑр, пӗр чечекех е кӑмпана расна ҫӗрте расна ят хураҫҫӗ. Чӗлхи пӗр, анчах вырӑнти диалектсем пур. Ҫавӑнпа та чӗлхеҫӗсем каланӑ тӑрӑх, ҫӗр хӑй калаҫтарать. Апла, ют чӗлхене алла илсе тӑван чӗлхене пӑрахни вӑл тӑван ҫӗре пӑрахни пулать. Чӑн та, пурнӑҫра ҫапла килсе тухать те, кам ялтан тухса кайнӑ, ҫавӑ тӳрех урӑх чӗлхепе калаҫма пуҫлать. тӑван ҫӗр чӗлхине йышӑнмасть. Мӗншӗн тесен халӗ ӗнтӗ унӑн ҫӗрӗ те, чӗлхи те ютӑ.

Кунсӑр пуҫне амӑшӗ чӗлхи пирки те шухӑшласа пӑхас пулать. Тӑван чӗлхене ача ҫураличченех пӗлет теҫҫӗ. Вӑл юн шайӗнчех ҫырӑннӑ пулать. Ҫавна пулах ӗнтӗ ача ҫуралнӑ ҫуралман тӑван чӗлхепе питӗ хӑвӑрт хӑй тӗллӗнех тенӗ пек калаҫса каять. Кунта ним тӗлӗнмелли те ҫук. Амӑшӗ мӗнле чӗлхепе шутлать, ачи те ҫав чӗлхене куҫать. Ҫын хӑйӗн пӗтӗм кӗлеткипе шухӑшлать теҫҫӗ. Акӑ халӗ ӗнтӗ амӑшӗ ют чӗлхепе шутласа ҫӳретӗр, ачи те ҫав вӑхӑтра, варта выртать те-ха вӑл, амӑшӗпе пӗрлех шутлать ӗнтӗ. Хальхи наука тӗпчевӗсем ҫакна питӗ лайӑх ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Амӑшӗ мӗн калаҫнине, юрланине, шухӑшланине ача йӑлт илтет. Ҫавӑнпа та ку пурнӑҫ ҫинчен ҫураличченех питӗ нумай пӗлет. Апла, ют чӗлхепе калаҫакан амӑшӗ ниепле те чӑваш ҫуратма пултараймасть. Ку ҫеҫ те мар. Пульницӑра ача, ҫуралнӑ ҫуралман, ют чӗлхепе калаҫакан медперсонал аллине лекет. Вӑл амӑшне мар, пач ют ҫынсене амӑшӗ вырӑнне хурса йышӑнать. Ку питех те вӑрттӑн пулӑм. Тӗслӗхрен, чӑх чӗпписем тухнӑ ҫӗре кӑлӑп чӑххи вырӑнне кушака пырса лартсан, чӗпӗсем ҫав кушака амӑшӗ вырӑнне йышӑнаҫҫӗ те ун хыҫҫӑн каяҫҫӗ. Чӑн амӑшне, кӑлӑп чӑххине ӗнтӗ, патне те ямаҫҫӗ. Ҫакӑн пек пулӑм кашни пульницӑра, кашни ачапа пулса иртет. Ӑҫтан чӑваш пулса ҫуралма пултартӑр-ха ӗнтӗ хальхи ача.

Хайдеггер чӗлхене ҫын пурнӑҫӗ пек курать. Ун шучӗпе, чӗлхе — ҫын ҫурчӗ[1]. Паллӑ, чӗлхе вӑл халӑх чунӗ. Чӗлхесӗр тӑратса хӑварнӑ халӑх чунсӑрланать. Урӑхла каласан выльӑх шайне анса ларать.

[1] Хайдеггер М. Бвтие и время. СПб.: Наука, 2002, 451 с.

Халăха пĕтерме питĕ çăмăл. Тăван чĕлхепе калаçма кăна чар, пулчĕ те. Кун пеккисем пĕрре кăна мар пулнă, пур та. Вĕрентӳ ĕçĕнче ку пулăм пуринчен ытла сарăлнă. Вĕренекенсен хăйсен тăван чĕлхипе вĕренме кăна мар, калаçма та юрамасть иккен. Çавăнпа та хальхи шкулсенче чăвашла калаçнине илтеймĕн. Пурте ют чĕлхепе калаçаççĕ. Шкулти учительсем чĕлхе пулăмĕсене пачах ăнланмаççĕ пулмалла.

Чĕлхе тĕнчене чăнлакан пулăм. Сăмах каламасăр ху тĕрĕс шутланипе шутламаннине пĕлместĕн. Шухăш сăмахра кăна тĕвĕленет. Сăмахсăр шухăшлав çук. Ахальтен мар библире те чăн малтан сăмах пулнă, турă хăй сăмах, турă çак тĕнчене сăмах каласа тунă тенĕ. Апла, Турă тени сăмах тенипе пĕр килет. Ку тĕрĕсех. Мĕншĕн тесен сăмах каламасăр пĕр ĕç те тăваймăн. Тумалла та мар. Сăмах каласа тунă ĕç ăнăçлă килсе тухать. Çавăнпа та чăваш кирек хăçан та ĕç умĕн пĕр-икĕ сăмах калатех. Кĕлĕ туса, пуç çапса ĕç пуçлани, паллах, тата ăнăçлăрах килсе тухма пултарать. Çавăнпа та шухăшлавпа чĕлхе тата ĕç уйрăлми пĕр пĕрлĕх пулса тăраççĕ. Тăван сăмаха каламан çын çын пулма пултараймасть.

Кунта эпир хамăра ыттисенчен мĕнпе уйăрма пултарни пирки те калаçмалла пуль. Халăхсен хушшинчи чи пысăк уйрăмлăх вăл — чĕлхе. Эпир хамăр чăваш пулнине чĕлхе урлă пĕлетпĕр. Енчен те хамăр чĕлхепе усă курмастпăр пулсан, кам пулни паллах мар. Чăваш тенин хăйĕн тĕнчекурăмĕ терĕмĕр. Тĕнчекурăмĕ вара чĕлхере йĕркеленет, унтах упранать. Пĕр сăмахпа каласан, эпир чăвашла кăна шухăшлама пултаратпăр. Çав шухăшлав, чĕлхе хăйне майлă пулнăран, расна шухăшлав. Тĕнчене те çавна пула урăхла ăнланатпăр. Урăхла куратпăр. Пирĕн çырулăха йĕркелекенсем, чăн турăсем пулнă тесе каласан та, апла, йăнăш пулмасть. Чăваш халăхĕ хальхи вăхăтри çырулăха тĕпе хуракан Иван Яколева Турă вырăннех хурать. Çĕнĕ çырулăха халăхра саракан вĕрентекенсене тав сăмахĕ калаççĕ. Пĕр ӳстермесĕр калама пулать: чăваш кĕнеки чăваш патшалăх никĕсенче выртать. Çырулăх пулман пулсан эпир çурхи юр пек ирĕлсе кайнă пулăттăмăр. Çавăнпа та хамăрăн çырулăха куçа упранă пек упрас пулать. Хальхи çамрăксем чăваш чĕлхипе пурăнсан, малашлăх пулмасть тенине ырлама çук. Чĕлхене çухатсан вара, чăнласах малашлăхсăр тăрса юлатпăр. Çавăн пек тăвасшăн та хăшĕ-пĕрисем. Анчах та шанас килет, халăх хăйне упраса хăвармалăх вăй, ĕненӳ тупатех. Вăл хăйне шанать.

Çав вăхăтрах хальхи пасар вăхăтĕнче сăмах хăй те тавар пулса тăрать. Кашни япалан хăйĕн ячĕ пур. Чăваш ятлă пулсан вара, таварĕ те чăваш таварĕ пулса сутăнать. Укçи те чăвашăнах вĕт-ха вăл. Ăна

чăваш хăй вăйĕпе, ĕçĕпе ĕçлесе илнĕ. Çав укçапа тавар-мĕн илес тесен, апла, çав укçана хисеплесе, ăна та чăвашла калаçтарас пулать, Мĕншĕн урăхла сăмахсем каласа хăвăн укçу хакне пĕтеретĕн, теес килет. Çавăнпа япала сутнă чухне те, илнĕ чухне те чăвашла каласа сутас-илес пулать. Вăл пирĕн халăх тупăшне пысăклатать. Ют сăмах каласа илтĕн пулсан вăл сан пурнăçшăн техĕмлех пулмасть. Халăх ятне те «Чăваш» тесех каламалла. Пăлхар, сăвар, пăлхар-сăвар, пăлхар-чăваш тенисем ăса пăтраштараççĕ. Истори пулăмĕсене тĕпченĕ чухне вĕсем вырăнлă та пулĕ, анчах та кулленхи пурнăçра хамăрăн «чăваш» ятпах усă курмалла. Хăшĕ-пĕрисем чăваш ятран кулаççĕ, çавăнпа та урăх ят илмелле тенисем, ют хыççăн кайнине пĕлтереççĕ. Вĕсем сана хăвна ху пăрахтарасшăн, çынран кăларасшăн. Вара тин санпа кирек мĕн ту, эсĕ хирĕç те тăраймăн. Мĕншĕн тесен халь тин эсĕ никам та мар. Эсĕ чĕлхесĕр, ятсăр, тăван çĕрсĕр те турăсăр.

Чĕлхе пĕрре те ахаль улăштармалли япала мар. Чĕлхене çухатас мар тесе ĕнтĕ, таçтан авалтан куçса килнĕ чăвашсем хальхи вырăнĕсене малтан усă курнă ятсем хурса тухнă. Пилĕк пин çул иртнĕ пулĕ, чăваш пурпĕрех шыв ячĕсене, сăрчĕсене, вăрманĕсене, ялĕсене авалхи ят хурса пĕлет. Авалхи çĕр хăй, халăхпа пĕрле çĕнĕ вырăна куçса килнĕ, тейĕн. Чĕлхе пурăнмалли вырăнсене кăна мар упрать, вăл авалхи историпе çыхăнтарать. Чĕлхе истори пулăмĕсене упрать. Тĕслĕхрен, «Сăхăт» ялĕ тесенех эпир авалхи хăватлă Согдиана патшалăхне аса илетпĕр. «Ершу» тесенех Месопотамири Евфрат юханшывне сума сăватпăр. «Арапуç» тенине илтсен Арарат тăвĕ е Урарту патшалăхĕ пуçа килет. Ун пек упраннă ятсем пинĕ-пинĕпе. Çавсене чĕлхе упраман пулсан эпир историсĕр тăрса юлнă пулăттăмăр. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, чĕлхере пĕтĕм истори упранать. Чĕлхе хăйне майлă археологи материалĕ пулса тăрать. Кам чĕлхене тарăн ăнланать, халăх аталанăвне тĕп-тĕрĕс курать, çавă тĕнче историне пĕлет. Çавăнпа та пулĕ тĕнчере пур çĕрте те чăваш чĕлхине тĕпчеççĕ. Вăл, имĕш, чи авалхи чĕлхесенчен пĕри. Ытти чĕлхесем çухалнă. Çавăнпа тĕпчеççĕ те. Кам чăваш чĕлхине пĕлет — çавă тĕнче историне те пĕлет. Пирĕн чĕлхе ностратика шайне упраса хăварнă. Чăн та, кирек мĕнле чĕлхере те чăваш чĕлхин тымарĕсене тупма пулать. Вырăс чĕлхинче puринчен ытла пур çапла сăмахсем. Кашни славян сăмахĕнчех тенĕ пек, тымарĕнче ĕнтĕ, тĕрĕк сăмахĕ ларать. Ку пулăма хăй вăхăтĕнче Добродомов профессор лайăх тĕпчесе тухнăччĕ.

Чĕлхе хутшăну хатĕрĕ терĕмĕр. Вăл усала та, ырра та вĕрентме пултарать. Вăл çын чунĕ те, характерĕ те, шухăшлавĕ те... Лайăх каласан, тĕнче лайăхланать, япăх каласан — япăхланать. Çакна шута

илсе калаçмалла. Чĕнмесĕр тăни çителĕксĕр. Чĕниччен чĕнменни тени те тĕрĕсех мар. Тепĕрисем «шăп тăнăшăн ылтăн параççĕ», теççĕ. Ку та тĕрĕсех мар пуль. Сăмах каламасăр ку тĕнчере ним те тума юрамасть. Сăмах каласан кăна ху та ылтăн пулатăн. Урăхла каласан турă шайне ларатăн.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, чăваш халăхĕ хăйĕн чĕлхипе пуян, сăмах каласа хăйĕн тĕнчине туса хурать. Чĕлхене упраса аваллăха кăна мар, малашлăха та курса тăрать. Çын пулассипе пулас марри те чĕлхеренех килет. Кам хăй чĕлхине çухатнă, çавă чăваш пулма пăрахнă. Кам хăй чĕлхине тарăн та анлă пĕлет, вăл тĕнчене те пĕлет. Чăваш шухăшлавĕ тĕнче шухăшлавĕ, чăваш чĕлхи тĕнче чĕлхи пулса тăрать. Тĕнче, апла, вăл хăй пĕр чĕлхе.

Ыйтусем:
1. Чăваш тĕнчин никĕсĕ пур-и.
2. Çут çанталăкăн тата хуçалăхăн çураçтаруллă пĕрлĕхĕ мĕнре палăрать.
3. Чăваш тĕнĕ пирки мĕн калама пулать.
4. Чĕлхе тата çын хутшăнăвĕсем халăха йĕркелеççĕ-и.

## III глава. Халăх çут çанталăка сăнани тата тĕнчене ăслани

### 3.1. Чăваш сăнавĕсем

Чăваш сăнавĕсем, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пурнăç тата çут çанталăка ăсланисемпе çыхăннă. Ĕлĕкхи чăваш хăш кунра мĕнле çанталăк пулассине çулталăк маларах пĕлсе тăнă теççĕ. Кашни хресченĕн çулталăк кĕнекисем пулнă, унта çанталăк мĕнле пулнине кун хыççăн кун çырса пынă, тĕпченĕ, тăтăшах тĕл пулакан пĕр пек пулăмсене пĕтĕмлетнĕ. Пуринчен ытла çанталăк улшăннă тапхăрсене, кунĕсене (бифуркацисене) лайăх пĕлнĕ. Сăмахран, кĕркуннехи пĕрремĕш сивĕсем хыççăн ăшăтать, çĕнĕ çул умĕн çанталăк çемçелет, нарăс раштав пиччĕшĕнчен ирттерет, çĕмĕрт çеçке çурсан сивĕтет, «çырла пиçнĕ вăхăтра майра шăнса вилнĕ» тет, тата ытти те. Сăнавĕсем халăхăн питĕ сăнарлă, питĕ тĕрĕс, хăйсен пĕлтерĕшне халĕ те çухатмаççĕ.

Сăнав тĕрĕслĕхĕ темле ку çапла пулать пуль-ха тенĕ ăнсăртлăхпа çыхăнман. Вăл биосферăн ăшăпа сивĕ балансĕ çинче тытăнса тăрать. Çав баланс хĕллехи уйăхсем çуллахи уйăхсемпе пĕр килнинче палăрать. Калăпăр, кăрлач уйăхĕ çу уйăхĕпе, раштав утă

уйăхĕпе, нарăс вара çурла уйăхĕпе пĕр килет. Вĕсем антогонистсем. Хĕллехи уйăхсенче сивĕ е юрлă пулсан, апла, çуллахи уйăхсенче ăшă та çумăрлă пулмалла. Тепĕр май калани те тĕрĕс. Хĕлле ăшă тăрсан çулла сулхăн пулать. Çапла йĕркеленсе тăраççĕ те ăшăпа сивĕ. Ку хăйне майлă саккун, биосфера саккунĕ. Хресчен унпа туллин усă курать. Ĕлĕкхи чăвашсен çакă саккун тăваткăл туя çине çырăнса пынă. Ăна ĕнтĕ ĕçлĕ модель теме те пулать.

Кунсăр пуçне халăх чĕрĕ чунсемпе йывăç-курăка сăнаса та пĕтĕмлетӳсем тума пултарать. Сăмахран, кăткăсем йăвине пытанчĕç пулсан е чечек çеçкине хупрĕ-тĕк — çумăра. Вăрман шавлама пуçласан та çавах. Апла, таçта сивĕ çумăр пĕлĕчĕ пур, çавă сывлать. Кун пек тĕслĕхсем питĕ нумай. Шăпчăк юрлама вĕренчĕ-и, шапа сас пара пуçларĕ — çу çитрĕ теççĕ. Чĕкеç вĕçсе кайсан е кураксем ушкăнланса вĕçме тытăнсан кĕркунне çитет. Çут çанталăкпа тачă çыхăнса пурăнакан çĕр çынни пурне те курать, пурне те сисет, пĕтĕмлетет, мĕнле пулăм хыççăн мĕнле пулăм килнине ас туса юлать. Çавна пулах ырансенче мĕн пулассине те пĕлсе тăрать. Каларăмăр, ĕлĕкрех вăл çулталăк маларах пĕлсе тăнă.

Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, чăваш пĕтĕм тĕнчене хăй майлă йĕрке пек курса тăрать. Тĕнчен хăйĕн йĕрки пур, тет. Çав йĕрке çине ӳкнĕ çын пурнăçĕ вара ăнăçлă та телейлĕ килсе тухать имĕш. Çавăнпа та чăваш ратнелĕхне упранă хыççăн йĕркелĕхе упрама тăрăшать. Вара тин ырлăх килет, тет. Çакă йĕркелĕх халăх каларăшĕсенче лайăх упранса юлнă. Тĕслĕхрен: «Тĕменте тĕрли пур», «Пĕри пĕтмесĕр тепри пĕтес çук», «Чулпа перекене çăкăрпа пер», «Çич хут виç те пĕрре кас», «Çынна итле те — хирĕçле ту» тата ытти те. Ваттисен сăмахĕсене пĕр вĕçĕмсĕр илсе пама пулать. Вĕсем пурте ырăнлă, вăхăтлă, нихăçан та кивелмеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем хăйне майлă инвариантсем пулса тăраççĕ. Халăх ăславĕ вĕсенче çирĕпленсе хытса ларса юлнă.

Чăваш сăнавĕсем, куртăмăр, çут çанталăкпа кăна мар, çын пурнăçĕпе те тачă çыхăннă. Калăпăр, пурнăç диалектики «Пурри те пĕтет, çукки те çитет — пĕрле пурăннине мĕн çитет» каларăшра çырăнса юлнă. Кун пек сăнавсем питĕ нумай. Тĕслĕхрен: «Мĕн акатăн — çав шăтать», «/кессине пĕлнĕ пулсан улăм сарса хунă пулăттăм», «Туман тиха урине çапса хуçма кирлĕ мар», «Пĕчĕк хуранăн пătти тутлă», «Пĕччен суран, типсе пырать — халăх сурсан кӳлĕ пулать» тата ытти те.

Анлăх (пространство) чăваш ăслăлăхĕнче хăйне майлă çавра пек курăнать. Тĕнче чăваш тавра çаврăнса тăрать. Кĕллисенче те ун пĕрмаях «уйăх çаврăнать, хĕвел çаврăнать» тенисем пур. Çавра кăна

тĕнчере пурăнакан çын пĕрмаях çак тĕнчере çаврăнса çӳрет. Кирек мĕнле ĕçре те, каяс-тăвас пулсан та вăл яланах çаврăнăçуллă, ĕçе çавăрса ярать, тăван килне çаврăнса килет.

Вăхăт мĕнлине пăхса илсен, вăл та халăх ăнлавĕнче çавраллă. Ку ĕнтĕ çĕр ĕçĕпе çыхăннă пулăм. Хресчен хĕвелпе тăрать, хĕвелпе çывăрма выртать. Унăн пурнăçне çут çанталăк календарĕ йĕркелесе тăрать. Вăл календарь çулталăк тăршшĕпе мĕнле çаврăнса килнине малтанрах эпир каланăччĕ. Çын вăхăчĕ кулленхи пурнăçра та палăрса тăрать. Пĕрмай пĕр ĕç, пĕр пулăмсем йăлăхтарсах çитереççĕ. Çавăнпа та çавраланса тăракан вăхăта тепĕр чухне урăхлатни те тĕл пулать. Çын вăхăта улăштарас тесе, тен, çирĕплетес тесе те, уявсем йĕркелет. Тĕрĕссипе, халăхăн чи пысăк уявĕсем хăйне майлă вăхăт шутлавĕсем пулса тăраççĕ. Калăпăр, хамăр пурнăça Çĕнĕ çултан пуçласа шутласа каятпăр, е çуралнă кунран, тата ытти те. Ĕç уявĕсем тата йăла-йĕрке уявĕсем чи пысăк вырăнта.

Чăваш сăнавĕсем пирки нумай калама пулать. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, чăваш тĕнчене хăйне пĕлсе сăнлать (антропоморфизм). Тĕнче мĕнле пуласси хăйĕнчен килнине ăнланать. Çавăнпа та тĕнче пулăмĕсене питĕ асăрханса хаклать. Тӳрех ниме те татса памасть. Малтанласа пурнăç тата çут çанталăк пулăмĕсем мĕнле аталанса пынине сăнать, кайран вара тин мĕн тумаллине тытса тăвать. Вăл тĕнче виçине чухлать. «Мала ан кай, пуçа касаççĕ — кая ан юл, таптаççĕ», тет. Кирек мĕнле хутшăнура та вăл хăй виçине пĕлет. Ниçта та ытла пит хĕрсе каймасть, сивĕнсе те хытса лармасть. Истори çулĕ халăха нумай вĕрентни сисĕнет кунта. Каларăмăр, вăл темиçе хутчен те пĕтсе курнă. Çавă ăна асăрхануллă пулма вĕрентет. Чăваш сăнавĕсене, апла, асăрхануллă сăнавсем теме пулать. Кирек мĕнле япалана та вăл тăхтавлăн та асăрхануллăн тыткаласа пăхать.

Ку ытларах чухне çемьере палăрать. Çемье сывлăшĕ хăйне майлă сывлăш. Вăл яланах ăшă, ĕнетерӳллĕ, шанчăклă, çураçтаруллă. Кунта пурте пĕрне пĕри пулăшма хатĕр. Нимшĕн те нихăçан та никама та тӳлемелле мар. Çемьен хăйĕн сăнавĕсем пур. «Çын çемьере кăна телейлĕ пулма пултарать», «Çемьере вăй», «Çемье пулсан кирек мĕнле ĕç те тытса тума пулать», теççĕ. Çемье тĕнчене хăй шайĕпе пăхса хаклать. Çемье çирĕп-тĕк, çын нимрен те хăрамасть. Ăна пулăшакан çывăх çынсем, хурăнташсем пур. Çавăнпа та, кам çакна ăнланать, хăвăрт аталанса пырать. Çемье тĕрекĕ тĕнчене тĕреклесе тăрать. Çемьесĕр ача та пулмасть. Арлă-арăмсăр çуратнă ачасене «вĕлтрен кайăк» теççĕ, хисеплемеççĕ. Чăн чăваша чăн чăваш çемьи кăна çуратса ӳстерме пултарать. Çавăнпа та çемьери хутшăнусем ку тĕнчешĕн

калама çук пĕлтерĕшлĕ. Çемьесĕр тăван çĕрщыв та çук. Мĕншĕн тесен, тĕрĕссипе, çын çут çанталăкпа хăй тăванĕ урлă çыхăнать. Енчен те мăн асаттесенчен «эсир ку таранччен мĕн туса пурăннă» тесе ыйтсан, вĕсем пире çапла хурав панă пулĕччĕç. «Эпир чăвашран чăваш çуратса пурăннă, эсир халĕ ăна та тăавваймастăр». Мĕншĕнни паллă, чăваш çуратма чăваш çемьи кирлĕ, вăл вара çукрах. Пурте урăх çын пулма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та çемье сăнавĕсем халĕ хавшаса пыраççĕ. Çемйисем те саланса кайрĕç тесен те юрать.

Тĕнчене чăваш хăйĕнпе виçет. Манран пысăкрах е пĕчĕкрех, ялтан аяккарах е кӳршĕрех тет. Унăн хăйĕн пурнăçра çапса лартнă шут шалчи пур. Шăпа шалчи теме те пулать ăна. «Шалчи тулчĕ» теççĕ вара тепĕр чухне пурнăça ăнланмасăр пурăнакан усал çын пирки. Шăпа мĕнлине сăнанисем тĕлĕнмелле тарăн та ăслă. «Шăпаран иртме çук», «Шăпа хăвăн аллунта», «Турă парсан пулать» тата ытти те. Кунта сан шăпу пурнăç юххипе пĕр килнине тата çав юхăма ху мĕнле кĕнине те уççăн палăртса хунă. Çакă пулăмра лайăх, таса, ырă çынсен пурнăçĕ хăй пĕр виçе пулса тăрать. Пуринчен малтан вăл, паллă, аттепе анне, тăвансем, каярахпа пире вĕрентекенсем тата халăх паттăрĕсем. Хамăр пурнăça эпир вĕсемпе виçетпĕр. Атте çапла калатчĕ, анне çапларах тăватчĕ тенисем нихçан та хăлхаран каймаççĕ. Апла, чăваш хăйне кăна мар пĕлет, вăл хăйшĕн пĕлтерĕшлĕ çын тĕслĕхĕпе те виçет ку тĕнчене.

## 3.2. Чăнлăх критерийĕсем

Чăвашăн чи пысăк чăнлăх критерийĕсем ĕçпе тата сăмахпа çыхăннă. Ку ĕç усăллă, тенисем каярахпа кăна кĕнĕ. Усă шыракана вăл «усси пулмасан, сухалĕ пулать» тесе каласа ăнлантарать. Чăваш чăн малтан сăмаха ĕненет. Сăмахне каласа хунă пулсан вара ун ĕç ăнать. «Сăмах патăн пулсан, сăмахна тытатăн вара», теççĕ халăхра. Сăмаха тытман çын — шанчăксăр çын. Унпа ĕç тума май çук. Кирек мĕнле ĕçе те чăваш сăмах каласа тăвать. Чăваш ĕçĕнче кирек мĕнле ĕç те сăмах каласа тунă ĕç. Чăвашшăн сăмах чăннипех те Турă вырăнĕнче çӳрет. «Лайăххипе», «тасипе», «тур пулăштăр», тесе пуçлать ĕçе чăваш. Ку хăех тĕнчене темле çынна кирлĕ пек майлаштарса ярать. Тĕнче чăннипе лайăхланать. Чăваш тĕнчене лайăх сăмах каласа лайăхлатать. Уншăн япăх çын çук. Çавăнпа та пурте çын, хăй те пуриншĕн те юравлă. Çапла сăмах кăна каласа тунă тĕнче чылай çирĕп килсе тухать, хальлĕхе тытăнса тăрать-ха.

Чăвашăн сăмахĕ ĕçпе тачă çыхăнса тăрать. Сăмахне панă пулсан ĕçне тăватех. Сăмахпа ĕç хушшинче чун вăйĕ пур, çавă йĕркелет те

тумалли ĕçе. Чунĕпе вăйсăр çын сăмахне парать, анчах та ĕçне тума вăй çитерейместь. Хальхи вăхăтра чунĕпе хавшак çынсем йышланса кайрĕç. Хăйсен сăмахĕшĕн, чысĕшĕн, тасалăхĕшĕн çирĕп тăмаççĕ. Çавна пула тата хавшакланаççĕ. Тĕнчене кăна мар, хăйсене те суяççĕ, улталаса улталанаççĕ. Халĕ «суя — çур пурнăç» тенине те илтме пулать. Сăмах хакĕ чакса кайнă пирки çын хăйшĕн çине тăма пăрахрĕ. «Юрать мана», тет. Юрамасть çав. Сăмаха тытманни тĕнчене те хавшатать. Мĕншĕн тесен тĕнче чăннипе сăмах çинче тытăнса тăрать. Тĕнчене çĕнĕрен тăвас пулсан та вĕт малтан Турă пек сăмахран пуçламалла пулать. Кунта ватăсем панă пил сăмахĕ пирки те манса каймалла мар. Пил сăмахĕсемсĕр, пил ыйтса тунă кĕлĕ сăмахĕсемсĕр те май килмест. Тен, кирек мĕнле ĕçе те «пиллеччĕр» тесе пуçламалла. Вара кунта Турă вăйĕ кăна мар, халăх вăйĕ те ĕç тума пулăшса пыма тытăнать. Тата каçару ыйтса каланă сăмахсене те манса каймалла мар. Ĕç тунă чух йăнăш тăвасси те пулать. Пĕр сăмахпа каласан, пур тĕнчепе калаçма пĕлмелле, çут çанталăкран та ыйтса илме пĕлмелле. Ĕçе вĕçлесен те тав сăмахĕ каламалла. Çапла тăвать те чăваш. Кирек мĕнле пулăмпа та малтан калаçса татăлма тăрăшать, кайран тата хăйне пулăшнăшăн тав сăмахĕ калать. Чăваш çакă тĕнчене сăмахпа чăркать тесен те тĕрĕс. Вăл сăмах ăшĕнче, сăмах вăйĕпе, сăмах чунĕпе пурăнать.

Анчах та тĕнчен ют вăйĕсем çĕмĕрсе кĕнĕ чухне пур чухне те сăмаха кăна шанса тăма май çук. Пасар тапхăрĕнче пурте пĕри тепĕрне улталасшăн. Çавăнпа та тĕнче чăнлăхне тупас тесен ĕç кăтартăвĕ çине те таянма тивет. Тĕрĕссипе, кирек мĕнле çына та вăл хăйне мĕнле тыткаланине пăхса хаклас пулать. Ку чухне вара çын мĕн шухăшлани тĕрĕсрех палăрать. Ултавлă ĕç те пулма пултарать, анчах нумай чухне ĕçе пăхса хаклани тĕрĕсрех килсе тухать. Çавăнпа та философи практикăна чи пысăк чăнлăх хаклавĕ тет. Тĕнчене халĕ ĕç тытса тăрать. Ĕç тусан тем те пулать. Ĕç сăмахпа пĕр килсен, паллă, ĕç тата пĕлтерĕшлĕ килсе тухать. Çав ĕç хăвăншăн, çемьешĕн, халăхшăн пулсан вăл вара Турă ĕçĕ пекех курăнать. Чăваш ĕçне пăхсан вара, вăл хăйĕншĕн пĕр пин çула яхăн ним те туман пек. Çав вăхăтра вăл ыттисемшĕн ĕçлесе пурăннă. Ку питĕ тĕлĕнмелле. Чăваш мĕн ĕç тунă тесе ыйтсан, тӳрех нимех те калаймăн. Вăл çут çанталăк вăйĕсемпе пĕр пулса çут çанталăкпа пĕр пулса пурăннă пулинех. Унта хăйне майлă пурнăç хутлăхĕ тунă та пуринпе çырлахса никама кансĕрлемесĕр, никамран та ним те ыйтмасăр пурăннă. Çавăнпа та вăл çукрах пек курăннă. Унăн ĕçĕ те, çут çанталăкран уйрăлса тăмансќер, нимпе те палăрман. Чăн та, вăл мĕн тунă, тейĕр. Вăл йывăç лартнă, тыр акнă,

выльăх ĕрчетнĕ... Чăваш çут çанталăк ĕçне туса пурăннă. Çавăн пек хуçалăх тупăшне вăл патшалăха парса пынă. Хăйне валли юлман та.

Çапах та кунсăр пуçне татах мĕн те пулин тунă вĕт-ха вăл, чăваш халăхĕ. Унăн чăн ĕçĕ, критерийĕ апла, чăваша хăйне тăвассипе çыхăннă. Ку ĕç те, асăрхăр, куçа пит курăнмасть. Çут çанталăк ачи пулнăскер, вăл çут çанталăка кăна мар хăй тавра çавăрттарнă, вăл хăйне те Турă пек туса пынă. Пиншер çулсем иртнĕ, мĕн чухлĕ халăх пĕтнĕ, чăваш халăхĕ вара халĕ те пур. Мĕншĕн тесен, вăл хăйне ăсталама пĕлнĕ. Кунта темле вăрттăнлăх пур. Куçа курăнмасть, терĕмĕр. Чăваш çемйи пĕртен пĕр «продукта», чăваш çыннине çуратса-туса пурăннă. Ытти ĕçсем ăна çав ĕçе тума кăна кирлĕ пулнă. Çавăнпа та вăл керменсем туса вăйне пĕтермен, никам та вăрçман. Ун пек тума ăна çут çанталăкпа пĕрле пурăнни май паман. Халăхăн пĕртен пĕр чăн ĕç юлнă. Хăйне хăй тата çут çанталăка пăхса аталанса пырасси. Çак ĕç пулнă та пирĕн мăн асаттесен чăн ĕçĕ. Апла, ĕç критерийĕ енчен пăхсан, пирĕн халăх чи кирлине туса пынă. Вăл хăйне пăрахман. Çавăнпа та чăваш халăхăн ĕçĕ, хăйне упрасси, чи пысăк чăнлăх критерийĕ пулса тăрать.

Тата мĕнле чăнлăх критерийĕсем пулма пултараççĕ халăх пурнăçĕнче тесе шутласа кайсан, тасалăх пирки калаçмасăр май килмест. Тасалăх чăваш пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Тасипе, тесе каланисем вĕсем пĕрре те ахальтен тухмаççĕ. Таса пурнăç хăйпе пĕрле ырăлăх, йĕркелĕх, тирпейлĕх, хитрелĕх илсе килет. Таса пурнăç вăй парать. Енчен те ăçтан та пулсан тасамарлăх килчĕ пулсан çын тӳрех вăйсăрланать. Ун пек чухне ун пирки вăл çылăха кĕнĕ теççĕ. Çылăхлă çын — çын мар ĕнтĕ вăл. Çавăнпа та чăваш çылăхсăр çын. Çылăха кĕнĕ çынна Турă та каçармасть, тет. Хальхи вăхăтра çылăхлисем йышланса кайрĕç. Апла, вĕсем тек чăваш мар ĕнтĕ. Вĕсем ют тĕнче чирĕпе чирленĕ çынсем. Чăн чăваш Турă сăмахлă, чăваш ĕçлĕ, таса чунлă пулса пурăнать. Кун пек çынсен йышĕ чакман-ха, çавсем тытса тăраççĕ те чăваш тĕнчине. Чăвашĕнне кăна мар, ыттисен тĕнчи те чăваш тытăнса тăнине кура тытăнса тăрать.

Тепĕр критерий те пур халăхăн. «Сывлăха пултăр!», тет чăваш. Сывлăха вăл чи хаклисен вырăнне те лартать пуль. Анчах та хăй сывлăхне вăл пĕрре те упрама пĕлмест. Апачĕ те ун япăх, чылай чухне вăл та пулин ютран кӳрсе килнĕскер. Ĕçлесе ывăнсан канма та пĕлмест. Кану культури ун йĕркеленсе çитмен. Ĕç культури тесен, хуçăличчен ĕçлет, çавна пулах сывлăхне çухатать. Пĕрех, сывлăхĕ çукрах пулнине кура, «сывлăхлă пул!» текелет. Ку критерий пирки шутламалли нумай. Мĕншĕн тесен сывлăхсăр тăрса юлнă çынсем

çамрăклах вилеççĕ. Халăх йышĕ чакса пырать. Сывлăх критерийĕ пур, анчах та сывлăх культури çук. Сăмах шайĕнче калаççĕ, ĕçне тумаççĕ. Çийĕнчен тата ют çынсенчен вĕренсе «сывлăха пултăр!» тесе эрех ĕçсе наркăмăшланаççĕ. Çавна пулах вилеççĕ. Ĕлĕкхи таса пурнăç эрех ĕçсе вараланать. Çын хăй сăнне çухатать. Ку питĕ пысăк хăрушлăх.

Сывлăх критерине хальхи йывăр пурнăçра, ман шутпа, чи мала лартмалла пулать. Унсăрăн пĕтетпĕр. Мĕн тумалла тесе ыйтсан, чăн малтан, «сывлăха пултăр!» тесе эрех ĕçме пăрахмалла пулать. Кайран вара урăхла майсемпе канмаллине шутласа кăлармалла. Ĕлĕкрех сăра ĕçсех юрласа ташланă. Пĕр-пĕринпе калаçса чуна уçнă. Çаксем кану меслечĕсем пулнă. Халĕ те çавнах тумалла. Ĕçлесе ывăнтăн пулсан, чăн малтан, урăхла ĕç тытса ту. Ĕç вĕçĕнче ĕç кăтартăвĕсемпе савăнса юрласа ташласа яр. Питĕ ывăнса çитнĕ пулсан, тутлă курăк, çырла шывĕ ĕç. Халĕ ун пек коктейлсем тума вĕренсе çитрĕç ĕнтĕ. Сывлăх мĕнне чăннипе пĕлместпĕр те, çапах та пĕрре пăхсах курăнать, сывлăх сăмахпа, ĕçпе, тасалăхпа тачă çыхăнса тăрать. Апла, сывлăхлă пулас тесен, ырă сăмахлă, тухăçлă ĕçлĕ, таса чунлă пулмалла. Вара ўткĕлетке те сывă пулать. Тĕнче те сывă тăрать.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, пурнăç критерийĕсем тем тĕрлĕ, анчах кашни халăхăн хăйĕн критерийĕсем пур. Çавсене тĕпе хурса, вĕсемпе йĕркелесе тĕрĕслесе пурăнать çын. Кашни çын, паллă, хăйĕнне шыраса тупать. Чăвашăнне кăшт тупса палăртрăмăр пек туйăнать. Вĕсен йышне хушма та, катĕртме те пулать. Асăрхарăмăр, критерисем вĕсем халăх хаклăхĕсем. Вĕсем, каларăмăр, кашни халăхăн расна, хăй пĕр пухă, хăй пĕр тăмха.

### 3.3. Туйăм-сисĕм тата шухăшлав урлă ăсланисем

«Чăваш япалана алăпа тытса пăхмасăр ĕненмест», тет. Апла, чăнлăх критерисенчен тепĕри вăл — туйăм-сисĕме ĕненни. Вăл хăй туйăмне шанать. Çавăнпа та пулĕ, ытларах чухне чĕрене ĕненсе пурăнать. Чĕре мĕн калать, çавна тăвать. Çынна кўрентерес марччĕ, тет. Малтанрах каларăмăр, чăвашăн тĕнчи туйăмлă, чунлă, тесе. Урăхлатса вара, чăваш хăй те тĕнче туйăмлă теме пулать. Тĕнче мĕн туять, чăваш та çавна туять. Сăнарласа каласан, вăл вăрман пек шăпрах, уй пек куçлăрах, шыв пек шавлăрах, хĕвел пек ăшăрах, уйăх пек çутăрах, тата ытти те. Кун пек пĕрлĕхлĕ пулни çут çанталăка ăслама урăхларах майсем тупса парать. Çут çанталăка ăслас тесен, апла, унăн хăйне кăна сăнас пулать. Эсĕ мĕн туятăн, тĕнче те çавнах туять. Пĕр пек те-ха вĕсем. Тенче мĕн туять, эсĕ те çавнах туятăн.

Çавăнпа каçару ыйтать те чăваш, мĕн те пулин ватсан-тусан. Чăваш пĕтĕм чĕрĕ чуна хĕрхенет, ан тив, тет, пурăнччĕр.

Çав вăхăтрах чăваш çук япала çинчен калаçма юратмасть. Ăна пурри (бытие) кăна интереслентерет. Юмах кĕнекисене ытла пит ăша хывмасть. Ăна пурнăç çынни теме те юрать. Пурринчен ытла, пурнăçран ĕнтĕ, урăх ăна нимех те кирлĕ мар. «Юмах ятăм юптартăм» тенисем пур-ха, анчах вăл ача-пăча валли кăна. /ссе çитĕннĕ çын юмахпа аппаланнине хисеплемест. Ку та çут çанталăкпа питĕ тачă çыхăннинчен килет. Çут çанталăк, кирек мĕн калăр та, суйма пĕлмест. Ăна хăйне те улталама май çук. Çавна пула чăваш çут çанталăк чăнлăхĕпе пурăнать, унăн шăхăшлавĕ çут çанталăк шăхăшлавĕпе пĕр килет.

Кăна пĕр тĕслĕх çирĕплетсе парать. Чăн та, енчен те вăрман сан хăлху, уй сан куçу, тусанлă çулу сан уру пулсан, мĕн-ма вара вĕсем сан пекех шутлама пултараймаççĕ. Пĕтĕм тĕнче сан кĕлеткӳн тăсăмĕ вĕт. Çын пĕтĕм кĕлеткепе шухăшлать теççĕ. Енчен те тĕнчепе çын пĕр кĕлеткеллĕ-тĕк, апла, çут çанталăк, ахăртнех, çын урлă шутлать. Çын ăса, чăн малтан, çут çанталăк урлă кĕрет. Эпир ăна ача ăсĕ пек ăнланатпăр. Ача ăслă тени, апла, çут çанталăк ăслă тенине пĕлтерет. Шел пулин те, кайран эпир çав туйăм-сисĕм çинче никĕсленнĕ ăса çухататпăр.

Шухăшлав çине таянса ăсланисем те расна. Чăваш, чăн малтан, ваттисем мĕн калани çине таянать. Унăн ытла пит сăлтавласа калаçнисем çук. Аттесем çапла каланă, тет те — пулчĕ те. Апла, ун шухăшлавĕ темле абсолют çине таянать. Турă каланисем пек те мар вăл. Ман шутпа, вĕсем халăх каланисем. Каларăмăр, ĕлĕк мĕн пулнисене чăваш пуçне тăмха пек çапса хунă. Çавăнпа та унăн шухăшлавне тăмхаллă шухăшлав теме пулать. Тĕслĕхрен, «тĕнче хĕсĕр мар», «пурнăç кустăрма пекех, ăçталла çавăратăн, çавăнталла кусать», «пирĕншĕн ик айкки те тăвайкки» тата ытти те. Каларăмăр, чăваш ăстăнĕ ваттисен сăмахĕнче тăмха пек çапăнса калăпланса юлнă. Чăваш, пĕтĕмлетсе калама пулать, ваттисем каланă сăмах шайĕнче ваттисем çине таянса шухăшлать.

Çĕнĕлле мĕн ăсланисем курăнсах каймаççĕ. Ку, паллă, хальхи вăхăтри наука аталаннипе, тата унсăр пуçне чăваш чĕлхи наука чĕлхине аталантарма пăрахнипе те çыхăннă пулас. Хăй вăхăтĕнче чăваш пур пулăмсене те ят хурса тухнă, япаласен пур ячĕсем те расна, хăйне майлă. Унăн тĕнче курăмĕ хăй тĕнчине тытса пыма юрăхлă пулнă. Анчах та халĕ тĕнче улшăннă пирки ĕлĕкхи куçпа пăхма май килмест. Куçа улăштармах тивет. Чăваша урăхла, хальхи вăхăта

тивĕçтерекен тĕнче курăм кирлĕ. Апла, ун тĕнчене урăхла, тĕрĕсрех те курма çĕнĕрен вĕренмелле. Кунта хальхи вăхăтри наука курăмĕ те хăй вырăнне йышăнма пултарать. Чăвашăн хăйĕн расна куçĕ те уçăлса çитме пултарать. Мĕншĕн тесен, паллă, кашни чĕрĕ чун хăйĕн тĕнчине хăй тăвать. Халăх та, енчен те эпир ăна пĕр организм терĕмĕр пулсан, хăйĕн пурнăç вырăнне хăех ăсласа парать. Çав ăслав пуçланнă тесен те юрать.

Чăваш ачисем халĕ тин пурте тенĕ пекех аслă пĕлӳ илнĕ, вĕсен наукăллă куç курăмĕ пур. çав вăхăтрах вĕсем чăваш пулма пăрахман. Çавăнпа та чăвашăн наукăллă хăйне майлă курав пуçланать. Кунта çын хăй интересĕсене мала хунине те шута илмелле. Çут çанталăк хăй мĕн шутланине те ăнланмалла. Вара тин çĕнĕ тĕнче ăславĕ аталанса каять. Çакă япаласем çын е халăх хăй çинчен шутлама пуçласан (рефлекси) кăна пулма пултараççĕ. Хăвăн çинчен шутлама кăна пуçла, пулчĕ те — çĕнĕ тĕнче курăмĕ çуралчĕ. Мĕншĕн тесен сан куç уçăлчĕ, эсĕ хăвна кăна мар, тĕнчене те урăхла, хăвна кирлĕ пек куртăн. Çавăн пек ăсланисенчен пĕр шухăшлавĕ ĕнтĕ вăл хамăр халăха сасартăк тенĕ пек донор вырăнăнче курни. Эпир çураçтаруллă та пĕр çавра пĕрлĕх. Хамăра хамăр туйăм-сисĕм. шухăшлав урлă ăсласа пынăçем, çĕнĕ тĕнче çуралать. Çав тĕнче — чăваш халăхĕ. Эпир ăна нихăçан та Турă вырăнне хурса сăнаса пăхман. Пăхрăмăр та, вăл иккен чăваша упраса çуратса пурăнакан пĕр организм пулнине курах кайрăмăр. Халăх вăл хăй — чăн Турă.

Чăвашăн ваттисен сăмахĕ урлă кăна мар, каларăмăр, ĕçлев урлă ăслани те пур. Çын хăй ĕçне кура ăсланса пырать. Кăткăс ĕç çынна кăткăслатать, шухăшлама вĕрентет. Ансат ĕç ансатлатать. Çавнăпа та вара хăшĕ-пĕрисем: ку ĕç йăлăхтарсах çитерчĕ, теççĕ. Ĕçпе ăслани уйрăлми çыхăнура тăраççĕ. Ĕçе малтанрах тата ĕç вăхăтĕнчех ăсламасăр пулмасть. Ăслă шухăш та ĕç вăхăтĕнче кăна çуралать. Чăваш çакна питĕ лайăх пĕлет, çавăнпа та хăй ăсне ĕçне туса пĕтермесĕр ĕненмест. Туса пĕтерсен вара, ăт! мĕнле, тет. Ĕç ун ăсне ал-ура урлă çирĕплетет. Ал-ури пырать вара кун, теççĕ ун пек чухне. Ал-ура çапла хăйсем тĕллĕн тенĕ пек ăсланса пынине ĕненме те май çук пек. Анчах та кам ĕçлесе курнă, çав çирĕплетсех калама пултарать. Ĕçе хăнăхса çитнĕ ал-ура хăех пĕлет.

Çакăн пек пĕтĕмлетӳсем чăвашăн хăйĕн расна шухăшлав, расна кăмăл-туйăм пуррине кăтартса параççĕ. Паллах, ку вăл халăх ытти мелсемпе усă курмасть тенине пĕлтермест. Ку вăл халăхăн хăйне уйрăмлăхне палăртас тени кăна. Ăслав процесĕсем пур çыннăн та пĕр пекех, анчах чăвашăн, ытти çынсен та çавах пулĕ, хăйĕн уйрăмлăхĕсем

пур. Вăл çут çанталăк пек, ваттисен сăмахĕсем çине таянса, ĕç урлă шухăшлама пĕлет. Çавăнпа та ун ăславĕсем те урăхла килсе тухаççĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен çав ăслава эпир тăмхаллă шухăшлав терĕмĕр.

Ыйтусем:

1. Халăх çут çанталăка тата тĕнчене мĕнле сăнаса ăслать.
2. Чăваш сăнавĕсем мĕн çине таянаççĕ.
3. Мĕнле чăнлăх критерийĕсем пур.
4. Туйăм-сисĕм тата шухăшлав урлă ăсланисен пĕрлĕхне мĕн урлă кăтартса пама пулать.

## IV глава. Чăваш ĕçлевĕ

### 4.1. Ĕç çаврăнăшĕ

Чăваш мĕн ĕçлесе пурăнать тесен, тӳрех нимех те калаймăн. Ытти халăхсем пекех чăваш халăхĕ те пурăнмалăх мĕн кирлине тăвать. Апат çимелĕх, тăхăнмалăх тата машин таврашĕ те пур унăн. Анчах кунта сăмах чăваш халăх уйрăмлăхĕсем пирки пырать. Пирĕн халăхра хăйне кăна майлă мĕнле ĕçлев пур. Ман шутпа, ыттисенчен уйăрăлса тăракан пĕртен пĕр ĕç, чăваш çуратас ĕç пур. Ытти халăхсен çак ĕç мала тухса тăмасть пулмалла. Вĕсем çын çуратаççĕ. Чăваш вара чăваш çуратасшăн. Çав тĕллевпе йĕркелет те хăйĕн çемйине. Халăхăн хăйĕн те çав тĕллевех. Анчах пур чухне ку тĕллев пурнăçланмасть. Çавăнпа та ку ыйту чăваш философийĕн тĕп ыйтăвĕ пулса тăрать. Çемье тата халăх чăваш çуратас тесе йĕркеленнĕ вăйсем. Ку вăл питĕ вăрттăн пулăм. Ăна çын халĕ те ăнланса илеймен. Каларăмăр, чăваш пиншер çулсем мĕн туса пурăннă тесе ыйтсан, нумайĕшĕ унăн ним те çук тесе хуравлĕ. Чăн та, нимле чаплă кермен, палăк та курăнмасть. Ним те çук теме те пулать. Анчах та ку йăнăш курав. Чăваш ĕмĕрсем тăршшипе чăваш çуратса пурăннă. Çакă унăн тĕп ĕçĕ пулнă. Çавна пула, çав ĕç пурнăçланнипе пурăнатпăр та ĕнтĕ эпир. Ку ĕç пулман пулсан эпир ытти пин-пин халăх пек пĕтнĕ пулăттăмăр. Апла, çемье те, халăх та турă вырăнĕнче пулса, чăваша çĕнĕрен те çĕнĕрен çуратсах тăнă, çуратаççĕ те. Паллă, çав турăсем халĕ питĕ йăшнă, шуйттан текенсем вĕсене пĕтĕм вăйран çĕмĕрес тесе тăрăшаççĕ, чăваш культурине тума памаççĕ. Çавăнпа та пулĕ чăваш культури вăл урăхла культура, вăл чĕрĕ культура, вилĕ япаласенче палăрмасть. Калăпăр, çурчĕ те ун чаплах мар, тупри те нумай мар, анчах хăй вара, хуçи ĕнтĕ,

калма çук стайлă çын. Ун пек çынсем ялта халĕ те пур-ха. Вĕсем пуянлăх пирки шутламаççĕ. Тĕлĕнмелле те, виличчен мĕнле те пулин çынсене пулăшса хăварасчĕ, теççĕ. Çынран та çын тесе калас килет ун пек çынсем пирки. Çакă тĕслĕх ĕнентĕрсе çирĕплетсе парать те чăвашăн культури çынсенче хăйсенче пулнине. Пурнăçăн пĕтĕм пуянлăхĕ çынра хăйĕнче. Çавна кура мар-и, тупри туртса илмелĕх çуккă-ха та, çыннисене хăйсене пĕтерме тытăнчĕç. Çын чи пысăк тупра, чĕрĕ тупра...

Анчах Турă хăй халăхне сыхлать. Пирĕн хальлĕхе таса та ырă çемьесем пĕтмен-ха. Вĕсем пулсан стайлă чăваш тĕнчене çăлма килсех тăрĕ. Малтанрах кун пирки те шухăшланăччĕ: чăваш тĕнчене çăлма килет. Чăвашăн тепĕр тĕп ĕçĕ вăл — тĕнчене çăласси. Çавна пула пуль вăл чӳклĕх халăх. Унăн ирĕксĕрех, тĕнчене ху çине илтĕн пулсан, Христос пек пĕтмелле пулать пек туйăнать. Çак çул-йĕр çине ӳкнĕ халăх донорланать, пурне те пулăшма тăрăшать, хăй шучĕпе, паллах. Ку ĕçе тĕнче ăнланмасть, кулать, мĕскĕн тет, Ара, хальхи вăхăтри çын вăл çапăçса çын туприне туртса илме юрататать. Уншăн пулсан кĕрешсе, çаратса пултăр. Çураçтару туйăмĕсем хальлĕхе ниçта та вăй илмен. Чăваш вара, Турă хушнипе пуль, хăйне хĕрхенме пĕлмест. Çĕнĕрен те çĕнĕ çынсем пĕтĕм тĕнчипе ĕçлесе параççĕ. Кăна ăнланса илме йывăр, тен, май та çук. çапах та, кирек мĕн каласан та, чăваш, чăн та, пурне те пулăшма тăрăшать. Ун çинче тĕнче, вăл хăй пĕр апологет, титан. Çавăнпа та, каларăмăр, ăна пĕтĕм тĕнче йышăнать.

Тепĕр уйрăмлăх та пур. Чăваш ĕçлевĕ çут çанталăк çаврăнăшĕпе пĕр килет. Тĕрĕссипе вăл çут çанталăка хăй тавра çавăракан çын. Ăçта чăваш пурăнать, çавăнта вăл хăйне майлă экохутлăх (экологическая ниша) туса хунă. Ун тавра çаврăнакан экосистема хальлĕхе чи йĕркеллисенчен пĕри тесе калас килет. Чăн та, йĕри-тавралла çаврăнса пăхсан, пур çĕрте те таса юханшывлă пĕвесем, пĕчĕк катасемпе вăрмансем, уй-хирсем, шыв çумĕнчи ялсене куратăн. Хитре ландшафт куçа ывăнтармасть, халăха ĕçлемелĕх те пурăнмалăх вăй парса тăрать. Чăн та, кам çут çанталăк çаврăнăшне çăй ĕçĕпе пĕр тунă, çав тулăхлă та телейлĕ пурăнать. Çавăн пек çемьесенчен çуралса тухаççĕ те ĕнтĕ чăн чăвашсем. Вĕсене ямăт пурнăçпа илĕртеймĕн. Вĕсем таса та ырă. Паллах, халĕ урăхла çемьесем те йышланчĕç. Тĕслĕхрен, вĕсем ĕне-сурăх тытма пăрахрĕç. çавна пула вĕсен тĕнче çаврăнăшĕ талчĕ. Çĕр-ана чухăнланчĕ, чун иксĕлчĕ. Ун пек чăваш, чăн та, çын хыççăн ямăт пурнăç шыраса кайнă пек курăнать. Апачĕ те ун ют апат. Апла, вăл ют çĕр-ана «çисе» пурăнать, ун ӳчĕ ютланать, урăхланать. Калăпăр, Канада çăкăрне çисе пурăнакан тек чăваш пулаймасть ĕнтĕ вăл. Чăваш

çĕрне «çимест-ха» та. Чăваш çăкăрне çут çанталăк çаврăнăшĕсене тĕрĕс йĕркелесе янисем кăна çиме пултараççĕ. Кунта ăнлантарса пани те кирлĕ пулĕ. Ана тавраш\u0115 вăл çын кĕлеткиех, çын ӳчĕ çав ана-тăпраран тăрать. Эпир ĕмĕр тăршшипе çав ана çимĕçне çисе ӳтленетпĕр. Мĕн çиетпĕр, çав ана пек пулатпăр. Тĕрĕссипе, пире ана кашни кун çуратса тăрать. Хырăм выçсанах эпир çав тăпраран шăтса тухнă çимĕçсене çиетпĕр, вăй илетпĕр. Енчен те эсĕ урăх çимĕçе çиме пуçларăн-тăк, калăпăр, банан юрататăн, апла, эсĕ ху сисмесĕрех урăхланатăн, Египет çынни пулса каятăн. Хăвăн тăван çĕре юратма пăрахатăн. Сана вĕт халь урăх çĕр тăрантать. Мĕн тума кирлĕ тет ял çĕрĕ. Çавăнпа мар-и ял халăхĕ хăйĕн çĕрне «укçа парсан та кирлĕ мар», тет. Ара, пенси укçипе вăл ютран кӳрсе килнĕ çăкăр çисе пурăнать вĕт-ха.

Апла, пĕтĕмлетсе çапла калама пулать, чăваш мăн асаттесем пуçланă авалхи ĕçех пĕр улăштармасăр туса пырать. Ку ĕç вăл, каларăмăр, чăваш çуратас ĕç, Турă ĕçĕ. Кăна ăнланса илни çеç çителĕксĕр, кунта вăй хурса ĕçлемелле. Чăн малтан, чăваш çемйине çакă кăтартнă тĕллев çине таянса йĕркелемелле. Халĕ кашни çемье хăйĕн ачинчен мĕнле те пулин специалист хатĕрлеме тăрăшать. Вĕсене ялтан хулана пил парса ăсатса ярать. Çав специалист вара хулара пĕтет, çын пулса çитеймест. Мĕншĕн тесен, чăвашшăн çын пулас тени вăл, чăваш çуратасси. Хулара вăл ĕçе тума май килмест. Вĕрентӳ шкулĕсем те специалист хатĕрлес тесе ĕçлеççĕ. Вĕсен тĕллевĕ чăваш çуратас тĕллевпе пĕрре те çыхăнман. Пачах урăхла, вăл тĕллеве вĕсем пĕтĕм вăйран пĕтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем предмета тата ют чĕлхепе кăна вĕрентеççĕ.

Çак шухăша тĕпе хурсан, апла, чăвашăн тепĕр тĕп ĕçĕ вăл — чăваш çуратакан çемьене йĕркелесси. Çемье йĕркелес ĕç хальлĕхе ниçта та палăрмасть. Пачах урăхла, пур-çук çемьесене халĕ пĕтĕм вăйран салатаççĕ. Кирек мĕнле каласан та, чăваш çемйин, малалла та тĕнче вăйĕ пулас тесен, асттесен çемйи патнех таврăнма тивет. Патриархаллă çемье теççĕ ăна. Çавă çемье кăна çут çанталăк çаврипе пĕр килет, çавă çемье кăна халăх ăсне сыпăкран сыпăка пĕр çухатмасăр çамрăк ăрăва парса пырать. Çавăнпа ун пек çемьене турăллă çемье теме пулать. Хальхи вăхăтри уйрăмшар пурăнакан çемьесем вĕсем халь тин шуйттан аллинче. Вĕсем хăйсене кăна мар, ачисене те пĕтереççĕ. Ку пулăм куç умĕнче. Анчах ку та питĕ вăрттăн пулăм. Хальхи вăхăтри искусство пире пурнăç никĕсĕнче юрату курма вĕрентнĕ. пурте юратуна кĕтеççĕ, шанаççĕ, шыраççĕ, уншăн макăраççĕ. Юрату тени вăл унпа киленсе пурăнма килмест çав, ăна Турă пире ача

çуратма, хăвăн ăрăвна тăсма кăна ярса парать. Ачасем пулчĕç-тĕк юрату çухалнă пек пулать, вăл ачасем çине куçать. «Çухалнă» юратăва шыракансем пĕр-пĕрне айăплама, ăна вăйпа тăпăлтарма тытăнаççĕ. Анчах та юрату никама та пăхăнмасть. Вăл халь тин хăвăрăн ачăрсене юратсан кăна пур. Ачасем вара пирĕн, хăвăр пĕлетĕр, ют çын аллинче. Çуралсанах вĕсем ача çуратакан пульницăра темле акушеркăна кураççĕ те, акă ку пирĕн анне теççĕ. Унтан садикре воспитательница, каярахпа шкулти учительница тата урамри тĕрлĕ хĕрарăмсем унăн амăшĕсем пулса тăраççĕ. Чăн амăшĕ вара ачине юратма кăна мар, унпа мĕн пулса иртнине те сиссе юлаймасть. Анчах çав вăхăтрах амăшĕн питĕ юратас килет, çавăнпа та вăл юрату шыраса упăшкинчен уйăрăлса каять, çемье саланать. Çак пулăм ашшĕне те тӳрремĕнех пырса тивет. Çавăнпа та хальхи çемьесен ачи те çук, юратвĕ те çук, ашшĕпе амăшĕ те çук. Кун пек ан пултăр тесен, ачасенчен, ватăсенчен, халăхран уйрăлма юрамасть. Çамрăксем хăйсем тĕллĕн пурăнаççĕ пулсан та, стена çинчен хăть ашшĕ-амĕшĕн сăнĕсем вĕсен пурнăçне сăнаса çакăнса тăччĕр. Ку та вăйлă пулăм. Ваттисем яланах пирĕнпе пĕрле пулсан, пурнăç çулĕ аташса каймĕ. Эпир авалхи пек шухăшлăпăр, авалхи пек ĕçлĕпĕр, авалхи пек пурăнăпăр. Пирĕн вара, чăнласах хамăр тăмхаллă тĕнче пулĕ.

Тепĕр енчен пăхсан, чăваш ĕçĕ телейпе çыхăннă. ĕçлевлĕ чăваш чи телейлĕ çын. Ĕç çук пулсан вăл тӳрех пĕтет. Ĕç ăнса пырсан вара унран ырă, çутă, вăйлă, телейлĕ çын та çук. Ĕççĕр ларакан çынна чăваш хисеплемест. «Ахаль лариччен кĕрĕк аркине те пулин йăвала», тет. Телейĕ ăçтан тухать тесе ыйтсан, хуравĕ питĕ ансат. Телей ĕç кăтартăвĕсемпе çыхăннă. Енчен те тулăхлă тыр-пул туса илтĕн пулсан, пахча-çимĕç йăтăнса пулчĕ-тĕк, ĕç çыннин чунĕ савăнать, унăн татах ĕçлес килет, вăй хутшăнать. Палăртнă тĕллев пурнăçланнă вăхăтра çын калама çук телейлĕ. Анчах çак телей, ĕç телейĕ ĕнтĕ, вăхăтлăха кăна. Тĕллевпе ĕç кăтартăвĕ пĕр пулнă самантра тепĕр тĕллев сиксе тухать. Халь тин ĕнтĕ ăна пурнăçлама тивет. Ăна пурнăçланă чухне тем тĕрлĕ асап килет, канăççăрлăх, ывăнни те пулать. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш хăй пурнăçĕ çинчен эпир «савăнăçпа хурлăх хушшинче пурăнатпăр» тесе каланă, апла, кунта хурлăхпа савăнăç çаврăнăшĕ çинчен те калаçма пулать.

Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, чăваш ĕç çаврăнăшĕ çут çанталăк çаврипе пĕр пулса нумай сыпăклă çемьере пĕр вĕçĕмсĕр чăваш çуратса пырассипе çыхăннă. Чăвашăн кирек хăçан та çавра çут çанталăк, çавра ĕç, çавра пурнăç, çавра телей, çавра тĕнче пур.

## 4.2. Пурнӑҫа кирлӗ япаласем туни.

Япала тӗнчене мӗнле килни пирки те шутласа илмелле пуль. Япала «ҫуратӑвӗн» хӑйӗн йӗрки (логики) пур. Чӑн малтан, эпир мӗн тумалли пирки шутласа хуратпӑр, чӑн малтан идея кирлӗ. Унтан ҫав пулас япалан сӑнарне куҫ умне кӑларас пулать, ӑна уҫҫӑн тата кашни пайне чӑнласа пур пек курмалла. Вара тин, малтанрах палӑртнӑ ҫавра меслетсемпе усӑ курса палӑртнӑ тӗллеве пурнӑҫлама тытӑнмалла. Ку, пӗрре пӑхсан, ансат та пек. Анчах, ӑҫтан килет-ха шухӑшӗ, мӗншӗн курмастпӑр эпир пуласлӑха, тата ӗҫлеме те пӗлмелле вӗт-ха. Тӑнласа пӑхсан, эпир мӗн тӑвас тенисем те уҫӑмлӑ мар. Калӑпӑр, ҫут ҫанталӑк ҫаврӑнӑшне тумалла, патриархаллӑ ҫемье ҫавӑрмалла, ял халӑхне турӑ пек курса тӑмалла терӗмӗр. Ку япаласене тума пӗрре те ҫӑмӑл мар. Чӑвашне вара хӑйне мӗнле ӑсталамалла тет. Кӑна никам та пӗлмест. Чӑн чӑваш пулас тени, тен, ҫын пулса ҫитес тени кӑна.

Чӑваш хӑйне кирлӗ япала тунӑ чухне япалана мӗнле тумаллине вӗҫне ҫитиччен пӗлмест. Тунӑ чухне курӑнать, тет. Мӗнле килсе тухасси хальлӗхе паллӑ мар, тет. Ку ӗнтӗ ӗҫлеве хӑйне шаннине пӗлтерет. Ӗҫлев хӑех ӑслать. Чӑн та, кирек мӗнле шутласа хунӑ пултӑр, ӗҫленӗҫемӗн, ҫав шутлав улшӑнать. Вӑл ӗҫпе тӗрӗсленсе калӑпланса пырать. Ку вӑл идея та, япали хӑй те пӗр ӗҫре тӗвӗленнине пӗлтерет. Ӗҫ, апла, шухӑшласа хунинчен те, пулас япалинчен те ирттерет. Мӗншӗн тесен вӗсем ӗҫ вӑхӑтӗнче пуринчен ытла уҫҫӑн палӑраҫҫӗ. Хирӗҫлесе каласан, малтанласа питӗ тӗрӗс тесе шутласа хуни те, вӗҫне ҫитерсен ҫапла япала килсе тухмалла тени те нимех те пӗлтермеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та чӑваш ӗҫне хӑйӗнчен ытларах шанать. «Тур парсан пулать», тет. Тур панине ӗнтӗ ӑна ӗҫ тенӗ пек ӑнланмалла. Ҫапла килсе тухать. Ӗҫ хӑех кӑтартать. Ку, паллӑ, ӗҫе пӗр шутламасӑр пуҫламалла тенине пӗлтермест. Ку кирек мӗнле япала тӑвасси те чӗрӗ ӗҫлев пулнине кӑна пӗлтерет. Пурнӑҫӗ хӑй те вӑл чӗрӗ пулни, хӑй чӗрӗлӗх.

Ҫакӑ ӑслава тӗпе хурсан, чӑваш ҫемйипе халӑхӗ епле йӗркеленсе аталанса кайнине тӗплӗнрех шутласа илме пулать. Вӗсем чӗрӗ ӗҫре йӗркеленнӗ, чӗрӗ культура, терӗмӗр. Чӑваш ҫынни хӑйӗн ӗҫӗнче вӗсене пӗр вӗҫӗмсӗр тӑвать. Тусан пулать, теҫҫӗ. Ҫапла чӗрӗ ӗҫ хӑй тӗллӗнех темле ҫемье майлӑ, халӑх майлӑ тӗвӗленет. Паллах, ӗҫе тӗвӗлесе тӑракан тӗллев кунта пурах. Вӑл, каларӑмӑр, чӑваша татах та ҫуратасси. Ҫавна курса тӑрса хурӑмланать тӗнче.

Пурнӑҫа хӑйне мӗнле туни те уҫӑмланать пек. Пурнӑҫ вӑл пӗр вӗҫӗмсӗр чӗрӗ хутшӑну. Пурнӑҫа малтанласа ҫапла тӑвам-ха тесе

шутласа хуни мар ку. Шывра ишме вĕренес тесен шыва сик тенĕ пекрех. Çын нихăçан та ниме те вĕçне çититчен пĕлмест. Çавăнпа пурнăç юхăмне хăйне шанать, çав юхăма сикет, чиперех ишсе тухать. Мĕншĕн тесен чăваш пурнăçран хăрамасть. Тен, çавăнпа чăваш пурнăçĕ çут çанталăк пулăмĕсене (стихийăсене) çывăх. Ятарласа шутласа туман-ха та вĕсене, çавăнпа та вĕсем пурнăç саккунĕсене пăхăнса тунăскерсем, çут çанталăкăнни пекех килсе тухнă. Акă ăçтан килет чăваш хăйне чĕлхеçĕ, вĕрӳçĕ пек тыткалани. Мĕн пулассине тĕп-тĕрĕс пĕлмен пирки вăл пĕрмаях ытти пулăмсемпе хутшăнать, калаçать, ыйтать, хирĕçлет. Вăл диалогра пурăнать. Апла, чăваш япалисене диалог хăй тăвать тесен те тĕрĕс. Çав диалог пуринчен ытла ĕçре палăрать. Ĕç пурне те пĕтĕçтерет. Ĕç вăл «философи чулĕ» теме те пулать. Ĕçне пĕлсен ху та Турă пек курăнан. Тăвать ку, теççĕ. Чăваш уйрăмлăхĕ çакăнта, вăл ĕç аллинче.

Чăваш çакă чĕрĕ хутшăнура çут çанталăкне хăйне те тăвать терĕмĕр. Тĕрĕссипе, ун-кун çаврăнкаласа пăхсан, чăваш мĕн туни курăнсах та каймасть. Мĕншĕн тесен вăл тунă япаласем чĕрĕ, çут çанталăкран пит уйрăлса тăмаççĕ. Вĕсен йĕрки çут çанталăк йĕркине çывăх. Ун пеккине халĕ экологи терминпа хакланççĕ. Урăхла каласан, чăваш пур япалана та чĕрĕ çут çанталăк мелĕпе унран уйрăлми хурăмласа тăвасшăн. Пĕтĕмпех пулса пĕтмесен те, çапах та сăнасарах пăхсан, тӳрех курăнать. Ун хуçалăхĕ хăй пĕр çут çанталăк çаврăнăшĕ. Ялĕсем вăрман пек, уйăсем çаран пек. Çавна пула мар-и, хальхи вăхăтра уйсем пит çаранланса кайрĕç. Çĕр вĕт вăл хăй те тепĕр хут çĕнелесшĕн. Тахçан çĕнĕ çĕр пулнăскер, халь тин канса илесшĕн. Ку çут çанталăк саккунĕ вăй илнине пĕлтермест-и. Эпир ăна-кăна чухламасăр, ана сухаламасăр юлнă тесе, вăрçкалатпăр. Ĕç тарăнрах шайра пурнăçланса пымасть-и кунта. Каларăмăр, ĕç пуринчен те аслăрах, хăех йĕркелет. Ĕçе тепĕр чух пĕр ăнланса çитмесĕрех парăнма пĕлес пулать. Пурнăç вăл кирек хăçан та шантарать, вăл ĕç урлă хăйĕнпе çыхăнтарать. Ĕçлесен пурте пулать.

Кунта кашни каласа тухнă ĕçре хăйне майлă тĕслĕх çине таянни кирлĕ пуль. Чăваш аваллăх шухăшлавлă кăна мар, ун тĕнчи тăмха çапнă тĕнче, терĕмĕр. Çавăнпа та вăл кирек мĕнле ĕçре те ырă тĕслĕхсем çине таянать. Унăн хăйĕн çул юпписем пур. Ăçталла каймаллине ăна ырă çынсем тахçанах каласа палăртса хунă. Акă, тĕслĕхрен, чăваш ачи хăй пурнăçне ашшĕпе амăшне калăпласа тăвать. Ялне те унне ырă çын калăплать. Вăл ял пуçĕ, е ăна çăва пуçĕ теме те пулать. Халăх пуçĕ те пур. Вăл, Улăп майлăскер, пĕтĕм чăваш тĕнчине хăй йăтса йĕркелесе тăрать. Апла, чăваш япалисем пурте тенĕ пекех

ырӑ та чӗрӗ тӗслӗхсем ҫинче таянса упранса ҫуралса пурӑнаҫҫӗ. Хальхи пурнӑҫра пушшех те. Халӗ анӑҫран пач урӑх тӗслӗхсем килчӗҫ. Ҫав тӗслӗхсем хыҫҫӑн кайса чӑваш халӗ хӑй пурнӑҫӗнче пачах та кирлӗ мар япаласем ӑсталама, усӑ курма пуҫларӗ. Ҫавӑ тӗслӗхсем ӑна питӗ астараҫҫӗ. Мӗншӗнне каларӑмӑр, ку вӑл ун авалхи ырӑ тӗслӗхӗсемпе ҫыхӑннӑ. Калӑпӑр, Улӑп тунӑ ҫӗр ӗҫ вырӑнне ун пуҫне урӑх тӗслӗх кӗрсе вырнаҫса ларнӑ. Ун-мӗн укҫа тума вӗренмелле. Пасар тапхӗрӗ ҫитнӗ-мӗн. Укҫи вара чӑвашра мар, вырӑсра та мар. Укҫи таҫта, ӑна Улӑп пек ӗҫлесе тупаймӑн. Укҫа тени текех чӑваш аллинче мар. Ҫавӑнпа та ку ырӑ тӗслӗх мар, ку пирӗн ватӑсен тӗслӗхӗ те мар. Пирӗн хамӑрӑн авалхи ырӑ тӗслӗхсем ҫинех таянса ӗҫлесе пурӑнма тивет, ҫавна манса каяс марччӗ.

Пӗр пӗтӗмлетсе каласан, чӑваш япалисем хӑйсем тӗллӗнех пулаҫҫӗ пек килсе тухать. Мӗншӗн тесен вӑл пурнӑҫ саккунне пӑхӑнса пурӑнать. Пурнӑҫӗ вара ҫын хутшӑнӑвӗнче, чӗрӗ ӗҫре пӗтӗҫет. Чӑваш пек пурнӑҫ ытамне кӗрсе ӳксе, ун юхӑмне парӑнса пурӑнма пӗлекенсем сахалтарах пуль. Ҫав вӑхӑтрах вӑл пӗрре те васкамасть. Мӗн-ма васкамалла тет. Тӗнче ӑна кирлӗ ҫӗре хӑех илсе ҫитерет. Чӑваш таҫтан малалла мӗн пулассине пӗлсе тӑрать пуль. Е сисӗмӗ-туйӑмӗ пысӑк пулнӑран, ҫут ҫанталӑкран уйрӑлман пирки, ун пулӑмӗсемпе пӗрле пулать, шанать, ҫитес тенӗ ҫӗре тӗнчепе хӑйӗнпе пӗрле ҫитсе ӳкет. Шӑпана парӑнать тени мар ку. Ку вӑл тӗнче саккунне парӑнни, тӗнчере хӑйне курни, тӗнчене шанни те. Ҫук, тӗнчене хӑйне кирлӗ пек ҫавӑрмас вӑл. Вӑл хӑй тӗнчене йӑлт парӑнса, ун пекрех пулса кайса тӗнчеленет, ӑна чунлатать. Тен, ҫав вӑхӑтра вӑйӗ пысӑках мар пирки пӗтет те, тен.

### 4.3. Ҫут ҫанталӑка чунлатни

Ҫын ҫут ҫанталӑкпа пӗр вӗҫӗмсӗр хутшӑнать. Тӗнче ҫав хутшӑнун пӗрлӗхӗ пулса тӑрать. Хутшӑну икӗ енлӗ пулӑм. Пӗр енчен ҫын ҫут ҫанталӑка чунлатать, ӑна хӑйӗн пек курать, хӑйӗн пахалӑхӗсене ҫут ҫанталӑк ҫине ярать. Тепӗр енчен ҫав хутшӑнурах хӑйне япалантарать. Урӑхла каласан япалан пахалӑхӗсем ҫына куҫаҫҫӗ, ӑна япала пек пулма ыйтаҫҫӗ. Ҫак икӗ енлӗ процесс пӗрлӗхӗ субъектпа объект хутшӑнӑвӗ пек кӑна мар, вӑл субъектпа субъект хутшӑнӑвӗ пек те курӑнать. Чӑн та, кирек мӗнле хутшӑнура та япалан ҫынна кирлӗ пахалӑхӗ мала тухать. Кашни япалана эпир хамӑра кирлӗ пек хаклатпӑр. Енчен те хытӑ япалапа ӗҫлетпӗр пулсан, ӑна алла илме ытларах вӑй хума тивет, хамӑрӑн та ҫирӗпрех пулмалла. Калӑпӑр,

машинăпа ĕçлекенĕн ал-ури тимĕр пекех хытса каять, чун-чĕрипе те вăл хытăрах. Çемçе, ачаш пахалăхлă япалапа ĕçлекен вара çемçелсех каять. Тĕслĕхрен, сĕрме купăса хыттăн тыткалаймăн. Инструментăн черчен сассисем чуна чечеклентереççĕ. Чĕрĕ япаласем пирки калама та кирлĕ мар. Кирек мĕнле йывăç-курăк е выльăх-чĕрлĕх çынна ырăлăх, чĕрĕлĕх кӳрет. Калăпăр, вăрманта пурăнакан çын вăрманлансах каять, çеçенхирте пурăнакан çеçенхирленет. çынпа çут çанталăк çапла пĕрлешсех каяççĕ, пĕр пĕринчен уйăрăлми пĕрлĕх пулса тăраççĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, çын япалана кăна мар, япала та çынна йĕркелет. Çын япала пахалăхлă пулса тăрать.

Тĕнчене чунлатни вара кашни пулăмра курăнать. Кунта нимле вăрттăнлăх та çук. Çынра мĕн пурри, çут çанталăкра та пур. Мĕншĕн тесен çын вăл уçлăх аталанăвĕн чăн кăтартăвĕ. Антроплă принципа пăхăнсан, пĕтĕм тĕнче çын килтĕр, çын пултăр тесе аталанать. Тĕнче хăйне çын урлă ăнланма тăрăшать. çавăнпа та çут çанталăка чун кĕртни, çын урлă ĕнтĕ, тĕшмĕшлĕх мар, вăл тĕнче аталанăвĕн саккунĕ. Çын аталаннăçем тĕнче те чунлансах пырать. Чăваш çакна мĕн авалтан пĕлсе-курса тăрать. Çавăнпа та ун, каларăмăр, хĕвелĕ те пăхать, çилĕ те вĕрет, вăрманĕ те итлет, уйĕ те курать, тата ытти те. Чăвашшăн пĕтĕм тĕнче чунлă (антропоморфизм). Тĕнчене кун пек курни пурăнма пулăшать, çын кашни пулăма тарăнрах ăнланать. Ку çеç те мар, вăл хăй те çынланать, хăйне Турă пек курать. Акă, сăмахран, камăн чунне савăнтармасть пулĕ çурхи кăвак тӳпе. Тӳпене сăнанăçем эпир çав кăваклăхра ирĕлсех, «кăваклансах», урăхла каласан, турăлансах каятпăр. Çук, кунта эпир кăвак тĕс пирки шутламастпăр, кăвак тӳпе хăй «пирĕн урлă хăйне шутлать»[1]. Кун пек черчен пулăм çынна пурăнма пулăшать, вăл пурнăç хутлăхĕ, тӳпесĕр çын çук. Чăваш хăйĕн пирки ахальтен мар эпĕ «çĕрпе пĕлĕт хушшинче пурăнатăп» тет. Апла, эпир хамăр та çак тĕнчене куракансем кăна, курма пĕлсен вара кашни пулăм чĕтренĕвĕ пирĕн чун чĕтренĕвĕпе пĕр килет. Калăпăр, ача çуралсан пĕтĕм тĕнчене çав ача пуррипе виçетĕн. Çав самантран урăх истори пуçланать, пурнăç урăхла юрлама тытăнать. Çын вилсен те çавах. Саншăн хаклă çын япалисем, вăл халĕ хăй çук пулсан та, пĕрмай ăна аса илтереççĕ. Вĕсем çав çын чунлă. Ку асатте, асанне япали тетпĕр. Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, çынпа тĕнче, тĕнчепе çын пĕр-пĕрне ăнланаççĕ. Çын хăйне тĕнчере курать, тĕнче çынна тытса тăрать. Тĕлĕнмелле те, çын тĕнчере пурăнни хăех çак тĕнчене çынна кирлĕ пек йĕркелет. Çынпа тĕнче пĕр пĕрне йĕркелеççĕ. Пĕри тепĕринсĕр çук.

---

[1] Мерло-Понти М. Феномология восприятия. М.: СПб, 1999. С. 275.

Чăваш шухăшĕпе тĕнче яланах пирĕн курăмлă, пирĕн чунлă, пирĕн ăнлавлă. Çак пĕрлештерӳлĕхе хальхи вăхăтра питĕ сивлеççĕ, ку темле чĕлхелĕх (язычество) теççĕ. Анчах та çын хăйĕн чунне çут çанталăк пулăмĕсенче курма пăрахсанах тĕнче ютланать. Çав вăхăтрах унта тем тĕрлĕ усал япаласем хуçаланма пуçлаççĕ. Çынсем çав хăрушланса çитнĕ япаласене пуç çапма тытăнаççĕ. Халĕ ĕнтĕ тĕнчепе çын хушшинчи пĕрлĕх çухалнă пирки усалпа ырă сиксе тухаççĕ, вĕсем хушшинче çапăçу пуçланать. Тĕрĕссипе, пурте çын чунлă пулнăран, чăвашшăн тĕнчере усал та çук. Пурте ырă. Чăваш тĕнчене нихăçан та усал курмасть. Мĕнле усал пулма пултарать-ха çăл куç юххинче, çĕмĕрт çеçкинче, хур-кайăк вĕçевĕнче. Чăваш вăрмантан та, çырмаран та хăрамасть. Пачах урăхла, ăна çут çанталăкăн кашни пулăмĕ пулăшса тăрать. Çапла пултăр тесе вăл пулăшу ыйтса кĕлĕ тăвать, е пĕр-икĕ сăмах кăна хушса хурать — пулчĕ те. Вăл кăшт шикленсе ӳкнĕ вăхăтрах тĕнчепе пĕр пулса каять те, тĕнче уншăн чăн тăван е хăй пекех пулса каять. Кунта каллех çураçтарулăх туйăмĕсем пирки аса илни те вырăнлă. Çут çанталăк пулăмĕсемпе çураçтаруллă пурăнма пĕлекен çын тĕнчешĕн ют мар. Тĕнче унăн пĕр пайĕ, тăванĕ пулса тăрать. Тĕнче усал мар. Вăл ху усаллансан кăна усал пек курăнать.

Çут çанталăка чунлă курнинче тата тепĕр туйăм та палăрать. Чăвашшăн çут çанталăк, каларăмăр, турă вырăнĕнчех. Сăмахран, каçхи тӳпене куракан çын хăй чунне ăнтăхтарсах ярать. Таçта куç виçейми уçлăхра тем пиртен хăватлăрах чун пур пек. Уя тухсан та çавах, уй чунĕ пирĕн чунпа пĕр пулса каять, вăрманта та çавах. Унта çӳренĕ чухне эпир вăрман шăплăхне пĕтĕм чунран тăнлатпăр, вăрманпа пĕр пулса сывлатпăр, пăшăлтататпăр. Кашни пулăмра чун пур пек. Çавна эпир Туррăн пĕр пайĕ тесе хаклатпăр. Кунта нимĕнле йăнăш та çук. Енчен те çакă çут çанталăк пулăмĕсем пире пулăшаççĕ, хӳтĕлеççĕ пулсассăн, вĕсем чăнласах турăланаççĕ. Чăвашшăн Турă вăл пиртен уйрăм япала мар, вăл çын пек чунлă, вăл пирĕн чунрах, вăл тĕнчепе пĕр чунлă.

Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, чăваш хăйне çут çанталăкра курать. Çут çанталăк та хăйне чăвашра тупать. Çавăнпа та вĕсем хушшинчи уйрăлми пĕр пĕрлĕх çуралать. Вĕсен чунĕсем пĕр пулса пĕрлешсе каяççĕ. Çакă пурăнма пулăшать кăна мар, тĕнчене те чунлăх еннелле аталантарать. Чăваш кун пек пурăнни хальхи вăхăтри экологи ăнланупа тӳр килет, терĕмĕр. Апла, чăваш хăй пĕр эког. Вăл çутçанталăка пăхса, пăхăнса, çураçтарса пурăнать. Çакă питĕ пысăк хаклăх. Çакă пулăшать те ăна пĕтсе пыракан тĕнчене çăлма.

Паллă, пурнăçра пур чухне кун пек килсе тухмасть. Хăшĕ-пĕрисем хăйсене кăна çăлас тесе пурăнаççĕ. Кăна та сивлеме çук. Тĕнчере пурăнма кирек хăçан та йывăр пулнă. Чылай чухне чăваш пĕтес патнех çитнĕ. Анчах та вăл вилĕм çулĕнчен пĕр меслетпе, Турă меслечĕпе çăлăнса тухнă. Вăл пуринчен ытла ыттисене пулăшма тăрăшнă. Çакă ăна вăй панă, çут çанталăк чунлă, Турă чунлă пулма вĕрентнĕ. Халĕ те çаплах, çынна пулăшакан яланах ырă чунлă, вăйлă, таса тата ăслă. Халăх историйĕ çавна кăтартса парать. Çавăнпа та чăваша усал çынсем хыççăн тĕртсе ярас тенисем, вăл кĕвĕç те усал тенисем, чăнлăхпа пĕр килмеççĕ. Чăваш ĕлĕк епле çынлă та турăллă пулнă, çаплипех тăрса юлать, çăлăнать. Вăл çеç те мар, çапла усал тĕнчене парăнмасăр чăтса пурăнсан-пурăнсан, чăвашăн ырă тĕслĕхĕпе тĕнче хăй те çăлăнать.

Ыйтусем:

1. Чăваш ĕçлевĕ ăçта палăрать.
2. Ĕç çаврăнăшĕ мĕнпе çыхăннă.
3. Пурнăça кирлĕ япаласене мĕнле тăваççĕ.
4. Çут çанталăка чунлатма пулать-и.

## V глава. Халăх хаклăхĕсем

### 5.1. Чăваш пурнăça хаклани

Чăвашшăн чи хакли пурнăç. Пурнăç тенĕ ăнлава вăл хăйне кăна мар, çемйине те кĕртет. Ял тата халăх пурнăçĕ пирки шутлани ун çукрах. Чăвашăн пурнăçĕ кил тавра çаврăнать. Килĕнче ун выльăх-чĕрлĕхĕ те, пахча-çимĕçĕ те, ачи-пăчи те пулмалла. Хуралчĕсем ун хăйне майлă хупă пĕр хутлăх пулса тăраççĕ. Çав хутлăхра аталанать те чăваш çемйи. Пурнăç тени, апла, хăй хальлĕн мар, вăл пĕтĕм хуçалăх шайĕнче палăрать. Чăваш хуçалăхĕ çирĕп-тĕк, пурнăç та та, апла, пырать. Ачисем тĕрĕс-тĕкĕл ÿсеççĕ, çемье çирĕп тăрать. Чăваш, тĕрĕссипе, çак хутлăхра аталанать. Ял хутлăхĕ пирки калама хĕнтерех. Ĕлĕкрех ял пурнăçĕ пĕрлешÿллĕ хуçалăх аталанăвĕпе пĕр килетчĕ. Халь тин ун пек хуçалăхсем пĕтсе пыраççĕ. Çавăнпа та ял пурнăçĕ халĕ пĕр кил тепĕр киле пулăшнипе тытăнса тăрать. Пач пулăшма пăрахсан вара ял та саланса каять. Тĕшмĕртерех пăхсан, ял кÿршĕсемпе тăвансенчен тытăнса тăрать. Ялăн ун хăйĕн структури

пур. Ялта пурӑнакан ҫынсем пӗр ялсем кӑна мар, вӗсем пӗр кассем те, пӗр тӑвансем те, кӳршӗллисем те. Яла халӗ те, ӗлӗкхи пекех, пӗрлӗхлӗ ӗҫ чӑмӑртаса тӑрать. Ял кӗтӗвне ҫӳретмелле-и унта, ҫӗр улми лартса ӳстермелле, нимелле ҫурт лартмалла, тата ытти те. Ял пурнӑҫӗ мӗнлерех пулни куҫа ытла пит курӑнмасть. Ӑна пӗлес тесен ял ҫумӗнчи масар мӗнле ӳснине сӑнас пулать. Масар пысӑкланса кайрӗ-тӗк, апла, пурнӑҫ япӑх. Ҫапла пулӗ те халӗ. Ялсенче халӗ культура ҫурчӗсем те, шкулсем те, ӗҫ вырӑнӗсем те пӗтсе пыраҫҫӗ. Вӗсен вырӑнне темле ӗҫкӗ ӗҫмелли магазин-кафесем ӳссе ларчӗҫ. Ял пурнӑҫӗ, пӗр пӗтӗмӗшле илсен, ӗҫкӗ-ҫикӗ ӑшне путрӗ.

Халӑх пурнӑҫӗ пирки калаҫас пулсан, тӳрех калама пулать, халӑх пурнӑҫӗн нимле палли те ҫук. Чӑваш халӑх пурнӑҫӗпе интересленекен, ӑна йӗркелесе пыракан пӗртен пӗр обществолла организаци ҫех пур. Вӑл — Чӑваш халӑх конгресӗ. Патшалӑх енчен, гуманитари институчӗсӗр пуҫне, чӑвашпа ӗҫлекен урӑх пӗр организаци те ҫук. Ыттисем чӑваш халӑхне хӑйсен ӗҫӗнче нихӑш енчен те уйӑрса палӑртмаҫҫӗ, вӗсем халӑх йышӗпе кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Пуҫлӑхсем чӑваш халӑх йышӗ пирки калаҫмаҫҫӗ, вӗсемшӗн республикӑра пурӑнакан халӑх йышӗ (населени) кӑна пур. Ҫавӑнпа та чӑваш халӑхӗн пурнӑҫӗ пирки нимех те калама ҫук. Юрлани-ташланисӗр пуҫне урӑх нимле ӗҫре те палӑрмасть халӑх пурнӑҫӗ. Республикӑра нимле чӑвашла тавар та туса кӑлармаҫҫӗ. Ку — чӑваш таварӗ тени илтӗнмест. Чӑваш ҫӗнӗ япала шутласа кӑларчӗ тени те ҫук. Мӗн туса пурӑнать чӑваш халӑхӗ, калама та май ҫук, кризис тапхӑрӗсенче пушшех те.

Ӗлӗкрех чӑваш хӑмли, чӑваш ҫӗр улмийӗ, чӑваш тракторӗ пурччӗ, халӗ ун пек калама пӑрахрӗҫ. Республикӑн пӗртен пӗр тавар юлнӑ — чӑваш ҫынни. Ун йышӗ те чакса кайрӗ. Ҫулталӑкра ҫӗр пине яхӑн чӑваш ҫӗр ҫинчен ҫухалать. Нумайӑшӗ хӑйсене хӑйсем чӑваш теме пӑрахрӗҫ. Кун пекех пулсан чӑваш халӑхӗ пӗр тепӗр алӑ ҫултан йӑлтах юр пек ирӗлсе кайса ҫухалӗ. Ун ҫинчен калаҫмалли сӑлтав та вара юлмасть. Ҫавӑн патне ҫитес хӑрушлӑх питӗ пысӑк. Анчах ун ҫинчен никам та шарламасть, тӗпчев ӗҫӗсем ҫырмасть, малашри пурнӑҫа курмасть. Ҫавӑнпа та халӑх пурнӑҫӗ пирки нимех те калама ҫук. Те пур вӑл, те ҫук — чӑваш хӑй те татса калаймӗ. Ют ҫынсем каланӑ тӑрӑх чӑваша ытти халӑх ҫыннисенчен нимпе те уйӑрса илме май ҫук. Хальхи чӑваш халӑхӗ хӑйне нимпе те палӑртмасть. Каларӑмӑр, тепӗр чухне уявсенче кӑна чӑваш юрри-ташши илтӗнкелет. Радио, телевидени, хаҫат-журналсем те ӗҫлеҫҫӗ-ха, анчах вӗсем чӑваш халӑх темине хускатмаҫҫӗ. Пӗр пӗтӗмӗшле каласан, чӑваш халӑх

пурнăçĕпе никам та интересленмест. Ун пурнăçне никам та йĕркелемест, ăна никам та ертсе пымасть.

Çак тапхăрта пуринчен ытла çемье çине ытарлă куçпа пăхмалла пек те, анчах çемьере те хăрушă аркану пырать. Чăваш çемйисем саланни çинчен кăна мар кунта калаçу пырать, чăн малтан, чăваш çемйи чăваш çуратма пăрахни пирки сăмахламалла пуль. Ялти çемье те халь чăн чăваш çуратмасть. Хулари çемье вара чăваш çуратма тахçанах пăрахнă. Кирлĕ мар, теççĕ. Хула йышĕ вăл йăлтах маргиналсенчен тăрать. Ял йышĕ те хĕллесенче кăна чăвашланать. Çулла яла канма тесе хула ачисем килсе тулаççĕ те, вырăсла калаçни кăна илтĕнсе тăрать. Чăваш пурнăçĕ, апла, пур енчен те чакса пырать. Кам халĕ чăваш пурнăçĕпе пурăнать-ши, калама та хĕн. Чăн чăваш çуратакансем халĕ çукрах та пулĕ. Çак шухăшсем чăнлăхпа пĕр килеççĕ пулсан, чăн малтан, пурнăç пултăр тесен, кашни çемьен чăваш çуратма тытăнмалла. Чăваш пурнăçĕн пĕртен пĕр тĕллевĕ — чăваш ачи пулмалла. Çав ача вара чăвашла пурăнма тытăнĕ. Малтанрах каланă пулăмсене пурнăçлаима тытăнĕ, хăйне кăна мар, тĕнчене те çăлĕ. Пурнăç чи хакли, тетпĕр пулсан, апла, пирĕншĕн чи хакли вăл — чăваш ачин пурнăçĕ. Çакна тĕпе хурса чăваш халăхĕн пĕртен пĕр чăн хаклăхне, чăваш пĕрчине, вăл Турă ачи терĕмĕр, çавна çуратма тытăнмалла. Унсăрăн чăваш халăхне вилĕм кĕтет. Вара, кайран пурте калĕç: чăваш вăл вилĕме юратнă, çавăнпа пĕтнĕ. Ун пек ан пултăрах! Эпир те ытти халăхсем пекех пурнăçа юрататпăр. Чăваш пурнăçĕ, каларăмăр, пирĕншĕн чи хакли.

Чăваш пурнăçне хакласа каяс-тăвас пулсан, чăваша çуратакан механизмсене йĕркелес пулать. Вĕсем хальлĕхе çукрах. Çук, тесен те тĕрĕс. Пирĕн шутпа, сыхланса юлнисенчен пĕртен пĕри кăна пур. Вăл механизм — чăваш çемьи. Çавăнпа та пĕр тăхтаса тăмасăр, хăйсене чăваш тесе калакан, чăвашла пурăнакан çемьесене ырласа кăтартса тăма пуçламалла пек туйăнать. Вĕсен ырă ĕçĕ вĕт пĕтĕм тĕнчене ырăлатма пултарать. Чăваш ыррăн та тасан килни пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ япала. Çавăнпа та чăвашăн тĕп шăхăшлавĕ çакăн çинче пулмалла. Вăл пурнăç философийĕ пулса тăмалла. Çавăн чухне кăна пирĕн пурнăç малалла кайĕ. Çав вăхăтрах, паллă, патшалăх шайĕнче те чăваш пурнăçне пăхса упраса, аталантарса тăракан организацисене вăйлатмалла. Унсăрăн вăхăт нумай та иртмĕ, Чăваш Республики те çĕр çинчен çухалĕ. Ун пек хăрушлăх пур. Халĕ тин чăваш предпирятисем те ют çынсен аллинче, каларăмăр, чăвашĕсем те çукрах, апла, республики те ним тума та кирлĕ пулмасть. Çапла малашлăх кĕтет пире, енчен те эпир тĕпе чăваш пурнăçне хума вăй çитереймесен.

## 5.2. Хаклăх иерархийĕ

Кашни халăхăн хăйĕн хаклăхĕсем. Чăваш халăхĕн пурнăçĕ тăванлăх çинче никĕсленсе тăрать, терĕмĕр. Çав вăхăтрах кашни çыннăн хăйне майлă хаклăхсен пуххи пур. Тĕслĕхрен, пĕри укçа пуçтарма юратать, тепри çут çанталăк илемĕпе киленсе пурăнать, виççĕмĕшĕ вара турра ĕненет тата ытти те. Хаклăхсен пуххийĕ тĕрлĕрен пулсан та кашнинче пĕр хаклăхĕ палăрсарах тăрать. Калăпăр, укçа юратакан çын çут çанталăк илемĕпе те киленме пултарать, анчах, пĕрех çут çанталăк çине вăл укçа тăвас куçпа пăхать. Хурăнра вăл илем кăна мар, вутă та курать. Вутă сутса миçе тенкĕ тума май килни пирки шухăшлать. Урăхла каласан, унăн темле пĕр хаклăхпа кăна çыхăннă доминанта пур. Çав хаклăх выртать çын хаклăхĕсен пуххи никĕсенче. Чăваш çыннин, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, хаклăхсен пуххинче пуринчен ытла тăванлăх палăрса тăрать. Çавăнпа та вăл, калăпăр, укçа çинчен пит шутламасть. Укçа тăвасси чвашăн тĕп ĕçĕ пулса тăмасть. Хăш-пĕр халăхсен çав укçа тăвасси питĕ вăйлă аталаннă, çавăнпа та вĕсем пире питĕ пуян пек, пиртен ăслăрах пек курăнаççĕ. Ĕç кунта ăслипе ăслă марринче мар, ĕç никĕсре мĕнле хаклăх выртнинчен килет. Паллă, чăваш тăванпа пĕрле пурăннă чух мĕнле-ха тăванĕнчен укçа ыйттăр. Вăл ăна ĕçне пĕр тӳлевсĕр туса пама тăрăшать. Пирĕн укçа экономики мар, пирĕн пулăшу е чун экономики хуçаланать. Пасар е рынок экономики пуç пулса тăчĕ пулсан та, пĕр тăван пек туйса тăракан чăваша вăл ниепле те улăштараймасть. Тăван тăванпа пĕр-пĕрне пулăшса, чун ыйтнă пек пурăнать. Кунта хăйне майлă ылмашлă пулăшу кăна мар, кунта темле турăлла пурнăç. Пĕри тепĕрне мĕнле пулăшнине шута илсе тăраççĕ. Пулăшу тени çăкăр-тăвар хире-хирĕçле тенĕ пек пулса пырать, унăн хăйĕн алгоритмĕ пур. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен ăна ял халăхĕ хăй шута илет. Халăх вăл хăй пĕр компьютер пек кам кама мĕнпе пулăшса панине сас-хура шайĕнче тĕрĕслесе тăрать. Енчен те кам та кам хăй вăхăтĕнче тăвансен пулăшăвĕпе усă курнăскер, çав пулăша ĕçлесе татса памарĕ-тĕк, çавна халăх сивлеме тытăнать. Ял тăрăх сас-хура сарăлать. Çавă, теççĕ, никама та пулăшса памасть. Ун пек çынна ял халăхĕн йышĕнчен кăлараççĕ. Вăл пирĕн тăван мар, текелеççĕ. Калас пулать, ял хăйне пĕр тăван пек туять. Ку вăл чăнласах та çавăн пек.

Малтанрах каланăччĕ, чăваш çут çанталăк саккунĕсене пăхăнса пурăнать, тесе. Çавăнпа та ун ĕç-хĕлĕ пит курăнса та каймасть. Ара, ун

ĕçĕ пирки йĕри-тавралăха сăнаса кăна пĕлме пулать. Енчен те ял тавра таса уй-хирсем, вăрман-катасем, пĕвеленĕ юханшывсем пулсан тӳрех калама пулать: ку çынсем пысăк ĕç тунă. Ку ĕç турă ĕçĕпе пĕр тан. Вĕсем çут çанталăка упраса пурăнаççĕ, аталантараççĕ те. Кунсăр пуçне чăваш халăх йĕркине те тытса пыма тăрăшать. «Ял мĕн калать», тет. Ял пурнăçĕн хăйĕн йĕрки пур. Енчен те çын çав йĕркене пăсма тытăнать, ăна çавăнтах вырăна лартаççĕ. Сăмахран, вăрра ернĕ çынна ĕлĕкрех пуçне хăрăк тимĕр витре тăхăнтарса ял тăрăх вĕренпе çавăтса çӳренĕ, халĕ, паллă, тĕрмене ăсатаççĕ. Иртĕнсе кайнă çынран çапла тасалаççĕ. Çавăнпа та йĕркелĕх тени, пирĕн шутпа, иккĕмĕш вырăнта. Йĕрке тени, тӳпе саккунне пăхăнни, асаттесен йăли-йĕркине тытса пыни, çут çанталăкран иртменни. Хăй юхăмĕпе юхакан шыв тасарах пулать. Чăваш та пурнăç юхăмне пăсмасть. Çавна пула хăвăртрах та аталанса пырать. Юхăма хирĕç каякан çын пурнăçĕ йывăртарах килсе тухать. Юхăмпа пĕр пулни пĕрре те япăх мар. Кунта никам та нимпе те кĕрешмест. Пурте пĕр майлă, пурте çураçуллă, пĕр юхăмлă. Пурнăç йĕркеллĕ пултăр тесен нумай вăй хума тивет. Пурнăç йĕркине хирĕç тăрса çĕмĕрекенсем те пур. Анчах ун пек çынсем халăхра сахал. Пĕр пĕтĕмле пăхсан, чăваш халăхĕ йĕркене юрататать. Çавăнпа та вăл сăпайлă, тирпейлĕ, çураçтаруллă, килĕштерӳллĕ, кăмăллă. Чăн йĕркелĕх вăл ытла пит курăнмасть. Йĕркене пăсни кăна куçа тăрăнать. Çавăнпа та чăвашсем мĕн туса пурăнаççĕ тесе ыйтсан, нимех те калама çук. Йĕркеллĕ пурăнни пуйни мар вĕт-ха вăл. Хальхи пасар тапхăрĕнче йĕркесĕрлĕх хуçаланать. Пуянлăх вăл тупрана пĕри тепĕринчен туртса илсен кăна пулма пултарать. Паллă, туртса илессине те халь саккунланă. Анчах вăрă вăл кирек мĕнле саккунпа витĕнсен те вăррах юлать. Ун пеккисене халăх йышăнмасть. Халăх йĕрки тăванлăх йĕрки, таса йĕрке. Вăрăсен саккунĕсем халăх пурнăç йĕркине çĕмĕреймеççĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен чăваш йĕрки вăл, пулăшу йĕрки.

Анчах та йĕрке тăвасси кирек хăçан та хăвăн ирĕке катĕртнипе çыхăннă. Çыннăн темĕн те тăвас килет пуль — юрамасть. Йĕрке пур. Чăваш хăйне хăй чарма, пурнăç картне лартма пултарать. Çавна, каланăччĕ, чӳклĕх тесе хаклама пулать. Пулăшу ĕçĕнче чăваш хăйне хăй хĕрхенмест. Çавăнпа та пулĕ хăйне вăл турă пек туять. Хăй мĕнле пулнине çын урлă курать. Ай, çын мĕн калать, тени питĕ пĕлтерĕшлĕ. Кунта пуринчен ытла хăйшĕн пĕлтерĕшлĕ çын куçĕ хаклă. Сăмахран, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, чăваш хăйне вырăс тата тутар куçĕпе курать. Вĕсем хаклани хаклă, ыттисен куçĕсем ытла пит нимех те пĕлтермеççĕ. Çакă та чăваша калăпласа тăрать. Çын хăйĕн туйăмсисĕмне хытарса тăни, ыттисен куçĕпе пăхса хăйне калăплани, çынна

пулăшма тăрăшни унăн ирĕклĕ пурнăçне, паллă, чылай катĕртет. Çавăнпа та вăл хăйне тĕнче умĕнче темле парăмлă пек туять. Çынпа усă курма юратмасть, хăйĕнпе усă курнăшăн савăнать кăна. Çакă пулăмсене пĕр сăмахпа — чӳклĕх, тесе хаклама пулать. Ку вăл питĕ вăрттăн пулăм. Куçа пит курăнса тăмасть. Хальхи вăхăтра ăна пит хакламаççĕ. Анчах та пурнăçа çавă тытса тăрать. Çын хăйне парса кăна хăйне тупма пултарать. Ку, паллă, турă йĕрки. Çакă турă йĕрки пĕтерет те халăха. Çак йĕркерен вăл ниепле те тухаймасть. Чăваш пĕтет, теççĕ. Пĕтмесĕр! Анчах та вăл çынна пулăшса пĕтет. Хăйне валли тупра тума хăнăхман халăхăн хальхи вăхăтра пĕтмех тивет. Анчах та çак пĕтесле пурнăçра çăлăнăç та пур. Кирек мĕн калăр та, пĕрне пĕри хамăра ăнланса пулăшма тытăнсан, чăваш тĕлĕнмелле вăйланса каяссăн туйăнать. Чӳклĕх вăл калама çук пысăк вăй. Ун пек çын халь тин вилĕмрен те хăрамасть. Апла, ăна нимпе те хăратаймăн. Вилме патне çитнĕ çын, вилĕмрен хăрама пăрахсан, вилĕме çĕнет, çĕнĕ пурнăç пуçласа ярать. Çак шухăшсем чăнлăхпа пĕр килеççĕ пулсан, виççĕмĕш вырăна хаклăхсен пуххинче чӳклĕх тенине лартма пулать. Чӳклĕх туйăм чăваша питĕ тарăннăн йĕркелесе пырать. Ăна вăл хальлĕхе хăй те ăнланса илеймест. Ăнланса илсенех, ку ман чăн вăй, турă вăйĕ тесе, тĕнчене ырлăх кӳме пултарать.

Хаклăхсен пуххи пысăк та пĕчĕк те пулма пултарать. Чăвашăн тата тепĕр хаклăх пур тесе шутлатпăр. Ку вăл пурте ырлăхлă-сывлăхлă пулччĕр тени. Çак хаклăхсем пурте тенĕ пекех чĕлхе вĕçĕнче, кулленхи калаçура тата пурнăçра палăраççĕ. Тĕрлĕ ситуацире тĕрлĕ хаклăх çиеле тухма пултарать, анчах пĕр пĕтĕмĕшле илсен, вĕсен пуххи пĕрмаях пĕр. Эпир вĕсен витĕмĕпе пурăнатпăр. Хамăр мĕнле тыткаласси те çав хаклăхсенчен килет. Çынна ырă сунсан ырă пулать ĕнтĕ вăл. Сывлăх сунни те çавах. Сывлăхпа ырлăх уйăрăлми пĕрле. Çав вăхăтрах вĕсем тăванла пулăшуллă тата йĕркеллĕ пурнăçра кăна пулма пултараççĕ. Енчен те пĕри тепĕрне катĕртсен хаклăхсен пуххи саланса каять те çын кăна мар, халăх та саланса кайма пултарать. Чăваш халăхне хальлĕхе тăванлăх, йĕркелĕх, чӳклĕх, çураçтарулăх тата ырлăх-сывлăх тытса тăрать пек туйăнать. Каларăмăр, ытти халăхсен урăхла пухă, кашни çыннăн та расна пухăсем. Çавăнпа та ку тĕрĕс е тĕрĕс мар тенисем те халăх пурнăçĕпе пĕр килмеççĕ пулĕ. Хаклăхсен пуххи пĕр вĕçĕмсĕр вылянса улшăнса тăрать. Тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ ситуацире пĕри маларах, тепри хыçаларах тăма пултарать. Анчах пĕр пĕтĕмĕшле илсен, çакă тăванлăхран, йĕркелĕхрен, чӳклĕхрен, çураçтарулăхран тата ырлăх-сывлăхран тăракан хаклăхсен пуххи

пиртен чăваш халăхĕ тăвать, аваллăха ăнланса илме пулăшать тата малашлăха илсе каять.

## 5.3. Хаклăхсене улăштарни

Вăхăт иртнĕçем пурнăç та улшăнса пырать. Халăх кашни тапхăра тивĕçлĕ хаклăхсем кăларса тăратать. Анчах та эпир хаклăха инвариант пек кăтартрăмăр. Апла, вăл улшăнмасть, мĕнле пулнă, çаплипех юлать. Çапах та, вăхăт кăтартать, пĕр хаклăхсем килеççĕ, тепĕрисем çухалаççĕ. Хаклăхсен пуххи те, апла, пĕр вырăнта тăмасть. Калăпăр, енчен те ĕлĕкрех чăваш хăюллăрах пулнă пулсан, халь тин йăвашрах курăнать. Ку, хаклăхсен йышĕ те, пĕлтерĕшĕ те улшăнма пултарнине кăтартса парать. Паллă ĕнтĕ, çӳлерех илсе кăтартнă хаклăхсен иерархийĕ те хальхи вăхăтра улшăннă пулĕ. Рынок тапхăрĕнче тĕпре тăванлăх мар, пачах урăхла хаклăх, ăна укçа хаклăхĕ, тейĕпĕр. Пулăшу экономики вырăнне услам экономики хуçаланма пуçланă. Пĕтĕмпех улшăннă тесе калаймăн-ха, çапах та çамрăксем халĕ урăхларах шутлаççĕ. Пулăшма тесе чĕнсен, укçа мĕн чухлĕ тӳлетĕн, теççĕ. Апла, ытти хаклăхсем те, вĕсем тăванлăхран тухса тăраççĕ, улшăннă пулĕ. Сăмахран, ялта халь урăхла йĕрке. Халĕ никам та никама та сивлемест. Кашни хăй тĕллĕн пурăнма тăрăшать. Чӳклĕх тени вара куçа пачах курăнмасть. Кашни хăй пурнăçĕпе, хăйне усă кӳрсе пурăнать. Ырлăх тени вара вăйланнă тесен те юрать. Чăваша ырлăх пĕтерет. Хытă пурнăç ăна тирпейлĕрех, сăпайлăрах, сывăрах пулма вĕрентнĕ. Анчах та ытла та лайăх пурнăç туса хурас тени ăна хавшатнă, курăнать. Ырă пурнăç халь çут çанталăк тата халăх йĕркисене хирĕçлет. Çынна халь таса çут çанталăк та, таса пурнăç та, халăхĕ те кирлĕ мар пек килсе тухать. Услам кăна пултăр.

Хаклăхсем тата вĕсен пĕлтерĕшĕсем мĕнлерех улшăнса пыни паллах мар. Ку питĕ вăрттăн, куçа курăнман пулăм. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен вĕсем пурнăçпа пĕрле улшăнса пыраççĕ пек. Ырă йăла-йĕркесем вырăнне пасар саккунĕ хуçаланма тытăнсан, паллă, тăванлăх туйăмĕсене палăртма йывăртарах. Ĕлĕкрех вăл патшалăх, халăх шайĕнче палăрнă пулсан, халĕ вара çемье шайĕнче те курăнсах каймасть. Хăш-пĕр философсем каланă тăрăх, халĕ хаклăхсен пуххи чăлпарр! саланнă. Пĕр пухă пулнă вырăнне урăх пухă йĕркеленеймен. Çавăнпа та çын пурнăç хаклăхĕсемсĕр юлнă пулать. Чăн та, халĕ, пĕр-пĕрне юратни, ыттисене хăвна хĕрхенмесĕр пулăшни, йĕркене тытса пыма тăрăшни курăнсах каймасть. Пурнăçа чи кирлĕ хаклăхсем чăнласах çухалнă пек туйăнать. Ун пекех мар пуль. Ман шутпа, çын

вĕсене чун-чĕре шайне пытарнă. Кирлĕ вăхăт çитсен, курсах тăрăр, тула туртса кăларать те, тĕнчене хăйĕн юратăвĕпе, тăванлăхĕпе, пулăшĕвĕпе тĕлĕнтерсе ярать.

Хаклăх пĕлтерĕшĕсем улшăнса пыни, апла, кăткăс пулăм. Кунта çын хăйне упраса хăварас тени те, халăх ыйтни те, тĕнче умĕнчен каяс мар тенисем те пур. Çапах та, куç кĕрет, чăваш тăмхаллă пурнăçĕ саланнăçем саланса пырать. Кăна хипрĕçлеме çук. Кун пек тапхăрта хаклăхсем улшăннине ăнланса илни кăна çителĕксĕр. Çĕнĕ хаклăхсем килеççĕ пулсан, вĕсене хамăр алла илмелле. Хамăр пурнăça мĕн кирлисене пурнăça кĕртмелле. Тепĕр чухне пурнăç темле хистесен те парăнмалла мар. Калăпăр, услам хăваласа эпир çут çанталăка кризиса кĕртсе ўкертĕмĕр. Çав химизаци тенисене патшалăх шайĕнче вăйпа пусмăрласа пурнăça кĕртнине хирĕçлемелле пулнă. Кăштă чăтса пурăнакансем вара, вăхăт иртĕ те, кайри мала тенĕ пек сиксе тухĕç. Халĕ пурте таса шыв ĕçесшĕн, таса сывлăшпа сывласшăн, таса çăкăр çиесшĕн — анчах май килмест. Хими препарачĕсем пурнăç хутлăхне пысăк сиен кўнĕ. Халĕ те çавăн пек сиен кўрекен пулăмсем хуçаланма тытăнчĕç. Сăмахран, пурте пуяс тесе çунса тăраççĕ. «Укçа пуça касать», теççĕ. Ман шутпа, укçа вăйне, унран вăйлă хаклăх халĕ çуккă, парăнмалла мар. Ун вырăнне çемье экономикине, чун экономикине аталантармалла. Пĕтĕм патшалăха, пĕтĕм халăха çемье пек курса-туйса тăмалла. Вара пулăшу е чун экономики каллех вăй илме тытăнать. Укçа вырăнне ырă ĕç пултăр. Хăй вăхăтĕнче çавăн пек ырă ĕçсене шута илсе ĕнтĕ çынна патшалăх шайĕнчех чысласа ырлăх кўнĕ.

Тимлĕрех пăхса сăнасан, тепĕр чух хăш-пĕр хаклăхсем пĕр ăру улшăннă çĕре улшăнсах çитеççĕ. Тĕслĕхрен, ваттисене хисеплеме юратнă халăх халĕ ватă çынна итлеме кăна мар, пулăшма та пăрахса пырать. Ялта мĕн чухлĕ ватă çын пĕччен асапланса пурăнать. Ачи-пăчи те çук мар вĕсен, анчах таçта хулара ыр курса пурăнаççĕ-и, паллă мар, ашшĕ-амăшне тимлесе пăхни курăнсах каймасть. Халĕ çамрăксем хăй тĕллĕн пурăнма тăрăшаççĕ. Ватăсен шухăшĕ те, кăмăлĕ те, пурнăçĕ те никама та кирлĕ мар халь. Чăваш тăмхи, чăваш хаклăхсен пуххи ĕнтĕ, питĕ хăвăрт улшăнать. Тĕрĕссипе каласан, вăл анăçри хаклăхсен пуххипе ылмашăнса пырать. Пачах урăх тăмха кĕрсе ларсан вара халăхĕ хăй те пĕтет. урăх тăмхаллă халăх урăх халăх ĕнтĕ вăл. Ăна тек ку чăваш халăхĕ тесе калаймăн. Анăç тăмхи чăваша халăхран уйăрать, уйрăмлатать, никама шута илмесĕр хăй интересĕпе кăна пурăнма вĕрентет. Çавăн патне çитсе пыратпăр пулмалла. Ку юхăма хальлĕхе никамах та хирĕç тăраймасть. Пушшех те, пропаганда сĕрĕмĕпе анранă çынсем усаллансах пыраççĕ. Тăванлăх туйĕмĕ вĕсен чунĕнче тек

хуçаланмасть. Ку çеç те мар, калăпăр, чăвашлăх, тенине илтсен вăл кулать кăна мар, çилленсе кайса çапса пăрахма та хатĕр. Кун пек тĕнче гражданĕсем халĕ питĕ йышланса кайрĕç. Малалла мĕн пулĕ, калама хĕн, çапах та шанас килет, халăх хăйне упраса хăвармалăх мелпе вăй тупатех. Ун управĕ, паллă, хăй тăмхине упрани, хаклăхсен пуххине ватма паманнипе çыхăннă. Хаклăхсем улшăнаççĕ пулсан та вĕсен пĕлтерĕшĕ питĕ майĕпен чакмалла е вăйланмалла. Унсăрăн, халăх пĕтес хăрушлăх сиксе тухать. Вара халăх вырăнне уйрăмшарăн, хăйсем тĕллĕн пурнакан çын-атомсем кăна тăрса юлаççĕ. Вĕсем тек пĕр-пĕрне юратас, пулăшас çук. Вара «кашни çын кашкăр», «вăйли çĕнтерет» тенисем пуç пулса тăрĕç те халăхсем пĕр-пĕринпе çапăçса пĕтĕç. Çавна куратпăр та.

Хаклăхсем тĕнчекурăма йĕркелесе тăраççĕ пулсан, хамăрăн ăстăнаава, туйăм-сисĕме çивĕчлетмелле пулĕ. Мана ним те кирлĕ мар, патшалăх хăй туса парать, тенисене пăрахăçламалла. Пĕр сăмахпа каласан, пурнăçа мĕн кирлине пирĕн хамăрăн шутласа кăларса тытса пымалла. «Çын хыççăн кайса вакка сикмелле мар». Хальлĕхе çавă пулса пырать-ха. Пĕтĕмлетсе çапла калама пулать, пирĕн халăхăн хаклавĕсем хăйне евĕрлĕ пĕр тăмха. Çак пухăран пĕрне кăна кăларса пăрах, е урххипе улăштар — тĕнче тӳрех улшăнать. Вăл урăх курăмланса каять. Ун чухне вара эпир пĕр-пĕрне юратма, пулăшма пăрахăпăр. Ара, тек тăвансем мар-ха та. Халĕ тин эпир çын-атомсем кăна. Ун пек ан пултăр тесен, авалхи йăласене тытса пыма тăрăшмалла. Халăх ахальтен мар хăй йăлисем пирки «киввине пăрахмастпăр, çĕннине шутласа кăлармастпăр» тенĕ. Йăла-йĕрке пĕр вырăнта тăмасть пулин те чăн чăваш çын хаклăхĕсене упраса хăварасчĕ. Чăваш çуратса тăни çав авалхи ырă йăласене тытса пыни пулать те ĕнтĕ вăл.

Кунта тепĕр пулăм çинчен те шутламалла пулать. «Сыхланса юлас тесен, улшăнмалла», теççĕ. Анчах, куртăмăр, улшăну та хăрушă пулма пултарать. Улшăнма та пĕлес пулать. Хальлĕхе эпир улшăну саккунĕсене пĕлсех пĕтерейместпĕр. Пĕрне кăна палăртрăмăр. Пурнăç улшăнăвĕ йăла-йĕркепе çыхăннă. Енчен те эпир йăласене тытса кăна мар, улăштарма та вĕренсе çитсен вара, халăха та упраса хăварма май тупăпăр.

Ыйтусем:

1. Халăх хаклăхĕсем мĕнрен тытăнса тăраççĕ.
2. Чăваш пурнăça хаклать-и.

3. Хаклăхсен иерархийĕ пур-и.
4. Хаклăхсем мĕнле улăшăнаççĕ.

## VI глава. Чăваш çынни

### 6.1. Чăваш чунĕ

Чăваш чунĕ пирки тĕплĕнрех калаçма тивет. Чăваш хаклăхĕсен малтанрах палăртнă пуххи кăна мар йĕркелет чăваш чунне. Кунта чун мĕнрен тăнине пĕлменни тата ăна чĕмпе пăтраштарни те кансĕрлет. Чун, чĕм, ўт мĕнле çыхăнса пĕр пĕрлĕх пулса тăнине кăтартса панăччĕ эпир. Анчах та çак чăвашла çыхăну пĕрре те паллă мар. Унăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем çук мар ĕнтĕ. Чăн малтан çак виçĕ енлĕ çыхăнăва салтса салатма юрамасть пек туйăнать. Кашни пайне уйрăммăн пăхса тухни чăнлăхран уйрăлни пулĕччĕ. Чун, чĕм, ўт пĕр пĕринчен уйрăлми пĕрлĕх пулса тăрать. Чи кирли кунта, пирĕн шутпа, чунпа ўт мĕнле çыхăнса тăни пирки шутламалла. «Сывă ўтре сывă чун» тенине те манса каяр мар. Тепĕр майлă калани те тĕрĕс. Пĕр пĕринпе вĕсем чĕм урлă çыхăнаççĕ. Чĕмре, апла, чун никĕсĕ те, ўт паллăрăмĕ те пулмалла. Вăл мар-и вара вĕсене пĕрлештерсе çыхăнтарса тăрать. Чăн та, чун мĕн ыйтни ўтре самантрах палăрать. /три улшăнусем те чунра палăраççĕ. Калăпăр, эсир тĕнче çине юратуллă куçпа пăхатăр пулсан, ўт-пў те вылянса кăна тăрать. Хăюллă çыннăн мускулĕсем те вăйлă. Ырă çын канма пĕлмесĕр ĕçлет. Чуна эпир малтанрах хăйне майлă тăмха пек курнăччĕ. Çав тăмха çынна кирлĕ хаклăхсене пĕр çĕре пуçтарать, çын ĕçĕпе пурнăçне йĕркелесе пырать. Çын сывлăхĕ те ун чунĕ еплерех сывă пулнинчен килет. Кунта иккĕленў çук. Анчах та çак çыхăну мĕнлерех йĕркеленсе пыни паллах мар. Йогсем пирки те илтмен мар-ха эпир, Вĕсем-мĕн клеткăсем таранах улăштарма пултараççĕ хăйсен ўт-кĕлеткине. Чăн та, унсăрăн епле вара пĕр сывламасăр тенĕ пек темиçе сехет шывра е çĕр ăшĕнче выртма пулать. Кăна организмри метаболизма улăштарсан кăна тума пулать. Апла, чăн малтан, кунта чун мĕн тăвас тени кăна мар, кунта тĕрлĕ туйăмсем урлă клетка ĕçне улăштарни кирлĕ. Туйăмпа клетка питĕ тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, хăраса ўксенех çын кăвакарса каять. Ку мĕне пĕлтерет тесе ыйтсан, нейрофизиолог тўрех калама пултарать. Ку пулăм юн тымарĕсем хĕсĕннипе çыхăннă. Юн кайма пăрахать те çын ўчĕ шуралса кăвакарса каfive, вилме те пултарать. Хăратнипех вилни те пулнă. Савăнăç туйăмĕ те çавах, анчах вăл юн тымарĕсене сарать, юн

выляма тытӑнать те ҫын ӳчӗ хӗрелсе каять. Кун пек тӗслӗхсем нумай илсе пама пулать. Чи кирли, организмри метаболизм туйӑмсемпе ҫыхӑнса тӑни. Ҫын чӗмне эпир метаболизмпа ҫыхӑнтарнӑччӗ. Туйӑм тени хӑй тӗллӗн килмест. Вӑл чун тени тӗрлӗ пурнӑҫ хутлӑхӗнче мӗнпе те пулин тӗл пулса улшӑнни, хӑйне кирлине тӑвас тени. Калӑпӑр, хӑюллӑ пулас тенӗ ҫын темле хӑрушлӑхпа тӗл пулсан та хӑраса ӳкмест, ун ӳчӗ кӑвакармасть. Хӑравҫӑн вара кӑвакарать те пуль. Ку пӗтӗмпех эсӗ ху мӗнле тӑмхаллӑ пулнинчен килет. Тӑмха тенӗ хаклӑхсен пуххине мӗн кӗрет сан — хӑюллӑх е хӑравҫӑлӑх. Хӑраса пурӑнакан ҫын ӳчӗ те юн тымарӗ хӗсӗннӗ пирки пит хӗрлех мар терӗмӗр. Апла вӑл ҫыннӑн сывлӑхӗ те япӑхрах, вӑйӗ те ҫукрах. Тепӗр майлӑ калани те, малтанрах кӑтартрӑмӑр, тӗрӗс.

Ҫак шухӑшсене тӗпе хурсан халӗ эпир чӑваш чунӗ пирки, вӑл ун сывлӑхӗпе тата пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ тесе, чылай ҫирӗплетсе калама пултаратпӑр. Чӑн та, чӑваш ахальтен мар пуль «мӗнле пурӑнан» тесе ыйтсан, «апат тӑрӑх» тет. Кунта пысӑк чӑнлӑх пур. Нумай ӗмӗрсем тӑршшӗ выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурнӑҫпа пурӑннӑ ҫын чунӗ те, паллӑ, хавшӑнӑ. Тепӗр майлине те пӑхса тухар. Мӗн пытармалли пултӑр, ӗмӗрсем тӑрӑшшипе хӑраса пурӑннӑ ҫын ӳт-пӗвӗ те хӑрӑк ӗнтӗ вӑл. Акӑ мӗнле ҫыхӑну тӗвӗленсе пырать кунта. Халӑх калать: «хӑюллисем хирте выртса юлнӑ». Хӑюллӑ чунсем ҫуккӑ-ши вара пирӗн. Ҫукрах пулӗ ҫав. Чӑваш тӑмхи хӑюллӑх ҫинче тытӑнса тӑнӑ пулсан вӑл хӑй те кӗрнеклӗ ӳт-пӳллӗ пулнӑ пулӗччӗ. Ахальтен мар вӗт авалхи паттӑрсене Улӑп евӗр ӳкерсе кӑтартаҫҫӗ. Апла, кӗрнеклӗхпе хӑюллӑх хушшинче уйрӑлми ҫыхӑну пур. Ҫак шухӑшсем эпир хамӑр камсем пулнине, чунсем мӗнлине питӗ лайӑх ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах хамӑрӑн хӑравҫӑлӑх пирки те манса каяр мар. «Хӑюллисем хирте выртса юлнӑ». Ӗлӗкхи паттӑрсем, пӗлетпӗр, кӗрнеклӗ курӑннӑ. Хӑравҫӑсем вара вӑрмана тарса ӳкнӗ. Вӗсем пӗчӗкрех кӗлеткеллӗ пуль. Юн тымарӗсем хӗсӗнсех ларнӑ-ха та, урӑхла пулма та пултараймасть. Ҫапах та ҫав хӗсӗкрех чунлӑ ҫынсем тепӗр хут вӑй илсе ҫӗнӗ чӑваш чунне туса хунӑ пулать вӗт. Пултӑр, ун чунӗнче хӑравҫӑлӑх та пултӑр. Камӑн чунӗнче ҫук пултӑр вӑл. Ҫавна пулах эпир кӑштах асӑрханулла, шиклӗ, пуҫтах мар. Ҫакӑ пулӑшса пырать те хальхи пӑтӑрмахлӑ вӑхӑтра. Чӑваш чунӗ питӗ хӑйне майлӑ, вӑл истори тапхӑрне евӗрлет. Кӑна ӑнланса илсе ҫак тӑмхан хаклӑхне те шута илес пулать. Вӑрмана тарса ӳкнисен тӑхӑмӗсен вара вӗсен «тирне сӳсе пурӑннӑран-и», пӗр вӗҫӗмсӗр хырҫӑ-марҫӑ тӳленӗрен ӗнтӗ, хытӑрах пурнӑҫпа пурӑнма тивнӗ. Хытӑ пурнӑҫ чӑваша типтерлӗрех, сӑпайлӑрах, хытӑрах пулма вӗрентнӗ. Чӑвашӑн ку тепӗр енӗ. Пӗрре

вăл, каларăмăр, шиклĕрех, тепре хытăрах. Ку хаклăхсем чăваш тăмхин чи пысăк паллăрăмĕсем пулса тăраççĕ. Çавсем пурăнма пулăшаççĕ. Вĕсем пĕрре те япăх хаклăхсем мар. Тепĕрисем çапла, ку япăх, тесе шутлаççĕ. Анчах та вĕсем халăха çăлса хăварнă, çăлаççĕ те. Каллех акă халăхшăн хăрушă тапхăрсем килсе çитрĕç. Ĕлĕк епле хаклăхсем çине таянса хăтăлса юлнă, халĕ те çапла пулĕ. Пире пирĕн тăмха çăлать.

Кунсăр пуçне чăвашăн тĕлĕнмелле чăтăмлăх пур. Ку хаклăхсенчен те хакли. Паллă, пурăнас тесен, кирек мĕнле йывăр пулсан та чăтатăн. Çак хаклăх та пурнăçра пуç пулса тăнă пирки, чăваш пурне те чăтса ирттерсе ярать. Хăйне пурнăç хĕсĕрленине чăтайман пулсан вăл тахçанах хĕç айне пулса пĕтетчĕ. Вăл тамăкра та хăйне валли лайăх пурнăç туса хунă. Ун пеккисем тата камсем пур. Çапла вара хаклăхсен пуххи çумне эпир чăтăмлăха та кĕртме пултаратпăр.

Хăравçăлăх. хытăлăх, чăтăмлăх хаклăхсем хăйсем уйрăм тăмаççĕ. Вĕсемпе тачă çырлахтарулăх текен пахалăх пур. Çырлахтарулăх чўклĕхпе çыхăннă. Чăвашăн пĕрмаях кама та пулин çырлахтарса тăмалла. Унсăрăн вăл хăйне айăплă пек туять. Парăмлă вăл. Ку тĕрĕс те пуль. Тĕнчерен уйăрăлман çын тĕнче умĕнче парăмăлă ĕнтĕ вăл. Турă умĕнче пушшех те. Çавăнпа та кирек мĕнле хутшăнура та, ĕçре те чăваш пурне те çырлахтарса тăрать. Мана ан тивĕр, эпĕ лайăх, акă сире валли чўк тăватăп, парне паратăп, тата ытти те. Ку питĕ вăйлă мел. Тĕнчерен хăраса тăракан хўтлĕх шырать. Калăпăр, Турă хўтлĕх паракан вăй пулсан, ăна çырлахтарас пулать. Пуçлăх таврашĕпе те чăваш хăйне питĕ сăпайлă тыткалать. Мĕнле те пулин çилентерсе ярас марччĕ тет.

Халь тин палăртса çитернĕпе пĕрех хаклăхсем хăйсемех, тепĕр пахалăх патне илсе çитереççĕ. Ку вăл çураçтарулăх. Ку хаклăх-пахалăх çинчен эпир кăштах малтанрах та шутланăччĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăйне майлă интеграл. Çураçтаруллă çын вăл асăрхануллă та, сăпайлă та, чăтăмлă та, хытă та, тата ытти те. Çураçтарулăх тĕнче никĕсĕнче тăрать. Темле пўтсĕр çын та мĕнпе те пулин çураçтарма тăрăшать. Çураçтарулăхсăр пурнăç çук. Чăвашăн вара çак пахалăх чи тĕпри пахалăх пулса тăрать. Вăл хăйне майлă мотор пек туртать чăваша пурнăç тăрăх. Çураçтарма пĕлекен çын тĕнче вăйлă, тĕнче никĕслĕ, тĕнче чунлă çын. Чăваш пурнăçне тĕплĕн пăхса илсен, тўрех çак пахалăх пĕрремĕш вырăна сиксе тухать. Чи малтан палăртнă тăванлăх, пулăшулăх, чўклĕх, йĕркелĕх, ырлăх тенĕ пахалăхсем те çураçтарулăх хаклăхпа пĕр килеççĕ, унăн пĕр пайĕ пек курăнаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, нихăшĕ те пĕри тепĕрисĕр пулма пултараймаççĕ. Хăравçăлăх

терĕмĕр пулсан, вăл çураçтарма пĕлнине кăтартать. Чăтăмлăх, терĕмĕр-тĕк, каллех çураçтарулăха пĕлтерет. Çакă çыхăну пĕр вĕçĕмсĕр. Пĕр пахалăх хăй тĕллĕнех тепĕр пахалăха туртса кăларать. Вĕсене пурне те, пирĕн шутпа, çураçтарулăх хаклăх пĕрлештерсе тăрать.

Чăваш хаклăхĕсем пирки калаçнă чухне суя хаклăхсем пирки те сăмах хускатма тивет. Вĕсем халăха хирĕçле диверси формулисем. Сăмахран, чăваша кĕвĕç пек кураççĕ. Чăваш-мĕн чăваша кĕвĕçсе сутса пурăнать. Вăл-мĕн сутăнчăк. Тўрех каласа хăвармалла, ку хаклăхсем чăвашăн мар. Кусем вĕсем кĕвĕç чунлă сутăнчăк пахалăхĕсем. Хăй çапла пулнăран, вăл хăйĕн усал кăмăлĕсене сарма тăрăшать. Ăна та вĕт пурнăмалăх кĕвĕçлĕ хутлăх кирлĕ. Унта вара вăл, çав хура шывра, хăйне пулă пекех туять. Çавăнпа та пĕр вĕçĕмсĕр чăваш кĕвĕç тесе çўрет. Вăл хăй кĕвĕç, çавă кăна. Кун пек диверсиллĕ хаклăхсем татах та пур. Тĕслĕхрен, чăваша тĕнче пĕтеслĕхĕпе çыхăнтараççĕ. Чăваш-мĕн кĕвĕçсе, ура хурса, хăйне сутса тĕнчене пĕтерет. «тĕнче пĕтет» тесе çўрекенсем вĕсем çĕрĕк çынсем кăна, вĕсем чăвашсем мар. Вĕсем чăваш пĕттĕр, текенсем. Чăваш хăй нихçан та тĕнче пĕттĕр тесе çўремест. Усал çынсенчен сыхланса, «чăваш пĕтсен, тĕнче пĕтет», тесе асăрхататтарать. «Тĕнче пĕтет», тесе çўрекенсем вара пире чăваш пĕтет тесе ĕнентересшĕн. Кунта каллех çăра, пăтăрмахлă шывра пулă тытса пурăнас текенсем çиеле сиксе тухни курăнать.

Чăваш çураçтарулăхĕ пĕтĕм тĕнчене тытса тăрать. Тĕнче хăй çак пахалăх çинче тытăнса тăрать. Апла, чăвашра нимле кĕвĕçўлĕх те пулма пултараймасть. Ун пек туйăм хамăн юлташсем çумĕнче эпĕ пĕрре те асăрхаман. Ху мĕнле, тĕнче те çапла пек курăнать ĕнтĕ вăл. Апла, ун пек кĕвĕçўлĕхпе тулнă çынсене, ху лайăх пул-ха, ху япăххине çын çине ан яр, тесе калас килет. Чăваш тĕнчи вăл тăванлă, йĕркеллĕ, ырă, çураçтаруллă. Çакă пахалăхсем унăн чунĕн тĕп пахалăхĕсем пулса тăраççĕ.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, пирĕн эпир хамăр кам пулнине пĕлсе тăмалла. Лайăх пахалăхсене тата лайăхлатмалла, япăххисем пур пулсан, вĕсене катĕртмелле. Чăваш хăй тăмхаллă. Вăл тăмха историллĕ пулăм. Унта пире пурăнмалăх хаклăхсен пуххи пур. Çавă чĕрере ларать, ăс-тăна кĕрет, ĕçе йĕркелет.

## 6.2. Чăваш пурнăçĕ

Чăваш халăх пурнăçĕ çут çанталăкпа çыхăнуллă ĕçре йĕркеленсе пыни çинчен малтанрах каланăччĕ. Çапла шайлашуллă хутшăнусем чăвашсемшĕн кăтартуллă тесен те тĕрĕс пулать. Çут çанталăкĕ халăха

та хăй çуратнă, терĕмĕр. Паллă, ку тĕрлĕ енлĕ хутшăну пулнă. Халăхĕ те çут çанталăка хăйне кирлĕ пек улăштарнă. Çавăнпа та чăваш пурнăçĕ пирки, вăл пĕлĕтпе çĕр е савăнăçпа хурлăх хушшинче иртет, тени çителĕксĕр. Тĕрĕссипе вăл çут çанталăкпа халăх хушшинче пуçтарăнать. Пĕр енчен мĕн пĕчĕкрен çынна çут çанталăк хăй илемĕпе витĕм кӳрет. Тепĕр енчен халăх çынпа çын хутшăнăвĕсене тĕрлĕ хаклăхсем урлă йĕркелесе тăрать. Çийĕнчен тата чăвашăн кунсăр пуçне хăйĕн пурнăç саккунĕ те пур тесе калама пулать. Чăваш вăл никама та пăхăнмасть, питĕ хăй талай. «Чăваш хăй пĕр патша». Питĕ хăй сăнлă çын. Ăна никампа та пăтраштараймăн. Çапла виçĕ енлĕ пурнăçăн, унăн çут çанталăкпа майлаштарса, халăха пăхăнса çав вăхăтрах хăй саккуне пăрахмасăр пурăнмалла, кашнин хăйĕн кустăрми пур. Чăвашшăн кирек мĕнле пурнăç та кустăрмаллă. Уншăн пурнăç темле çавра пулăм, унăн хăйĕн çаври пур. Çавра талса кайсан вара пурнăç та пĕтет. Чăвашшăн пĕлĕчĕ те çавра. «Пĕлĕт юхать, пĕлĕт юхать, пуçри çавра çĕлĕк пек» тесе юрлать чăваш хăйĕн пурнăçĕ çинчен юрланă чухне. Чăн та, çут çанталăк пурне те хăйĕн йĕркине пăхăнтарать. Çавăнпа та ун çаври пурнăç çаври пулса тăрать. Ытларах та, малтанрах каларăмăр, чăваш çав çаврана вăйлатма тăрăшать. Çавă çавра тăрантать те вара чăваша. Çаври пĕр иксĕлмесĕр çаврăнса тăрать-тĕк, чăвашăн пурнăçĕ тутă та телейлĕ.

Халăх çаври те çавах. Ăру хыççăн ăру килет. Чăваш халăхĕ хăй пĕр организм пек иксĕлмест. Мĕншĕн тесен кашни çемье чăваш çуратать. Чăвашран чăваш çуралсах тăрать. Анчах, каланăччĕ, ку çавра халĕ тĕл-тĕл татăлма пуçланă. Чăваш халь тин хăйĕнчен чăваш çуратайми пулчĕ те пурнăç çаври талса кайрĕ. Халăх иксĕлме пуçларĕ. Пурнăçăн пĕртен пĕр тĕллев пур, унăн пĕр вĕçĕмсĕр тăсăлмалла. Чăвашран чăваш çуралма пăрахрĕ пулсан — чăваш пурнăçĕ вара талчĕ. Ку чăваш çемйин кустăрми ваннине пĕлтерет. Халĕ çеиьере темле Нарспи моделĕ хуçаланать. Вăл çемьене салатма, вилме вĕрентет. Халăх хăйĕн хаклăхĕсем çине таянса хăйне хăй тытса тăрасшăн-ха, анчах та тулашри вăйсем питĕ пысăк пулнăран, тĕнчене тухса кайса саланса пĕтет. Тĕнчере вара чăваш çуратма пушшех те йывăр. Тĕнче чăваша тимĕр тылă пек тыллать. Тĕнче хăрушлăхĕнчен сыхланас тесе ĕнтĕ чăваш çемьи чĕрĕп пек хутланса ларать. Анчах та хуп хушшинчи пек хупланса ларсан малалла аталанаймастăн, юрру та «хуп хушшинчи» кăна пулса юлать. Çавăнпа та чăваш пĕр хăрамасăр тĕнчене ĕç тума тухса каять. Çемьи ун ялтах юлать. Ытти халăхсем те халĕ çапла меслет тупнă. Çемье пĕр енчен ялтах хупăнса юлнă пек курăнать, çав вăхăтрах вăл тĕнчере. Çурма уçă тата çурма хупă çемье

тĕнче хăрушлăхĕпе ăнăçлăрах кĕрешет. Тĕнче ресурсĕсемпе усă курса чăваш çуратать. Ку та хăйне майлă çавра. Чăвашĕ тĕнчене тухса кайса пĕрех киле çаврăнса килет.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, чăваш пурнăçĕ çавра пулăм, вăл хăйне майлă кустăрма. Çак пулăм тĕрлĕ шайра палăрать. Пĕрремĕш çаври çут çанталăкпа çыхăннă. Çут çанталăк çаври çын пурнăçне пăхăнтарать. Иккĕмĕш çавра чăваша хăйне çуратса йышлантарса пынипе çыхăннă. Ку çемье çаври. Тĕнчене тухнă çавра та пур. Ку, каларăмăр, чĕваш тĕнчене ĕçлесе пани.

Чăваш халăх пурнăçĕнче тепĕр пĕр питĕ тĕлĕнмелле те çав вăхăтрах питĕ вăрттăн пулăм пур. Ку вăл чăваш пурнăç меслечĕ. Чăваш мĕнле пурăннине никамах та пĕлмест. Унăн çемьи хупăрах, терĕмĕр. Хăй те питĕ хупă вăл. Енчен те чăваш тĕнчепе мĕнле хутшăннине аякран тенĕ пек пăхса илсен, чăваш тĕнчере çӳренĕ пĕр йĕре те уйăрса илеймĕн. Чăваш тĕнчере йĕр хăвармасăр çӳрет. Акă ăçта иккен еткерлĕхĕ. Мĕн тума тет вара ăна темле чаплă керменсем, паттăрла ĕçсем. Ун тĕп тĕллевĕ унта мар. Уншăн пĕртен пĕр тĕллев — пурнăç пултăр. Чи хакли вара çак тĕллевре — çут çанталăк. Çут çанталăка упраса хăварсан вара вăл хăй те сывă, хăй те пурăнать. Çавăнпа та вăл хальхи цивилизациленнĕ халăхсем пек çут çанталăка темле питĕ сĕмсĕррĕн çĕмĕрсе пырса кĕмест. Вăл кирек мĕнле ĕçе те сăмах каласа, пулăшу тата каçару ыйтса пырса кĕрет. Кайран, мĕнле те пулин сиен кӳрсен, мĕн катĕртнине хăй ĕçĕпе тавăрса парать, сиплет. Кун пек çын вăл хальхи тĕнчере сахал. Чăваш пĕтĕм чун-чĕрипе, ăстăнĕпе çакна ăнланать. çут çанталăкпа асăрханăллăн хутшăнать. Калас пулать, тĕнчере те ытти халăх хушшинче вăл хăйне питĕ сăпайлă тыткалать. Ку мĕне пĕлтерет.

Чăвашăн хăйĕн пурнăç меслечĕ пур, терĕмĕр. Ăна тĕнчене курăнманлăх теме те пулать. Чăваш мĕн туни никама та ан курăнтăр тесе, вăл хăй ĕçне пытарать, никама та кăтартмасть. Вăл вăрттăн пурăнать. Кирек мĕнле хутлăха та вăл пĕр сисĕнкĕср, хутлăха пĕр пăлхатмасăр, пĕр хум кăлармасăр пырса кĕрет те çаплипех тухса каять. Чăваш ку пурнăçра те пур вăл, те çук — никам та пĕлмест. Вăл хăйне нихăш енчен те кăтартасшăн мар. Кун пек пурăнни ĕнтĕ вăл чи пысăк шайлаштару, гармони. Чăн та, чăваш хăйĕн пурнăç хутлăхĕпе майлашса çитнĕ. Çавăнпа та ăна урăх ним те кирлĕ мар пек туйăнать. Анчах та, паллă, пурнăç темрен те аслăрах. Ку меслет те тем тĕрлĕн курăнса палăрса тăрать. Пĕрисем йăлт хупăнса ларса курăнми пулаççĕ, теприсем çурма усă, виççĕмĕшсем вара йăлт уçă. Çапах та çын хăйне кирек мĕнле тыткаласан та кунта çак курăнманлăх текен саккун ĕçлени

сисĕнет. Чăваш пурнăçĕн пĕр тĕп тымар пур. Вăл хăйĕн пурнăçне, ĕçне, туйăмне, ăсне нихăçан та никам та кăтартасшăн çунмасть. Сăпайлăн кăна, пĕр сăмах каламасăр, кăшкăрашмасăр, кăкăр çапмасăр хăй ĕçне тăвать. Акă мĕн çăлса хăварса пынă çак тĕнчере чăваша. Ун ĕçне асăрхасанах усал вăйсем ун туприне туртса илме килнĕ пулнă. Çапла ĕмĕрсем тăршши пулса пынă. Ирĕксĕрех кун пек чухне таçта вăрмана, çырма-çатрана, картишне пытанма тивнĕ. Çавăн пек чухне кăна вăл хăйне упраса хăварма пултарнă.

Чăваш пурнăçĕн тĕп тĕввине тупрăмăр тесен те тĕрĕс. Вăл — вăрттăнлăх. Чăваш вăрттăн пурăнать. Тĕнче çавăнпа та вăл пуррипе çуккине те пит курсах та каймасть, пурăнма кансĕрлемест. Çакăн пек хутлăхра, паллă, чăвашăн хăйне майлă енсем аталанса çитнĕ. Вĕсем пирки малтанрах каланăччĕ, халĕ вара çакă вăрттăнлăхпа тачă çыхăннă «чăваш хăй талай» тенине кăшт пăхса тухар-ха. Чăваш кирек хăçан та хăй шухăшĕпе тĕвĕленсе çӳрет. Ăна вăл никама та пĕлтермест. Тепĕр чух çавна пула ун хусканăвĕсем те тĕлли-паллисĕр пек курăнаççĕ. Палăртса хунă ĕçне те вăл никама кăтартмасăр тăвать. Никамран та ырă сăмах, чап, тав кĕтмест. Ун правили пĕр: мĕн чухлĕ вăрттăнрах, çавăн чухлĕ лайăхрах. Тĕнче чăваш мĕн тунине сиссе те юлмасть. Тĕнче ăна темшĕн, тен, çавна пулах, питĕ пĕтересшĕн. Анчах тĕнче пĕр енчен тапăнса кĕрсе çĕмĕрнĕ вăхăтра чăваш пач урăх çĕрте тепĕр вăрттăн ĕç туса та хунă. Çак вăрттăнлăхăн хăйĕн сăлтавĕпе кĕтесĕ те çук мар. Халь тин çут çанталăк çине çаврăнса пăхар та, çут çанталăк чисти чăваш пекех пурăннине асăрхар. Çут çанталăкран вăрттăн пулăм çук. Вăл мĕн туни сисĕнкĕсĕр, çемçе, кăмăллă, усăллă, куçа курăнмасть. Чăваш çут çанталăкпа пĕр çаврара пурăнаканскер, паллă, ун пулăмĕсене юна кĕртнĕ. Çут çанталăк пекех никама курăнмасăр тенĕ пек пурăнма вĕреннĕ. Кăна пĕр тĕслĕхпе çирĕплетсе пама пулать. Енчен те чăваш пĕр-пĕр ырă ĕç турĕ-тĕк, ăна вăл нимле те кăтартса памасть. Нумай чухне вăл ырă ĕç тунине никам та пĕлмест, ун çинчен вăл шарламасть. Ку çеç те мар, ырă ĕçшĕн тав сăмахĕ те, малтанрах каларăмăр, тӳлев кĕтмест. Хăй тунă ĕçе вăл манса кайма тăрăшать. Вара çапла йĕрри-паллисĕр çухалнă ырă ĕç çак тĕнчене питĕ вăйлă улăштарма тытăнать. Ырă ĕç хăй тĕллĕн пурăнать. Унăн вăйĕ иксĕлмест. Çапла ырă ĕç тăвасси малалла та çирĕпленсе аталанса пырать. Чăваш тунă ырă ĕç чи вăрттăн ĕç пулса тăрать. Вăл Турă ĕçĕ пекех курăнать, е ăна çут çанталăк пек, халăх ĕçĕ пек курма пулать.

## 6.3. Чăваш малашлăхĕ

Чăваш малашлăхне ун никĕсне курса тăрса хаклама пулать. Çавă тапса çĕклесе тăрать кирек мĕнле пулăма та. Япалан никĕсĕ мĕнле, пуласлăхĕ те çапла. Чăваш никĕсĕ çут çанталăк, халăх, хаклăхсен пуххи тата çемье терĕмĕр. Апла, малалла мĕн пуласси çак никĕссемпе мĕн пулса иртнинчен килет пуль. Çавăнпа та халĕ кашнине пĕрин хыççăн тепĕрине пăхса тухар-ха.

Çут çанталăк пирки калас-тăк, вăл мĕнле пулни чăваша кăна мар, мĕнпур этемлĕхе пырса тивет. Хальхи экологсем каланă тăрăх, çут çанталăк çынсемпе халĕ катастрофа чĕлхипе калаçма пуçланă. Сăлтавĕ паллă. Çынсем çут çанталăкăн çаврисене салатса янă. Ăçта пăхатăн, çавăнта кризис аталанса аслăланса пырать. Кун пек хутлăхра, паллă, пурăнма çăмăл пулмасть. Çапах та чăваш, техника пусмăрланине пăхмасăрах, çут çанталăкпа пĕр чĕлхе тупма пултарассăн туйăнать. Пирĕн енче катастрофăсем çукрах. Çыннисем те пирĕн, каларăмăр, çут çанталăк çаврисемпе пĕр пулса кайса пурăнма тăрăшаççĕ. Апла, пуласлăхĕ вĕсен çав çаврасемпе çыхăннă пулсан, вĕсен хăйсен те çав çаврасем пулса каймалла пулать. Çавăн пек малашлăх курăнать. Енчен те вĕсем çут çанталăкпа уйрăлми пĕр пĕрлĕхлĕ пулса кайсан, вара чăваш пирки, вăл чăн экоĝ теме пулать. Экоĝ ĕнтĕ вăл çут çанталăкпа пĕр пулнă çын. Вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма çук. çавăн пек пулас тесен, çыннăн хăйĕн те питĕ чĕрĕ пулмалла вĕт. Техникăна шанакан çын вăл хальлĕхе вилĕ çын. Чĕрĕ пулас тесен пачах урăх тĕнчекурăм кирлĕ. Ун çинчен эпир çӳлерех каланăччĕ. Пĕтĕмлетсе каласан, чăвашăн ун чухне пурнăçшăн хăйĕншĕн пурăнма вĕренес пулать. Тĕп вырăнта пурнăç тăрать. Вара чĕрĕ чунсемпе выльăх-чĕрлĕх кăна мар, çынсемпе халăхсем те пĕтме пăрахаççĕ. Халĕ вара вĕсем тăкăнаççĕ кăна. Халĕ, тĕрĕссипе, пурнăça ним вырăнне те хумаççĕ. Чĕрĕлĕхе мала хурас тесен, питĕ нумай пĕлмелле пулать, ырă та, каларăмăр, çураçтаруллă чĕреллĕ пулмалла. Экоĝ пулас тесен, хăвна Турă пекех тытмалла. Эсĕ халь тин пур чĕрĕ япалашăн яваплă. Ун пек пулма пултарать-и вара, тейĕр. Пулма пултарать кăна мар, пулмалла та. Çакăн чухне кăна чăвашăн малашлăх пур. Ун чухне вара вăл тĕнчере чи аслă, чи ăслă çын пулса тăрать. Вăл ыттисемпе пĕрле пурнăçшăн çине тăрать, ĕçлет, пурăнать.

Тепĕр никĕс вăл халăх хăй, терĕмĕр. Халăх пулсан чăвашĕ те пулать. Анчах та хальлĕхе, атомизаци вăхăтĕнче, халăх пирки пĕр сăмах та çук. Те пур вăл, те çук, паллă мар. Çĕр çинче пурăнакан çынсем пирки калаçкалани илтĕнет, çын прависем пирки шутлаççĕ. Анчах çын никĕсĕ — халăх пирки çук. Çавăнпа та чăваш малашлăхĕ пирки калаçас-тăвас пулсан, чăн малтан, халăх прависем пирки, ун

пуласлăхĕ пирки калаçмалла пулать. Халăх хăй пĕр организм, терĕмĕр. Апла, ун хăйĕн аталанăвĕ пур. Пирĕн халăх, кирек мĕн калăр та, чылай ватă халăх. Тен, ун, апла, пĕтмелли вăхăт та çитнĕ, ăна пĕлместпĕр, çапах та чухлатпăр. Çавăнпа та, ун тепĕр вăхăтне тупас тесен, пирĕн ун тĕнне улăштарса çĕнетме тивет. Халăх пурнăçĕ çын тĕнĕпе тачă çыхăннă. Калăпăр, малтан вăл çут çанталăк чĕлхипе пурăннăскер, халĕ урăх тĕнпе пурăнать. Анчах та, куратпăр, ку тĕн чăваш халăх пурнăçĕпе пĕр килмест. Вăл ăна çут çанталăкран уйăрсах ячĕ. Халăхăн, хăйне упраса хăварас тесен, çут çанталăкпа пĕр чĕлхе тупма тивет. Унăн каялла, авалхи тĕн патнех таврăнмалла, анчах та ку таврăну вăл çĕнĕ шайра, наука шайĕнче пулса иртмелле. Çавăнпа та чăвашăн чăн тĕнĕ вăл биологи (биоцентризм) пулса тăмалла пек туйăнать. Пурнăçа сыхласа хăварас тесен, çапла тума тивет. Нимле пит техника пĕлĕвĕсем те кирлĕ мар пире, пирĕн ӳсен-тăран е выльăх-чĕрлĕх мĕнле ӳссе аталанса пынине кăна питĕ тĕплĕн пĕлсе çитесчĕ, вара тин малашлăх пирки те калаçма пулать. Халăх малашлăхĕ, апла, çут çанталăкпа çыхăннă информацирен килет. Биоинформаци, тейĕпĕр. Халăх хăй те биоорганизм, çавăнпа та халăх пурнăçне те питĕ тĕпчес пулать. Ăна тĕпчекен пĕр çын та çуккă. Çавăнпа та, малашлăх пултăр тесен, пирĕн этнологсене вĕрентсе кăлармалла пулать. Вĕсем мĕн калĕç.

Чи кирли вара вăл чăваш тăмхи пулать. Хаклăхсен пуххине ытла пит улăштармасăр пурăнмалла, вара малашлăх пулать. Анчах та хальлĕхе харăссăн та питĕ хăвăрт улшăннă хаклăхсем чăваша йăлт пĕтерсе хума пултараççĕ. Анăç хаклăхĕсем чуна кĕрсе вырнаççан, паллă, эпир анăç çыннисем пулса каятпăр. Чăваш пирки калаçмалли сăмах та юлмасть. Ун пек туса пĕтнĕ халăхсем чылай. Акă, хамăр халăх йышĕ те пĕр çурри таран çухалса пĕтрĕ. Ку факт. Малашне мĕн пулать, паллă мар. Анчах та хальлĕхе чăваш хăй хаклăхĕсем çине таянса çăлăнса юлассăн та туйăнать. Глобализаци процесĕсене халĕ мĕн пур ытти халăхсем те хирĕç тăраççĕ. Ку хăрушлăха эпир те хамăрлăх çине таянса хирĕç тăма пултаратпăр. Пирĕн хаклăхсенчен хакли нимĕн те çук. Сăмахран, чăваш тăванлăхĕ, йĕркелĕхĕ, чӳклĕхĕ тата çураçтарулăхĕ ытти мĕн пур халăхсем кăларакан хаклăхсене çĕнтерессĕн туйăнать. Пĕрмаях укçа çинчен шутласа, çапăçса, улталаса, вăрласа пурăнаймастăн вĕт-ха. Çын кăна мар, çут çанталăк тек хăй те чăтаймасть халь. Çавăнпа та чăваш хаклăхĕ мала тухса тăрать те, тĕнчене хăйне çăлма тытăнать. Çураçтарса пурăнма вĕренсе çитеймесен тĕнче пĕтет.

Çемье никĕсĕ пирки ытларах та калаçма тивет. Хальхи вăхăтра ют вăйсем çемьене пĕтерес тесе мĕн кăна тумаççĕ ĕнтĕ. Çемьесем халĕ чăнласах саланса кайса пĕтнĕ. Анчах та эпир çемьен чăн пĕлтерĕшне ăнланса илсен, тен, вăл тата вăйланса тасалса çитĕ те пĕтĕм тĕнчене тытса тăма пуçлĕ. Мĕншĕн тесен, каларăмăр, çын çемьере çуралать, çавăнтах аталанса ӳссе çын пулать. Вăл çынна туса кăларакан пĕртен пĕр организм. Хĕрарăмпа арçын хăйсем тĕллĕн кăна çын çуратаймаççĕ. Çурма çемьесенче çуралса ӳснĕ ачасем çын пулса çитеймеççĕ. Çавăнпа та тулли çемьешĕн тăрăшмалла. Унта кăна чăн пурнăç хутлăхĕ пур. Çавна ватма тăрăшаççĕ те ĕнтĕ тĕрлĕ вăйсем. Чăваш çемйи хальлĕхе чылай çирĕп тăрать-ха. Апла, пуласлăх та пур. Анчах хăрушши те çук мар. Çемьере шалта темле ăнланса илме май çук процессем пулса иртеççĕ. Чăваш çемйи маргинал çуратма пуçларĕ. Унăн логики е генотипĕ улшăнчĕ пулмалла. Таçта вилĕм моделĕ ĕçлет. Ăна никам та тупса палăртман-ха. Нарспи моделĕ тесе тĕшмĕртме те пулать пек, анчах кунта ним палли те çук, ку пысăк вăрттăнлăх. Çемьене темле вилĕм вирусĕ ернĕ теме те пулать. Анчах ку чиртен сыватакан пĕр врач та, пĕр учрежлени те çук. Ку енĕпе никам та ĕçлемест. Çавăнпа та кунта кашнин хăйне шанма тивет. Чăваш малашлăхĕпе пурнăçĕ çинчен шутласан, тен, вăл хăех иртсе каять. Кирек мĕнле организм та вĕт чир çинчен манса кайса ĕçлесе таса пурнăçпа пурăнма пуçласан хăех иртсе каять. Çавна шанса пурăнмалла пулать. Хальлĕхе чăваша çуратса туса кăларакан пĕртен пĕр организм, чăваш çемьи, пур. Ăна усал йересрен питĕ сыхланмалла, таса пурăнмалла. Вара малашлăх пулатех. Таса чăваш çемйи таса чăвашсене çуратса тултарать, вĕсем вара, каларăмăр, Турă ачисем, тĕнчене çăлаççех.

Ыйтусем:

1. Кам вăл чăваш çынни.
2. Чăваш чунĕ мĕнрен тытăнса тăрать.
3. Чăваш пурнăçĕн кăтартăвĕсем мĕнлерех.
4. Чăваш малашлăхĕ пур-и.

Юлашкинчен калани

Ку ĕç чăваш халăхĕн пурнăçĕ пирки шутланă пĕрремĕш ĕçсенчен пĕри пулчĕ. Кунта шутласа çитерменнисем те, тен, ытлашши каланисем те пулчĕç. Анчах та, енчен те кашни чăваш çак шухăшсемпе, туйăмсемпе пĕр пулса, тиркесе те хăй пурнăçĕ çинчен

шутлама пуçлать пулсан вара, чăваш философийĕ аталанса чечекленсе кайĕ. Хальлĕхе, куртăмăр, хамăр пурнăç çинчен эпир нимех та калама пултараймастпăр. Мĕгншĕн тесен эпир хамăр халăх, çемье, тăмха пирки нимех те пĕлместпĕр. Вĕсем пирки шутламалла та шутламалла пулать. Пуринчен ытла халăх ăслăлăхне алла илмелле. Авалхи ăслăлăх пуçа тата чĕрене кĕрсе лармасăр эпир нимех те тăваймăпăр. Çавăнпа та çапла калас килет. Атьăр-ха ваттисен сăмахне вăренер, çутçанталăкпа пĕрле пурăнар, пур тĕнчене çураçтарар. Ку ытла пит Улăпла ĕç тесе шутлас марччĕ. Çын вăл пĕчĕккĕн ĕçлесех пысăк ĕç тума пултарать. Чăваш умĕнче калама çук пысăк ĕçсем. Эпир хамăр çинчен пиншер çулсем ним те шутламан, шутланисем те пулман мар пуль, анчах вĕсене истори çулĕсенче пĕтерсе пынă пулас, çавăнпа та нимех те çук пек туйăнать. Ваттисен ăслăлăхĕ вара юлнă. Эпир вĕсем пекрех калаçса шухăшласа кайсанах çĕнĕ вăй илессĕн туйăнать. Мĕншĕн тесен вĕсен ăслăлăхĕ пирĕн хальхи вăхăтри наука ăслăлăхĕпе пĕрлешсе кайса пысăк вăй пулса тăрать. Апла, ваттисен пилĕпе малалла татах та шутласа каяр мар-и. Чăваш çулĕ такăр пултăр. Ырлăх-сывлăх патăр сире турă чăваш ĕçне туса пыма.

Литература


1. Гумилев Л.Н. Этногенез и биосфера Земли. М.: Айрис-пресс, 2006. — 560 с.
2. Желтов М.П. (Сарри Мишши). Свет ушедшего дня (Философские заметки о чувашском). — Чебоксары: Фонд историко-культурологических исследований им. К.В. Иванова: 2005. — 152 с.
3. Исмуков Н.А. Диалектика общего и особенного в развитии национальных культур. (Филос.- метод. аспект проблемы) – Чебоксары, 1992. – С. 10.
4. Родионов В.Г. Стих. Слово. Образ: Сб. статей разных лет. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2007. — С. 152-153.
5. Терентьева О.Н. Ценностные ориентации личности. Автореф. диссерт. на соиск. уч. ст. канд. филос. наук. Чебоксары, 2007.
6. Философия: Университетский курс / Под общ. ред. проф. С.А. Лебедева. – М.: ФАИР-ПРЕСС, 2003. – С. 399.
7. Хайдеггер М. Бытие и время. СПб.: Наука, 2002, 451 с.
8. Чăваш халăх пултарулăхĕ Ваттисен сăмахĕсем. — Шупашкар, Чăваш кĕнеке изд-ви. 2007.— 493 с.

ТУПМАЛЛИ

Умсăмах......................................................................
I глава. Халăх философийĕ пуçланса кайни.............
1.1. Мĕн вăл халăх философийĕ.................................
1.2. Философи кăтартнă халăх çулĕ..........................
1.3. Чăваш халăхĕн тĕнчекурăм……...........................
II глава. Чăваш тĕнчин никĕсĕ...............................
2.1. Çут çанталăкăн тата хуçалăхăн çураçтаруллă пĕрлĕхĕ………………………………………….
2.2. Тĕн.......................................................................
2.3. Чĕлхе тата çын хутшăнăвĕсем............................
III глава. Халăх çут çанталăка сăнани тата тĕнчене ăслани……………………………………….................
3.1. Чăваш сăнавĕсем..................................................
3.2. Чăнлăх критерийĕсем..........................................
3.3. Туйăм-сисĕм тата шухăшлав урлă ăсланисемĕ..
IV глава. Чăваш ĕçлевĕ..............................................
4.1. Ĕç çаврăнăшĕ.......................................................
4.2. Пурнăçа кирлĕ япаласем туни............................
4.3. Çут çанталăка чунлатни......................................
V глава. Халăх хаклăхĕсем........................................
5.1. Чăваш пурнăçа хаклани.....................................
5.2. Хаклăх иерархийĕ................................................
5.3. Хаклăхсене улăштарни.........................................
VI глава. Чăваш çынни..............................................
6.1. Чăваш чунĕ...ĕ.....................................................
6.2. Чăваш пурнăçĕ.....................................................
6.3. Чăваш малашлăхĕ................................................
Юлашкинчен калани...................................................
Литература...............................................................

Научное издание

ЖЕЛТОВ Михаил Павлов

**Философия чувашского народа**

Подписано в печать… Формат 60x84/16. Бумага писчая.
Печать офсетная. Гарнитура Times. Усл. печ. л. 4,5
Тираж 100 экз.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15